К 81
А65

В.В. АНДРЕЕВ
Е.А. АНДРЕЕВА

Ч-372,31

# Çыр та-
# пелсе
# çыр



Национальная библиотека ЧР
4-037231

ББК Ш 12 = 635.1я7

**Хаклавçисем:** *тăван чĕлхипе литература вĕрентӳçисем В.П. Ермаков, Г.В. Абрамова, О.И. Абусева, Республикăри вĕрентӳ институчĕн профессорĕ Ю.М. Виноградов*

*Аслă шкула вĕренме кĕме хатĕрленекесем, учительсем валли. Сочинени мĕнле çырмалли, унăн тытăмĕ çинчен калană, пуплев йăнăшĕсем мĕншĕн пулнине, вĕсен ушкăнĕсене пăхса тухнă. Шухăша меллех çавăрса хурайманран, кулăшла пулса тухнă йĕркесем, абитуриентсен çирĕм ытла хайлавĕ пур.*

*"Чăваш чĕлхи практикумĕ", "Пуплев культурипе стилистика" предметсене вĕренекен студентсемшĕен усăллă. Хаçатçăсене пĕлмелли те сахал мар.*

К 81
А 65

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ПЁТЁМЁШЛЕ ТАТА
ПРОФЕССИЛЛЁ ПЁЛЎ МИНИСТЕРСТВИ

И.Н.УЛЬЯНОВ ЯЧЁЛЛЁ ЧЁВАШ ПАТШАЛЁХ
УНИВЕРСИТЕЧЁ

В.В.АНДРЕЕВ
Е.А.АНДРЕЕВА

# ҪЫР ТА - ПЁЛСЕ ҪЫР

Шупашкар - 1999

К 81 Чув-922

ИККЁМЁШ ТЎРЛЕТНЁ КĂЛАРĂМ

ПРОВЕРЕНО
20 10

4-37231
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

## *АВТОРСЕНЧЕН*

*Мĕнле çырмалла сочинени? Тытăмĕ еплерех пулмалла-ши тăн? Мĕнрен килет-ши пахалăхĕ? Çак ыйтусене хуравлас шутпа çырнă кĕнекене.*

*Аслă шкула вĕренме кĕрекенсен çыру ĕçне нумай çул хушши тĕрĕслетпĕр ĕнтĕ. Содержани тĕп çитменлĕхĕсене, чĕлхе шайĕрă кĕсене пĕлсе-курса тăратпăр. Чăваш чĕлхипе тата литературипе экзамен тытакансене вĕрентсе каламалли, вĕсен пĕлĕвĕнче пахарнă йăнăшсене тӳрлетмелли чылай пухăнчĕ.*

*«Лайăх хайлав çырас тесен мĕн пĕлмелле» пайра илемлĕ произведение тишкернĕ чух мĕне шута илмеллине, тĕпе хумаллине каланă. Халăх сăмахлăхĕпе çыхăннă темăна еплерех уçса памалли çинчен те çырнă кунта. Çакăнтах ирĕклĕ тема суйласа илсен чи малтан асра тытмалли, усă курмалли майсене асăннă.*

*«Хайлав тытăмĕ çинчен» сыпăкра сочинени планĕ, калăпăшĕ, эпиграфĕ, цитата çинчен сăмах хускатнă.*

*Сочиненире пулас студентăн тавракурăмĕсĕр пусне унăн чĕлхи еплерех çаврăнни, аталанни тӳрех курăнать. Çыру тĕрĕслĕхне пăсса хайлав хакне чакаракан сăлтавсене «Пуплев йăнăшĕсемпе кăлтăк кĕсем» пайра пăхса тухнă. Чĕлхе шайĕрăкĕсем мĕнрен килнине, вĕсенчен хăтăлмалли меслене кăтартса хăварни абитуриента, çыракан пур çынна та пысăк пулăшу кӳрессе шанатпăр.*

*«Кашни йĕрки - кулăш тĕрки» сыпăк чи савăнăçли. Шкул ачисен, абитуриентсен, вырăнти радиосемпе хаçатсенче ĕçлекенсен кулăшла йĕркисем сахал мар кунта. Пуплев логикине, грамматика йĕркисене тытса пырайман пирки пулнă çав путишле йĕркесене вуланă çын хăй çырнă чух çавнашкал йăнăшсем тумастех.*

*Абитуриентшăн чи хакли те кирли - кĕнекен тăваттăмĕш пайĕ. Унта Чăваш патшалăх университечĕпе педагогика институтне вĕренме кĕнĕ чух юлашки 5-6 çулта çырнă сочиненисене илсе кă тартнă. Пĕрремĕш ушкăнра чи лайăххисем, иккĕмĕшĕнче - аванисем, хыççăн - «виççĕ» паллăпа хакланисем.*

# ЛАЙĂХ ХАЙЛАВ ÇЫРАС ТЕСЕН МĔН ПĔЛМЕЛЛЕ

Мĕне шута илеççĕ-ха сочинение хакланă чух? Мĕн кĕтеççĕ тĕрĕслекенсем аслă шкула вĕренме кĕрекенрен?

Илемлĕ литературăна тишкерсе çырнă хайлавсенче чи малтан çакă палăрмалла: а) произведени жанрĕ; ă) унта сăнланнă пурнăç тапхăрĕ; б) сăнарсем, вĕсен ушкăнĕсем; в) произведенири ĕçсем мĕнле аталанни; г) чĕлхе сăнарлăхĕ (автор илемлĕх мелĕсемпе мĕнле усă курни); д) поэзи пулсан - сăвă виçи. Автор сăнарсен кăмăл-туйăмне, тавракурăмне, сăн-сăпатне, шухăш-ĕмĕтне еплерех уçса панине хаклама, теори ыйтăвĕсене текстпа усă курса ăнлантарма пултармалла аслă пĕлӳ илме ĕмĕт тытнă çамрăкăн.

Абитуриентăн илемлĕ литература пурнăçа сăнарсемпе, тĕрлĕ сăнлăхсемпе ӳкерсе кăтартакан çăмах искусстви пулнине пĕлсе-туйса тăмалла, литература аталанăвĕн уйрăм тапхăрĕсене, паллă çыравçăсен кун-çулĕпе пултарулăхне, ăсталăх мелĕсене кăтартса пама пĕлмелле.

Сочинени - пулас филологăн, журналистăн тавракурăмне, пĕлĕвне, ăс-хакăлне, пуплев культурине кăтартакан тĕкĕр. Унта абитуриент литература теорийĕн шкулта вĕреннĕ ыйтăвĕсене, илемлĕ произведенисен содержанине, вĕсенчи сăнарсене мĕнле ăсталăхпа çырса кăтартнине пĕлни палăрать. Автор шухăшлавĕ еплерех пулни те (хăйне евĕр, ирĕклĕ е ыттисенни пекех), вăл пурнăç аталанăвне, тупсăмне ăнланни те, тĕнчери, чăнлăхри пулăмсене хак пама, ăнлантарма пултарни те яр-уççăн курăнса тăрать çав çырулла тĕкĕр çинче.

Илемлĕ литературăна тишкерсе сочинени çырасси çăмăл ĕç мар. Произведение тимлĕ вуласа унăн темине, тĕп шухăшне, сюжетне, сăнарлăх мелĕсене ăнланмасăр, шалти сассине туйса илмесĕр лайăх ĕç çыраймăн. Шкул кĕнеки - илемлĕ сăмах хайлавне ăнланма пулăшакан пĕрремĕш ĕç. Шкул ачи, абитуриент илемлĕ литература пурнăçăн пĕтĕм философине, хирĕçӳлĕхĕсене еплерех кăтартса панине хăй тĕллĕнех тарăннăн ăнланма пултараймĕ. Унсăр пусне, кашни çыравçăн илемлĕх тĕнчи хăйне евĕрлĕ. Константин Ивановăн вăл пĕр тĕрлĕ, Çеçпĕлĕн урăхла, Çемен Элкерĕн вара раснарах. Çавăнпа кашни писателĕн илемлĕ

курăмне тĕшмĕртме тăрăшмалла. Литературăн шалти законĕсене чухлас-тавçăрас тесен критика ĕçĕсемпе те (уйрăм статьясемпе, кĕнекесемпе) паллашмалла.

Абитуриентсем нумай чухне илемлĕ произведенире çырнине пурнăçра пуррипе шăп тан туса хураççĕ. Çакă уйрăмах Михаил Федоровăн «Арçури» балладинчи пурнăç чăнлăхне тишкерсе çырнă сочиненисенче сисĕнет. Кунашкал çитменлĕх «Нарспи» поэмăпа, «Хура çăкăр» романпа çыхăннă темăсене уçса панă чух та тĕл пулать. Кунта çакна асăрхаттармалла: ытти искусство пекех, илемлĕ хайлав та пурнăçра мĕн пуррине тӳрремĕн сăнламасть. «Вăл чи анлă сарăлнине е тупсăмлине, чи пĕлтерĕшлине суйласа илет. Вăл пысăклатать те, пĕчĕклетет те, илĕртет те, асамлать те... Чăн-чăн илемлĕ хайлав - ăна, тĕслĕхрен, кулленхи чĕлхепе, прозăпа çырнă пулсан та - сăвă-юрă пек, поэзи пек шăранса-юхса пырать, ăна вулама та питĕ интереслĕ. Мĕншĕн апла-ха? Чехов кăна çапла ăнлантарнă: чăн-чăн писательсен кашни сăмах йĕрки, сĕткенпе тулнă евĕр, пурнăç тĕллевне пĕлнипе çуталса тăрать те, эсир вара куç умĕнчи пурнăççăр пуçне тата пулмалли пурнăçа та туятăр, çавă сире ытарма çук илĕртет.

Эппин, аслă ĕмĕт-илемпе, идеалпа хавхаланса çырнăран ĕнтĕ литературăн ырă туйăм, сăнлăх ытарлăхĕ пысăк, сăмах-йĕрке хушшинчен тавçăрса илмелли тупсăм нумай» (1).

Илемлĕ литературăри пурнăçăн йĕрки хăйĕн, аталанăвĕ, саккунĕ те унăн чăн пурнăçри пек мар. Вăл - художествăлла, урăхла каласан, иккĕмĕшле чăнлăх. Çак шухăша Юрий Скворцов пултарулăхĕн техĕмне çивĕч туйса тишкернĕ Г.И.Федоров пит лайăх каланă. Вăл çырнинчен тĕллĕн-тĕллĕн темиçе çаврăм илĕпĕр.

"Пурнăçра - мĕнле пур çаплипе - çырса илесси Скворцов йăлинче нихçан та пулман. Хăй калас сăмаха шăп та шай пурнăçри майлă, документлă пек, публицистикăлла хайласси те ют пулнă уншăн. Сăмах пĕтĕмлетӳллĕ, калăпланă сăнлăх-сăнар философиллĕ хывăнни тем чул ырăрах, тивлетлĕрех шутланнă прозаикшăн...

Чăнлăха ăнланни, эстетика принципĕсем, шыравра çуралнă идеал - кашни хăйле. Эппин, писателĕн илемлĕ тĕнчи те, илемлĕ

шухăшĕ те ыттисемпе пăтрашми пулни пахарах. Çавăнта мар-ши, тен, уйрăм çыравçă пултарулăхĕн вăрттăнĕ?

Чăнах, Юрий Скворцов прозин саккунĕсем пачах хăйне евĕрлĕ. Калас шухăш философиллĕ вăйтармăш таппине парăнать; хайхи, сюжет хронологиллĕ йĕркепе сыпăннă событисем çинче никĕсленеймест. Туратланать вăл, сийлĕн-сийлĕн аталанать. Художникĕ хăй композици саккунĕсене ытараймасть, пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнсах та пĕтмен событисене, ĕç-пуçа шайлаштарать, вĕсенче - калас шухăш вăрттăнне шырать. Акă «Славик» калав. Сăмах-юмах Эльвира качча кайма хатĕрленни, каçрашка Георгипе туя ларни çинчен. Анчах калавăн тĕп геройĕ - ар çулне çитсе пыракан ача, Славик. Эльвира качча кайма хатĕрленни ун ăшчикне хускатса ярать, сĕрме купăспа каламалли кĕвĕ çырма хистет. Капла, Эльвира нуши-хури кирлех те мар калавшăн. Икĕ тĕвĕ хайланчĕ сюжет аталанăвĕнче. Вĕсене пĕр-пĕринпе шайлаштармасăр калав идейине ăнланма çук. Калас шухăш пит ансат, тӳрех ăнланмалла пулассинчен шикленет иккен Скворцов. Кунта ятне ларса пуç ватмалли те, произведенин тĕрлĕ енĕсене васкамасăр шĕкĕлчесе пăхмалли те нумай.

Мĕншĕн калать-ха писатель Славик çинчен? Этеме этем кирлине ăнланнăран. Анчах та ăна тупасси пит йывăр: Славик те чунĕпе аманать ав. Çакна прозаик конкретлă ситуацире сăнарласа кăтартрĕ, ун тĕрлĕ енĕсене палăртрĕ. Кун пек кăткăс лару-тăру ӳнерçе (художника) ялан пĕтĕмлетӳллĕ сăмах патне туртать; писатель хăй кăмăлне нумай-нумай çын ячĕпе, ăрусен ячĕпе калать пек. Сăнар-ха: Эльвира качча тухать, анчах хăй Георгие савсах та пĕтерейместь пулмалла - ун чурăслăхне курсах, сиссех тăрать. Ма тухать эппин? Ку ĕнтĕ çав калавăн виççĕмĕш енĕ. Кунашкал ыйту художник умне «Сурăм хĕрĕ» повеçре те тухса тăрать. Пурĕ пĕрле çакă «Нарспи», «Айтар», «Ялта» пек хайлавсенчи коллизие аса кӳрет. Вĕсенче чăнласах пĕр пекки нумай, анчах кашни произведени хăйле енсемпе паллă... К.Иванов, Ф.Павлов, П.Осипов коллизинех тĕпчет Скворцов, чăвашсемшĕн мĕн авалтан кăсăк, экзистенциллĕ лару-тăрăвах сăнать; халăх ячĕпе калаçать темелле. Пĕрех, кашни конкретлă тапхăрăн хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхĕсене те туять: вăл тишкернĕ коллизи унччченхи литературăри коллизипе шăп та шай пĕрешкел тееймĕн. Эльвира, Сухви сăнарĕсем Нарспи,

Пинерпи, Елюк пек сӑнарсемпе пӗр ретре. Анчах ҫав сӑнарсем пӗр хывнӑ ҫулах такӑрлатмаҫҫӗ, кашни герой ҫӗнӗлле хывӑнать, пурнӑҫри урӑх енсене чӗртсе тӑратать: Саняпа («Сурӑм хӗрӗ») Славике, сӑмахран, туй хӑйсен умӗнчи яваплӑха ӑнланма, тӗнче йӗрки-шывне ӑнкарма кирлӗ» (2).

Ҫапла вара шухӑш ҫаври ҫакӑнта ҫитрӗ: пӗрремӗшӗнчен, илемлӗ литературӑри ӗҫсем чӑн пурнӑҫри ӗҫ-хӗлпе шӑпах пӗр пек пулмаҫҫӗ, иккӗмӗшӗнчен, кашни писатель пурнӑҫа хӑйне майлӑ сӑнлать. Ҫак икӗ чӑн шухӑша ӑнланса илмелле те ҫырса тата каласа экзамен тытнӑ чух вӗсене яланах асра тытмалла.

Сочиненисенче, сӑмах вӗҫҫӗн тытмалли экзамента тӑтӑшах тӗл пулакан тепӗр ҫитменлӗх вӑл - вӗренме кӗрекенсем илемлӗ произведенин содержанине ҫеҫ каласа кайни. Чӑнах та ӗнтӗ, абитуриентӑн программӑра кӑтартнӑ пӗтӗм илемлӗ хайлавӑн ӑшлӑхне пӗлмелле, анчах ку ҫителӗксӗр-ҫке.

Темӑна ӑнланмасӑр ун ҫинчен ҫиелтен ҫеҫ каласа хӑварни, темӑра палӑртнӑ шухӑша ҫавӑрса ҫитерейменни - анлӑ сарӑлнӑ ҫитменлӗхсенчен тепри.

Тишкерӳ йӗркине, меслечӗсене пӗлменни ҫыру ӗҫне хавшатать. Тӗрлӗ жанрпа ҫырнӑ произведенисен тишкерӗвӗ тӗрлӗ пулмалла пек. Ҫакна экзамена килнисенчен нумайӑшӗ чухлаймаҫҫӗ.

Экзамен тыттаракансене ҫулленех пӗр пысӑк ҫитменлӗх пӑшӑрхантарать. Вӑл - сочиненисене учебник тӑрӑх ҫырни. Кунашкал ӗҫсенче абитуриентӑн шухӑшлавӗ кӑштах та курӑнмасть. Ӗҫне кура хакӗ тесе кун пек хайлавшӑн орфографи, пунктуаци йӑнӑшӗсем ҫук пулсан та «виҫҫӗрен» ытла лартмаҫҫӗ.

Фольклор темипе ҫырнӑ чух экзамен тытаканӑн сӑмахлӑх жанрӗсен паллисене пӗлнине, халӑх ӗмӗрсем хушши хайланӑ произведенисен шухӑш пуянлӑхне, чӗлхе сӑнарлӑхне тӗслӗхсемпе ӗнентермелле. Сӑмахлӑхӑн тӗрлӗ жанрӗсенче тӑван халӑхӑн ӗмӗрхи ырӑ шухӑшӗ, ӗмӗчӗ, туйӑмӗ, кӑмӑлӗ палӑрнине текст тӑрӑх ӑнлантарса пама пӗлмелле. Тӗслӗхрен, «Кашни сӑмахӗ ӗнчӗ те ахах» темӑпа ҫырнӑ чух чӑваш халӑхӗ сӑмах ӑсти пулнине кӑтартакан тӗслӗхсене вак жанрсенчен те (ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсенчен, сӑнавсемпе паллӑсенчен, тупмалли юмахсенчен), пысӑкрах жанрсенчен те (юрӑсенчен, халапсемпе юмахсенчен) тем чухлех илсе пама пулать. Халӑхӑмӑр тӗнчене мӗнле ӑнланнине,

унăн кăмăл еккийĕ, илемлĕх курăмĕ сăмахлăхра епле палăрнине кăтартакан сăмахсене суйлама çеç пĕлмелле. Мĕн чухлĕ сăмах ваййи кунта, мĕн чухлĕ ырьянравлăх... Аллитерацийĕ те, ассонансĕ те, каламбурĕ те... Мĕн таран ăслă шухăш тата! Кашни сăмах çаврăмĕ - философилле пĕтĕмлетӳ. Ĕнчĕ пек те ахах пек сăмахсемпе чăваш хăй чунне, тĕнче тытăмне хитрен палăртнă, аслă шухăшсем çаварнă.

Чăваш халăх сăмахлăхĕнче илемлĕх мелĕсем пурте пур. Асăннă темăпа çырнă чухне вĕсенчен ытларахăшне кăтартмалла, тĕслĕхсемпе çирĕплетмелле.

Чăваш чĕлхипе тата литературипе сочинени çырма суйлавлăх виçĕ тема параççĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ литературăпа е сăмахлăхпа çыхăннă, пĕри - ирĕклĕ.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура тата журналистика факультечĕсене вĕренме кĕмешкĕн çырса тытмалли экзамена тăратнă юлашки 5-6 çулхи темăсене сăнасан çакă курăнать: хăш-пĕр темăсене икĕ е виçĕ çыравçăн произведенийĕсенчи сăнарсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене, ăсталăх мелĕсене танлаштарса кăтартмалла йĕркеленĕ; пĕр-пĕр çыравçăн пĕтĕм пултарулăхне е уйрăм хайлавне пăхса тухмаллисем те пур; тăван литературăн ку е вăл тапхăрне тишкермелли темăсем те сĕннĕ; ирĕклĕ темăсене илсен вара вĕсем хушшинче тăван ял, çĕр-шыв, юратнă анне, учитель, чăваш халăхĕн кун-çулĕ, чĕлхипе культурин иртни тата пуласлăхĕ, арçынпа хĕрарăм идеалĕсем, çынлăх (гуманизм), телей, шăпа çинчен шухăшласа çырмаллисем - ытларах.

Хăшĕ-пĕрисем илемлĕ произведенипе е сăмахлăхпа çыхăннă темăна туллин уçса параймасран шикленсе, теприсем чунĕ туртнипе ирĕклĕ тема суйласа илеççĕ. Тӳрех калас пулать, виççĕмĕш тема çăмăл мар. Чылай ĕçсенче темăран пăрăнса кайса пачах урăххи çинчен калаççĕ.

Ирĕклĕ темăпа çырмашкăн авторăн анлă тавракурăм, философла шухăшлав, çирĕп логика, пурнăçа тишкерме пĕлни пулмалла. Тата ... сăнарлă, яка чĕлхе.

Темăра систернĕ тĕп шухăша тĕрĕс палăртмалла, çивĕч проблемăсем лартмалла, вĕсене йĕркипе çыхăнуллăн уçса памалла, литература программине те пĕлнине кăтартма май тупмалла. Темăна пĕр-пĕр илемлĕ произведенипе çыхăнтарсан аван.

# ХАЙЛАВ ТЫТĂМĚ ÇИНЧЕН

<u>*ХАЙЛАВ ПЛАНĚ*</u>. «Мĕн тума кирлĕ план? Сочинение унсăрах лайăх çырма пулать, вăл тем пысăкăш ĕç мар вĕт»,- теççĕ хăшĕсем. Теприсен шучĕпе вара план кирек епле çыхăнуллă текст - статья-и, сочинени-и, калав е повесть - çырнă чухне те кирлĕ иккен. Сăмах май каласан, ăста, пысăк опытлă ораторсем халăх умне 5-6 минутлăх çеç тухса калаçма та планласа, тезиссем хатĕрлесе хураççĕ. Ăслă çынсем нихçан та плансăр çырмаççĕ. Çавăнпа план тени сочинени хайланă чухне те кирлех пуль.

Шухăшсене çыхăнуллăн йĕркелесе пыма, темăна çыпăçуллă та перекетлĕ, вырнаçуллă уçса пама плансăр май килмест. Унсăр сочинени пайĕсен хушшинчи çыхăнăва та тĕрĕс тытса пыма çук. План пĕр шухăша темиçе хут калассинчен, шухăшсен йĕркине пăтраштарассинчен хăтарать. Мĕн хыççăн мĕн çырмаллине палăртмасан пуçа капланнă шухăшсем чăлханса ларасси, нумай вăхăт хушши пĕр вырăнта (малалла çырса каяймасăр!) тапăртатса тăрасси куçкĕретех.

Шел пулин те, абитуриентсенчен чылайăшĕ план тумасăрах çырма пикенет, çавăнпа вĕсен хайлавĕ хăлтă, шăнăрсăр, логикăсăр пулать. Паха ĕçсем çав тери сахал планламасăр çырнисен хушшинче.

Плана черновикра çеç çырмалла, е вăл пуçра пулмалла. Тасалла çырнинче вăл кирлех мар. «Сочинени мĕнле çырмалла» кĕнеке авторĕсем В.А.Абрамовпа О.И.Печников абитуриентсене план тунипе çеç çырлахса ларма каламаççĕ. Акĕ мĕн çыраççĕ вĕсем: «План ыйтăвĕсене палăртнă хыççăнхи тапхăр - тезиссем ăсласси. Урăхла каласан, планпа килĕшӳллĕн текст содержанине «от общего к частному» («пĕтĕмĕшлерен - вак-тĕвексем патнелле») (*урăхла çавăрттарса «пĕтĕмĕшлинчен - пайăрри патне» тени лайăхрах пек туйăнать!*) сул- йĕрпе йĕркелеме пуçăнатпăр. Çакна палăртса хăварни вырăнлă: тезисра план ыйтăвне панă хурав пулать. Анчах та кунта предложенисене пĕр-пĕринпе çыхăнтарас ĕç çук-ха, кунта ытларах чухне татăк-кĕсĕк предложенисем. Çапла вара тезис вăл - план ыйтăвне кĕскен хуравлани. Планра миçе ыйту, çавăн чухлĕ тезис пулать.

Тезис хыççăнхи тапхăр - конспект тăвасси. Конспект вăл - содержанин кĕске изложенийĕ. Конспекта кăшт сарсассăн темăна уçакан пиçĕ, çыпăçуллă содержаниллĕ текст пулса тăмалла» (3).

*ЭПИГРАФ*. Сочинени умне çырнă, унăн тĕп шухăшĕпе килĕшсе тăракан, ăна уçса пама пулăшакан пĕр-пĕр сăвва, ваттисен сăмахне, паллă çынсем каланине эпиграф теççĕ. Пĕлсе суйланă, темăна юрăхлă эпиграф ĕçе пуянлатать, янравлăрах тăвать. Паллах, хайлав эпиграфсăр та пулма пултарать, çакăншăн унăн хакĕ ўкес çук. Выранлă усă курман эпиграф вара ĕçĕн хакне чакаратех.

Аслă шкула кĕме экзамен тытакансем юлашки çулсенче тĕрлĕ темăпа çырнă чух Çеçпĕл Мишшин «Хастарлă, хыт утăмлă пулăр, Çĕр-шывăн хастар ачисем!», Константин Ивановăн «Çакă çутă тĕнчере Вăйли çук та этемрен», Петĕр Хусанкайăн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!», Ухсай Яккăвĕн «Юратрăм эп, хирсем, сире, Сана та, сĕм хура вăрман» йĕркесемпе ытла тухăçлă усă кураççĕ. Тĕрĕслекенсене йăлăхтарса та çитерчĕç ĕнтĕ вĕсем. Чăваш поэзийĕнче сулмаклă, ăслă, янравлă урăх йĕркесем çук-шим? Классиксен те, хальхи çыравçăсен те tарăн шухăшлă, пафослă, хитре кĕвĕллĕ сăвă çаврăмĕсем нумай-çке. Вĕсене шырамалла, вĕренмелле, кашнинех ăсра пĕр-пĕр темăпа çыхăнтарса хумалла.

Эпиграф валли паллă çынсем каланă çунатлă сăмахсене, ăслă шухăшсене, ваттисен сăмахĕсене, сăвă йĕркисене, проза, тĕпчев ĕçĕн сыпăкĕсене илме юрать. Вĕçĕнче яланах авторне кăтартмалла. Тĕслĕх:

«Историсĕр» халăх
Истори тăвать, кун-çулне тирпейлет.
Пытанчăк аваллăх,
Хаваслă малаллăх
Тухать, хăпарать çиеле.

Петĕр Хусанкай

Телей тевет мар, ума çакса яма çук.

Ваттисен сăмахĕ

«Термен» - пысăк тĕпчев, писатель çак кĕнекене çырнă чухне çĕршер историлле документа, хăй вăхăтĕнче çырнă хутсене,

асаилӳсене тӗплӗн пӑхса тухса роман йӗрӗ валли кирлисене хӑварнӑ, вӗсене илемлӗ литература сӑррипе сӑрланӑ.

Константин Петров

__*ЦИТАТА*__. Хайлава илем кӳрекен тепӗр япала вӑл - цитата. Унпа усӑ курни ҫыраканӑн пӗлӗвӗ анлӑ, нумай енлӗ пулнине, вӑл илемлӗ текстсене, сӑмахлӑха аван пӗлнине кӑтартать. Кирек мӗнле сочиненире те пӗр-ик цитата пулмаллах. Произведенири илемлӗх мелӗсене уҫса панӑ чухне вӗсен хисепӗ ӳсмелле, поэзие тишкернӗ чух вара тата та йышлӑрах пулӗҫ, мӗншӗн тесен уйрӑм йӗркесемпе, ҫаврӑмсемпе ҫирӗплетсе памасӑр поэт пултарулӑхӗ ҫинчен ҫыраймӑн.

Пӑхса тухакан произведенирен пӗр йӗрке те илсе памасан абитуриент ӑна лайӑх пӗлет тесе мӗнле калӑн? Цитатӑсем писатель ӑсталӑхне кӑтартма кирлӗ. Геройсене хак пама та вӗсемсӗр май ҫук.

Цитатӑсене икӗ тӗрлӗ илсе пама пулать: 1) автор сӑмахӗсене пӗрре те улӑштармасӑр, 2) текст сӑмахӗсене йӗркипе астуман чухне унӑн содержанине кавычкӑна илмесӗр харпӑр хӑй сӑмахӗсемпе ҫырса памалла, автор шухӑшӗ пулнине палӑртса хӑвармалла. Цитатӑсенчи чарӑну паллисем хальхи пунктуаци правилисемпе пӗр килмесен те пултараҫҫӗ. Орфографи пирки те ҫакнах каламалла.

«Сочинени калӑпӑшӗ мӗнле пулмалла?»-ҫакӑ вӑл абитуриентсен яланхи ыйтӑвӗ. Университетра экзамен тытакансене тӑватӑ пысӑк страницӑллӑ хут параҫҫӗ (тетрадьри сакӑр страницӑпа танлашать). Ҫакӑ ҫителӗклех. Нумайӑшӗ виҫӗ е виҫӗ страница ҫурӑ ҫыраҫҫӗ. Пӗр-икӗ страницӑра темӑна никам та ниепле те уҫса параяс ҫук.

# ПУПЛЕВ ЙӐНӐШӖСЕМПЕ КӐЛТӐКӖСЕМ

Хайлав пахалӑхӗ унӑн содержанийӗнчен килет. Анчах ҫакна та асра тытмалла. Авторӗ пӗр-пӗр темӑпа тем тери хавхаланса ҫырнӑ, ӑна уҫса панӑ тейӗпӗр, чӗлхи вара кӑнттам, ҫине-ҫинех пуплев, орфографи, пунктуаци йӑнӑшӗсем... Шухӑш пуянлӑхӗпе пӗр пекрех сочиненисем чӗлхине кура тӗрлӗ пулаҫҫӗ: пӗри вулакан чунне тыткӑнлать, туйӑмне вӑратать, асра юлать, тепри темиҫе йӗрке вуласанах йӑлӑхтарать, кӑмӑла каймасть. Унашкал ӗҫсене вулама, тӗрӗслеме питӗ кичем. Тӑкӑскӑ чӗлхепе ҫырнӑскерсем, вӗсем темле ҫӑтсан та анман турам евӗрлӗ.

Орфографипе пунктуаци йӑнӑшӗсем ҫинче чарӑнса тӑрасшӑн мар эпир хамӑрӑн ӗҫре. Вӗсем ҫинчен юлашки вӑхӑтра нумай каласрӗҫ, ҫырчӗҫ. Пирӗн тӗллев - пуплев йӑнӑшӗсене ушкӑнласа вӗсем мӗншӗн пулнине кӑтартса парасси. Йӑнӑшсем мӗн сӑлтавпа пулса пынине пӗлсен ҫеҫ абитуриент, студент, ҫыракан пур ҫын та вӗсенчен хӑтӑлма пултарӗ.

Пуплев йӑнӑшӗсене пула ҫырнин витӗмлӗхӗ, сӑнарлӑхӗ, вӑйӗ чакать. Такӑнтараҫҫӗ вӗсем вулакана (тӗрӗслекене), мӗн ҫырнине ӑнланма кансӗрлеҫҫӗ. Аслӑ шкула вӗренме кӗрекенсен нумай-нумай хайлавне тишкерни ҫакна кӑтартса пачӗ: вӗсенче пӗрешкел пуплев йӑнӑшӗсемпе кӑлтӑкӗсем йышлӑ. Апла пулсан вӗсене ушкӑнлама пулать.

## 1. КИРЛӖ СӐМАХА (СӐМАХСЕНЕ) СИКТЕРСЕ ХӐВАРНӐРАН ПУЛНӐ ЙӐНӐШСЕМ

| *Тӗрӗс мар* | *Тӗрӗс* |
| --- | --- |
| Вӗсем Унтрипе сеткӑна сарай хыҫне кайса ҫакрӗҫ. | Вӗсем Унтрипе иккӗшӗ сеткӑна сарай хыҫне кайса ҫакрӗҫ. |
| Хӗрача йытӑна патакпа ҫапрӗ те вӗрсе ячӗ. | Хӗрача йытӑна патакпа ҫапсан лешӗ вӗрсе ячӗ. |
| Эпӗ аран-аран ҫанӑ вӗҫӗпе ӳсӗркелесе илтӗм. | Эпӗ ҫӑвара ҫанӑ вӗҫӗпе хупласа аран-аран ӳсӗркелесе |

илтĕм.

Пĕве патне çитсен ашшĕ ывăлне вакка шăтарса ямаллине ăнлантарса пачĕ.

Пĕве патне çитсен ашшĕ ывăлне вак касса сеткăна унта ямаллине ăнлантарса пачĕ.

Пирĕн колхозниксем хăй хаклăхне чакарассишĕн ырмиканми тăрăшаççĕ.

Пирĕн колхозниксем тĕш тырă (пахча çимĕç, выльăх-чĕрлĕх) хăйхаклăхне чакарассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ.

## 2. ЫТЛАШШИ СĂМАХ КĔРТСЕ ПРЕДЛОЖЕНИЕ КăНТТАМЛАТНИ, УНĂН ШУХĂШНЕ ПĂСНИ

*Тĕрĕс мар*

Шурă юр çинче лапка-лапка выртакан йĕрсене асăрхарĕ.

Пирĕн колхоз кăçал 30 гектар чухлĕ люцерна акнă.

Вицĕ çухрăм тăршшĕ тăсăлать аттесемпе аннесем çамрăк чух лартнă хурăн кати.

*Тĕрĕс*

Шурă юр çинчи йĕрсене асăрхарĕ.

Пирĕн колхоз кăçал 30 гектар люцерна акнă.

Виçĕ çухрăма тăсăлать аттесемпе аннесем çамрăк чух лартнă хурăн кати.

## 3. ПАДЕЖ ФОРМИ ВЫРĂННЕ ХЫÇСĂМАХПА УСĂ КУРНĂРАН ПУЛНĂ ЙĂНĂШСЕМ

*Тĕрĕс мар*

Ачана йĕлтĕр çинче тĕрĕс шума вĕрентет.

Çак çул тăрăх кунĕн-çĕрĕн çынсем çӳреççĕ.

Эпĕ те кĕнеке çинчи çак шухăша çирĕплетсе парасшăн.

Купăс çинче те, баян çинче

*Тĕрĕс*

Ачана йĕлтĕрпе тĕрĕс шума вĕрентет.

Çак çулпа кунĕн-çĕрĕн çынсем çӳреççĕ.

Эпĕ те кĕнекери çак шухăша çирĕплетсе парасшăн.

Купăспа та, баянпа та калать

те вылять вăл.

Çтаппан Елюк çине авланасшăн хыпкаланса çӳрет.

вăл.

Çтаппан Елюка качча илесшĕн хыпкаланса çӳрет.

## 4. СĂМАХСЕНЕ ТИВĔÇЛĔ ПАДЕЖ ФОРМИНЕ ЙЫШĂНТАРМАСĂР ТУНĂ ЙĂНĂШСЕМ

*Тĕрĕс мар*

Ашшĕ вара ку кайăксене шĕпшĕлсем пулнине ăнлантарса пачĕ.

Аслашшĕ ун чух мулкачсене хĕлле апат-çимĕç тупма йывăр пирки яла килнине ăнлантарса пачĕ.

Вăл ĕнтĕ çирĕм çул ытла колхозпа ертсе пырать.

Çав çул кăвар чĕреллĕ поэтăмăр çут тĕнчепе яланлăхах уйрăлчĕ.

Илпек Микулайĕ «Хура çăкăр» романне пăхса тухăмăр.

Писатель тĕрлĕ илемлĕх мелĕсене усă курнă.

«Ӳссе ырă çынсем пулса тăтăр эсир. Сирĕншĕн мухтанатăп»,-тет анне эпир пурте пĕрле тăван киле пуçтарăнсан.

Çывăх пулсан та чавсаран

*Тĕрĕс*

Ашшĕ вара ку кайăксем шĕпшĕлсем пулнине ăнлантарса пачĕ.

Аслашшĕ ун чух мулкачсем хĕлле çимелли тупма йывăр пирки яла килнине ăнлантарса пачĕ.

Вăл ĕнтĕ çирĕм çул ытла колхоза ертсе пырать.

Çав çул кăвар чĕреллĕ поэтăмăр çут тĕнчерен яланлăхах уйрăлчĕ.

Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романне пăхса тухрăмăр.

Писатель тĕрлĕ илемлĕх мелĕсемпе усă курнă.

«Ӳссе ырă çынсем пулса тăтăр. Мухтанатăп сирĕнпе»,-тет анне эпир пурте пĕрле тăван килте пуçтарăнсан.

Çывăх пулсан та чавсана

| | |
|---|---|
| çыртаймăн. | çыртаймăн. |
| Чапаев пуля лекнинчен вилсе кайнă. | Чапаев пуля лекнипе (лекнĕрен) вилнĕ. |
| Каччăпа хĕр туслă пулнине икĕ çемьен ашшĕпе амăшĕ тахçанах пĕлнĕ. | Каччăпа хĕр туслă пулнине икĕ çемье ашшĕпе амăшĕ тахçанах пĕлнĕ. |
| Вăл чун-чĕри ĕсĕкленĕшĕн ниçта кайса кĕреймест. | Вăл чун-чĕри ĕсĕкленипе ниçта кайса кĕреймест. |
| Ăна кайран милицисем тытса кайнă, тĕрмене пилĕк кун хупнă. | Ăна кайран милицисем тытса кайнă, тĕрмене пилĕк куна хупнă. |
| Алёшăн вилĕмĕнче нимĕç вăрă-хурахĕсем анчах мар, вăрçăшăн çунакан паянхи империалистсем те айăплă. | Алеша вилĕмĕшĕн нимĕç вăрă-хурахĕсем анчах мар, вăрçăшăн çунакан паянхи империалистсем те айăплă. |

## 5. МЕСТОИМЕНИСЕМПЕ ТĔЛСĔР УСĂ КУРСА КАЛАС ШУХĂША СӲРĔКЛЕТНИ

| *Тĕрĕс мар* | *Тĕрĕс* |
|---|---|
| - Ку мĕн йĕрĕсем? - ыйтрĕ Унтри.<br>- Мулкач йĕрĕсем,-терĕ ашшĕ. Вĕсем çулла тĕрлĕ курăк çиеççĕ. | - Мĕн йĕрĕсем кусем? - ыйтрĕ Унтри.<br>- Мулкач йĕрĕсем,-терĕ ашшĕ. Мулкачсем çулла тĕрлĕ курăк çиеççĕ. |
| Эрозине кĕрешес ĕçе мĕнпур техникăна, колхозниксене явăçтармалла. Вĕсене пурлăхпа хавхалантармалли майсем шырамалла. | Эрозипе кĕрешес ĕçе мĕнпур техникăна, колхозника явăçтармалла. Колхозниксене çакăншăн пурлăхпа хавхалантармалли майсем шырамалла. |

Местоименисене тивĕçлĕ вырăна лартса вĕсене ытти сăмахсемпе çыхăнтарма пĕлмесен калас шухăш тĕксĕмленсе уçăмсăрланать, сĕвĕрелет. Текст çăмăллăн вуланмасть. Тепĕр чух çырни путишле те пулать.

## 6. ПРЕДЛОЖЕНИЕ ТĔРĔС ЙĔРКЕЛЕМЕН ПИРКИ ПУЛНĂ

йăнăшсем те сахал мар абитуриентсемпе студентсен ĕçĕсенче, тĕрлĕ хаçатсенче, пĕлтерӳсенче: Хăш чухне çыраканĕ мĕн каласшăн пулнине тӳрех тавçăрса илме çук, тепĕр чухне çырни кулăшла пулса тухать. Тĕслĕхсем: 1) Икĕ хутчен ĕç вăхăтĕнче иртĕхме юраманни çинчен хытă асăрхаттарнă ăна. 2) Пурте клубаваскăр. Унта сире хуткупăс, магнитофон, радиола, правлени членĕсем, хăнасем кĕтсе тăраççĕ. 3) Çак ĕçчен хĕрарăм хаçат-журнала хăвăртрах вулакансем патне çитерессшĕн. 4) Калаçа-калаçа мулкач йĕрĕ Унтрипе ашшĕне пахчанах çитерчĕ. 5) Вăл хăй юратнă çĕрулми кукăльне ăшă çур стакан сĕтпе ĕçрĕ те сĕтел хушшинчен тухрĕ. 6) Çутă çăл çырма тĕпĕнче тапса выртать. 7) Кăн-кăвак куçлă хĕр лĕпĕш пек çаран тăрăх чупса пырать. 8) Хам алпа хам шухăшласа çыртăм та - мана килĕшрĕ.

«Хутшăнакан хисепсен вырăнĕсене ылмаштарнишĕн сумма улшăнмасть. Ку - арифметика. Чĕлхе - çав саккунсене пăхăнмасть. Унăн хăйĕн йăли-йĕрки. Сăмах çаврăнăшĕнче те, предложенире те кашни сăмахăн хăйне тивĕçлĕ вырăнĕ пур. Чăн та, пĕрисем хăйсене ирĕклĕрех тытаççĕ. Теприсем вара хăнăхнă вырăнтан хускаласшăн та мар. Çавăн пек сăмахсем хăйсен вырăнне тупаймасан, лару-тăру пачах улшăнса каять: предложение ăналанаймастăн, е калаканнин шухăшĕсене урăхла ăнланатăн, е тата чăваш сăмахĕсенех вырăсла карталанипе пуплев килĕшӳсĕр пулать. Çирĕпленнĕ йĕркене çавăнпа хисеплемех тивет» (4).

## 7. СĂМАХСЕН ПĔРРЕЛЛĔ ХИСЕПĔ ВЫРĂННЕ НУМАЙЛĂ ХИСЕПНЕ ÇЫРНИ

| *Тĕрĕс мар* | *Тĕрĕс* |
|---|---|
| Çуллахи каникулсем вĕçленсен васкасах шкула чупаттăмăр. | Çуллахи каникул вĕçленсен васкасах шкула чупаттăмăр. |

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
ч-37231



| | |
|---|---|
| Анне çўçěсем кǎвакарнǎ. | Аннен çўçě кǎвакарнǎ. |
| Халь такама та таçта та тем те сутма юрать. Хǎть чашǎк-тирěксем, хǎть хаçат-журналсем сут. Укçи-тенкисем анчах пулччǎр. | Халь такама та таçтата тем те сутма юрать. Хǎть чашǎк-тирěк, хǎть хаçат-журнал сут. Укçитенки анчах пултǎр. |
| Пўртлěх йывǎçсем хатěрлерěç. | Пўртлěх йывǎç хатěрлерěç. |
| Çав сереперен хǎтǎлма вěсене пулǎшусем памалла. | Çав сереперен хǎтǎлма вěсене пулǎшу памалла («пулǎшмалла» тесен кěске те аванччě). |

Хǎш-пěр абитуриентсем пěрреллě хисепре усǎ куракан çак япала ячěсене нумайлǎ хисепре çыраççě: телейсем пур (телей пур), аслǎ пěлўсем ил (аслǎ пěлў ил), савǎнǎçсем нумай мар (савǎнǎç нумай мар).

## 8. ÇИНЕ-ÇИНЕХ ПĚР ФОРМǍПА УСǍ КУРНǍРАН ПУПЛЕВ ЫРЬЯНРАВЛǍХĚ ПǍСǍЛНИ

| *Тěрěç мар* | *Тěрěç* |
|---|---|
| Муркаш районěнчи Москакасси вǎтам шкулěнчи пиллěкмěш-улттǎмěш классенчи ачасем... | Муркаш районěнчи Москакасси вǎтам шкулěн пиллěкмěш-улттǎмěш класс ачисем... |
| Тайǎр Тимкки - çулǎмлǎ чěреллě, хǎюллǎ, революци туйǎмлǎ, хастарлǎ поэт. | Тайǎр Тимкки - вěри чěреллě, хǎюллǎ, хастар, революцие савакан поэт. |
| Çеçпěл Мишшин сǎввисенче тěссемпе усǎ курнин хǎйěн пěлтерěшě пур. | Çеçпěл Мишши сǎввисенчи тěссен ятарлǎ пěлтерěшě пур. |
| Эпě пěрре çапла каç пуласпа | Эпě пěрре çапла каç пулас |

| | |
|---|---|
| юлташпа чăнкă çыранпа пыратăп. | умĕн юлташпа чăнкă çыр хĕррипе пыратăп. |

Пĕр пек грамматика формиллĕ сăмахсем тăтăшах пулни сочинени чĕлхине сӳрĕклĕх кӳрет, ăна кичемлетет, сăнарлăхпа витĕмлĕх çинчен вара калаçмалли те çук.

## 9. КАМĂНЛĂХ АФФИКСĔСЕМПЕ УСĂ КУРМА ПĔЛМЕСĔР ТУНĂ ЙĂНĂШСЕМ

| *Тĕрĕс мар* | *Тĕрĕс* |
|---|---|
| Чĕлхемре тĕпчесе пĕлмелли сахал мар. | Чĕлхемĕрте тĕпчесе пĕлмелли сахал мар. |
| Кӳршĕри Наçук аппа куллене пирĕн патне килетчĕ. | Кӳршĕри Наçук аппа куллене пирĕн пата (патăмăра) килетчĕ. |
| «Пирĕн патăра та çитсе курăр»,-терĕ вăл юлашкинчен. | «Пирĕн пата (патăмăра) та çитсе курăр»,-терĕ вăл юлашкинчен. |
| Эпир сирĕн ĕçӳпе паллашрăмăр. | Эпир сирĕн ĕçĕрпе паллашрăмăр. |

## 10. ХЫÇСĂМАХСЕМПЕ УСĂ КУРМА ПĔЛМЕННИ

1) Миля çакна чăтса тăраймарĕ, киле хăйĕн хĕрлĕ шупка пичĕ çинчен вĕри куççуль юхтарса чупса кайрĕ («Пичĕ çинчен» вырăнне «пичĕ тăрăх» темелле пулнă). 2) Салампи пирки ялта усал хыпар сарчĕç («Пирки» хыçсăмаха «çинчен» сăмахпа улăштармалла).

## 11. ПĔР ЙЫШШИ ÇАВРĂМСЕМПЕ ВИÇЕСĔР УСĂ КУРСА ПРЕДЛОЖЕНИЕ ЫТЛАШШИ ТĂСНИ

те пуплеве кăткăслатать. Кун пек чух автор шухăшне ăнланма хĕн. Предложени вĕçне çитнĕ çĕре малта мĕн çырнине манса каятăн. Акă çавнашкал тĕслĕх: *Çеçпĕл Мишши поэзийĕн романтизмне хакласа, унăн интернационалла шухăшне асра тытса тăрса, пĕр*

чĕрен мар, пин-пин кăварлă чĕрен, мĕскĕн чунлă мар, хастарлă хыт утăмлă чăваш ачин, чăваш поэчĕн, çĕн чăвашăн çĕнĕлле янракан талантне, унăн сăвă çырас пултарулăхне, вăл чăваш сăввине çĕнĕ сывлăш вĕрсе кĕртнине, ăна çирĕп йĕркене пăхăнтарса, виçелесе, шайлаштарса çĕнĕлле янраттарнине тĕпчесе çырнă ĕçсем сахал мар. Çак 57 сăмахлă кăткăс предложение пĕрре вуласа ăнланма çук. Унăн шухăшĕ пуçа тӳрех кĕмест. Çитменнине тата пĕрешкел вĕçленекен сăмахсем чылай, çавăнпа пуплев пушшех пăтрашуллă.

Çыру ĕçне ăслă, чĕлхене тĕрлĕрен кукăртса хитре тума тăрăшнине ырламалла çеç, анчах ăна усăмлăрах тăвасчĕ. Предложени пуçламăшĕнчи сăмахсенчен тĕвĕленнĕ шухăш вĕçне çитиччен сапаланса, тĕтреленсе ан кайтăр.

Пĕрешкел формăсенчен хăтăлмашкăн чĕлхе хатĕрĕсем, майĕсем çителĕклех. Тимлĕрех шухăшласан, тăрăшарах ĕçлесен пĕр пек формăллă сăмахсене сахаллатма пулать.

## 12. СĂМАХСЕМПЕ ВĔСЕН ПĔЛТЕРĔШНЕ ĂНКАРАЙМАСĂР ТĔРĔС МАР УСĂ КУРНИ

Çыру ĕçĕнче вак-тĕвек япала çук, кунта кашни сăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пĕлменнине е тимсĕрлĕхе пула тĕрĕс мар усă курнă сăмахсем шухăша пăсаççĕ. Хăш чухне кулăшла та пулса тухать. Тĕслĕхсем: 1) Хĕвел çав тери пĕçерет («Пĕçертет» кирлĕ). 2) Пурнăç шайĕ лайăхлансах пырать (Пурнăç шайĕ лайăхланма та, япăхланма та пултараймасть, вăл е ӳсет, е чакать). 3) Учитель ĕçне юратни мана университета вĕренме килме хистерĕ («Хистет» сăмах пĕр-пĕр ĕçе вăйпа тутарнине пĕлтерет, çавăнпа кунта вăл вырăнлă мар). 4) Пуш кĕленче бутылкисем йăваланса выртаççĕ («Бутылкăсем» сăмах ытлашши). 5) Çамрăксем вĕсен асаилĕвĕсене куç сиктермесĕр итлеççĕ (Куçпа итлеме çук!). 6) Вăрман çаратнăшăн пире вутă пачĕç («Сайратнăшăн» тенĕ пулсан ку териех кулăшла пулмастчĕ). 7) Çав çулхине Çеçпĕл Мишши тăван халăхпа яланлăхах сывпуллашрĕ (Тăван халăхран уйрăлчĕ темелле). 8) Ял çумĕпе тĕкĕр пек çутă кӳлĕ юхса иртет (çырма, шыв юхать, анчах кӳлĕ мар). 9) Чĕрĕлĕхпе уйрăлса тăраканскере, ăна часах лаша фермин бригадирне суйлаççĕ (Ферма бригадирĕ мар, заведующийĕ, пуçлăхĕ пулать).

Калас шухăша ыттисем патне тĕп-тĕрĕс çитерес тесен çакна асра тытмалла: кашни сăмахăн хăйĕн ĕмĕрсем хушши тытăнса тăракан пĕлтерĕшĕ пур, ăна мĕнле килнĕ апла улăштарма çук. Сăмах ют пĕлтерĕшпе çÿреме пултараймасть. Чăнах та ĕнтĕ, вăхăт иртнĕçемĕн сăмахăн пĕлтерĕшĕ аталанма, сарăлма пултарать. Апла пулин те унăн пĕлтерĕшĕ ялан паллă, конкретлă. Пĕр сăмахне çеç ют пĕлтерĕшпе кала - предложенин е абзацăн пĕтĕм шухăшĕ пăсăлать. Çакна ĕнентерекен тĕслĕхсем, шел пулин те, сочиненисенче йышлă.

| *Тĕрĕс мар* | *Тĕрĕс* |
|---|---|
| Раççей халăхĕсен чечек кăшăлĕ пек ялкăшакан туслăхĕ | Раççей халăхĕсен чечек кăшăлĕ пек илемлĕ туслăхĕ |
| Ялсенче ĕлĕк чăпта çыхса кăштах укçа тунă | Ялсенче ĕлĕк чăпта çапса кăштах укçа тунă |
| Раççей ялавĕпе юнашар Чăваш Республикин ялавĕ явăнать | Раççей ялавĕпе юнашар Чăваш Республикин ялавĕ вĕлкĕшет. |
| Вĕсен хăйсен шухăшне халех ылмаштармалла. | Вĕсен хăйсен шухăшне халех улăштармалла. |
| Пус çумне пус хутшăнтарнă, пурнăç тунă. | Пус çумне пус хушнă, пурнăç тунă. |
| Вырма хыççăн ĕç результачĕсене пĕтĕçтереççĕ. | Вырма хыççăн ĕç результачĕсене пĕтĕмлетеççĕ. |
| Тырă-пулăпа пахча çимĕçе вăхăтра пухса кĕртни колхоза темиçе миллион тенкĕ упраса хăварма пулăшать. | Тырă-пулăпа пахча-çимĕçе вăхăтра пухса кĕртни колхоза темиçе миллион тенкĕ перекетлеме май парать. |

# 13. СĂМАХСЕМ ХУШШИНЧИ ÇЫХĂНĂВА ПĂСНИПЕ ПУЛНĂ ЙĂНĂШСЕМ

Сăмахсем хушшинчи грамматика çыхăнăвне падеж аффиксĕсемпе усă курма пĕлмесĕр пăсни çинчен маларах асăннăччĕ ĕнтĕ. Акă тепĕр виçĕ тĕслĕх: 1) Елюк чунĕнче Ванюкпа нихçан уйрăлман, ăна юратма пăрахман («Уйрăл» глагол «Ванюк» сăмаха туху падежĕнче çырма ыйтать). 2) Çулленех Республика кунĕ ячĕпе халалланă пысăк концерт кăтартаççĕ (Республика кунĕ ятне халалланă теме пулать, анчах Республика кунне халалланă тени кăмăлларах). 3) Президент хальхи вăхăтра рынока мĕнле аталантармалли çинчен те чăрăнса тăчĕ (Мĕн те пулин çинче чарăнса тăрать чăваш!).

Сăмахсене кирлĕ падеж формине йышăнтарма тавçăраймасăр абитуриентсем те, хаçат-журналта ĕçлекенсем те пуплеве тăтăшах мăкăлтаççĕ.

Халĕ пĕр-пĕринпе çыхăнас сăмахсене тивĕçлĕ формăра çырмасăр тунă ытти йăнăшсем çинче чарăнса тăрар, тĕслĕхсене сăнар: 1) Пирĕн колхоз çулталăкри плана кашни çулах вăхăтра тултаратчĕ, халĕ вара... халĕ мĕн калаçмалли... (Çулталăк планне темелле). 2) Хулари çынсен театра, выставкăсене çӳреме пушă вăхăт, майсем пур, ялти çынсен вара ун пек мар (Хула çыннисен, ял çыннисен тени килĕшӳллĕрех). 3) Пирĕнтен чылайăшĕ çакна кураççĕ, анчах нимĕн те каламаççĕ («Чылайăшĕ» сăмахпа çыхăнакан глаголсене пĕрреллĕ хисепре çырмалла). 4) Пĕлетпĕр ĕнтĕ, Салампин çавăн ятлă савни пулнă (Çав ятлă çын теççĕ чăвашла). 5) Клавье - Ухсай Яккăвĕн «Ту урлă çул» поэмăри сăнар (поэминчи темелле). 6) Илер-ха акă Зоя Космодемьянская, Зина Портнова, çамрăк гвардеецсем (Илер-ха акă Зоя Космодемьянскаяна, Зина Портновăна, çамрăк гвардеецсене).

Пĕр çыхăну мелĕ вырăнне теприне лартса, пĕр форма вырăнне тепринпе усă курса сочинени чĕлхине пăсни юлашки вăхăтра сарăлсах пырать. Хăш чухне подлежащипе сказуемăй хушшинчи килĕшӳ çухалать, дополнени е обстоятельство тĕрĕс формăра пулмасть т.ыт.те. Пирĕн шутпа, çакă чылай чухне вырăсла шухăшласа чăвашла çырнинчен килет.

## 14. ПĔР СĂМАХА (СĂМАХСЕНЕ) СĂЛТАВСĂРАХ ТЕМИÇЕ ХУТ КАЛАНИ

Тĕслĕхсем: 1 «Шухăш» ятлă сăвăра çак сăмахсем питĕ янравлăн янăраççĕ. 2) Халĕ ĕнтĕ вăрçă шавĕсем иртсе кайни те хĕрĕх икĕ çул иртсе кайрĕ. 3) Пирĕн ял хыçĕнче кӳлĕ пур. Кӳлĕ хĕррипе - хăвалăх. Кӳлĕре тĕрлĕ пулă ĕрчетет колхоз. Çуллахи шăрăх кунсенче ачасем шыва кĕрсе савăнаççĕ кунта. Кӳлĕ колхоза тупăш та парать. 4) Пысăк çитĕнӳсемшĕн ăна парне парнелерĕç. 5) Колхозра хĕл кунĕсенче вăрлăхсене им-çампа им-çамлаççĕ. 6) Сакăрвуннăмĕш çулсенче çĕр-шыв вăйĕ тата ытларах вăйланнăччĕ, халĕ вăл вăйсăрлансах пырать. 7) Патшалăх ача амăшĕсене ачасемшĕн укçа парса чылаях пулăшать. 8) Президента суйламалли суйлавсем иртрĕç те, ун çинчен калаçма пăрахрĕç.

Илсе панă предложенисенче пуплев перекетлĕхне тытса пынă тесе калаймăн. Пĕр ăнлавах сăлтавсăр, усăсăр темиçе хут калани шухăш уçăмлăхне пĕтерет. Кунашкал пуплев кăлтăкне *тавтологи* теме йышăннă. «Тавтологи ытларах икĕ сăмаха çыхăнтарса каланă чухне палăрать. Ун йышши сăмах майлашăвĕсене, компоненчĕсем хăш пуплев пайĕнчен пулнине кура, темиçе ушкăна уйăрса сăнама май пур. Тавтологиллĕ сăмах çаврăнăшĕсем япала ячĕпе глагола, икĕ япала ятне, паллă ячĕпе япала ятне, причастипе япала ятне, паллă ячĕпе япала ятне, причастипе япала ятне, деепричастипе глагола, ят сăмахпа пулăшу сăмахне (ытларах хыççăмаха) т.ыт. çыхăнтарса каланипе пулаççĕ.

Тавтологи вырăс чĕлхинчен тата ун урлă ытти чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсене тата вĕсемпе пĕр пекрех пĕлтерĕшлĕ чăваш сăмахĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса тăвакан сăмах майлашăвĕсенче те палăрать»(5).

Юлашкинчен сочиненисенчи пуçватмăшсене илсе кăтартар: 1) Малти шаях паллă вырăна пырса тăчĕ. 2) Тĕрлĕрен тата ытти нумай пурне те паллă спектакльсене те пĕлетпĕр. 3) Хускатрĕ пулсан - унăн тивĕçĕ. 4) Çак спектакльсенче сăн-сăпачĕпе те, чунĕпе те илемлĕ хĕрĕн кăмăлĕпе те ырă. 5) Чăвашла спектакльсене урăх чĕлхерен те вырăсла кусараççĕ. 6) Çĕнĕ

спектакльсем тухнă май сцена çинче тухсах пыраççĕ çĕнĕ рольлĕ те çамрăк артистсем. 7) Пурнăç йывăрлăхĕсем, нумайлăха мар пулин те, манса каяççĕ камитре. 8) Артистсем хăйсене панă сăнарпа пĕрлех савăнаççĕ. 9) Театра халăх çÿрени кăтартса парать çĕнĕрен те çĕнĕ спектакльсем сцена çине тухни çинчен. 10) Вĕçен сцена çинче халăх умĕнче яланах пичĕ çинче йăл кулă нихçан та çухалмасть. 11) Йытăран та аяларах шая хывать. 12) Вăл шкулта вырăс чĕлхи урокĕ вĕрентетчĕ. 13) Пирĕн сирĕн тунă ĕççене тепĕр хут туса вăхăт нумай çухатма тивнине сирĕн ăнланмаллах ĕнтĕ. 14) Ĕнесене ĕçмелли шывпа туллин тивĕçтермеççĕ. 15) Çав пĕрле пухăнса каласнă вăхăтсенче лару-тăрăва тĕпренех улăштармалли улшăнусем çинчен кăтартса хăварнă. 16) Çĕр-шыв ĕнтĕ çĕнетĕве кĕрсе рынок йывăрлăхĕсем урлă чиперех утса каçма пултарнăран социаллă пурнăç экономика хутшăнăвĕсем лайăхланчĕç теме иртерех те пулĕ-ха.

Çакнашкал пуçватмăш предложенисене темле те вуласа пăхатăн, тĕшмĕртме тăрăшатăн - кăлăхах. Юри тунă пăтратмăш пек вĕсем. Шухăш çав териех арпашăнчăк пулма пултарнинчен тĕлĕнмелли çеç юлать.

Анлă сарăлнă пуплев йăнăшĕсем шутне çÿлерех асăннисемсĕр пуçне тата çаксем кĕреççĕ: чĕлхене сăлтавсăрах ют сăмахсемпе çÿпĕлени (макаронизм), диалектизмсемпе, жаргонизмсемпе, тÿрккес сăмахсемпе усă курни, паронимсене пăтраштарни. Предложенисене е вĕсен пайĕсене çыхăнтарма пĕлмесĕр, ĕç пулса иртнин сăлтавне палăртма тавçăраймасăр, çыхăнма пултарайман ăнлавсене, шухăшсене хирĕçлетсе абитуриентсем (студентсем те, журналистсем те!) тепĕр тĕрлĕ пуплев йăнăшĕ туса хураççĕ. Унăн ячĕ - пуплев логикăсăрлăхĕ (алогизм). Пуçватмăш предложенисем шăпах алогизмсем пулаççĕ те.

Çапла вара, сочинени чĕлхи унăн ăшлăхне (содержанине) пуянлатма та, хавшатма та пултарать. Предложенисене ытлашши сăмахсемпе йывăрлатса е каласа çитермесĕр ăнланмалла мар вĕçлени кама килĕшĕ? Сăмахсен йĕркине чухлаймасăр пуплеве кăнттамлатни кăмăллă-им? Хитрен вуланать-и-ха тата предложени членĕсене вырăнлă лартса туман текст?

Тĕрĕс, уçăмлă, сăнарлă, туйăмлă çырни вара чуна çĕклет. Хайлав пуплевĕ кун пек чух кал-кал, кĕвĕллĕ пулать,

хавхалантарать. Вуланăçемĕн вулас, лайăхпа хаклас килет ун пек ĕçе.

Филолог е журналист пулма ĕмĕтленнĕ çамрăкăн калаçăвне те, çыру чĕлхине те кулленех якатса, илемлетсе пымалла, çак тĕллевпе ятарлă хăнăхтарусем тумалла. Тĕрлĕ мелпе усă курма пулать ку ĕçре. Вĕсенчен хăшне-пĕрне çеç асăнар.

1. Чи малтан илемлĕ литература ăстисен чĕлхине тĕплĕн сăнамалла, тишкермелле, унтан вĕсенни евĕрлĕ çырса пăхмалла. Тĕрлĕ сыпăксем - çут çанталăка сăнлакан этюдсем, геройсен кăмăл-туйăмне, ăс-хакăлне кăтартакан самантсем, çын сăн-питне, кÿлепине ÿкерчĕклекен йĕркесем çине-çинех çырмалла. Лексика, морфологи хатĕрĕсемпе çыравçăсем мĕнлерех усă курнине тимлемелле. Синтаксиса та поэтсемпе писательсенчен вĕренмелле, вĕсем çырнине евĕрлесе предложенисене пĕр-пĕринпе çыпăçуллă, кĕвĕллĕ сыхăнтарма хăнăхмалла.

2. Хаçат-журналти тĕрлĕ темăпа çырнă текстсенчен хăвăра килĕшекен хитре вырăнсене касса илĕр. Çавăн евĕрлĕ хăвăр та «кукăрткаласа» пăхăр. Шел те ĕнтĕ, нумай журналистăн чĕлхи шкул ачишĕн, абитуриентшăн тĕслĕх пулаяс çук. Анчах хитре, кĕвĕллĕ çыракан хаçатçăсем те çук мар пирĕн. Хаçатран пухнă сыпăксем уйрăмах ирĕклĕ темăпа çырнă чух кирлĕ, мĕншĕн тесен вĕсенче тавракурăма ÿстерме пулăшаканни, тĕнчере мĕн пулса иртнине, этемлĕх мĕнпе пурăннине хыпарлаканни нумай.

3. Илемлĕх мелĕсене вĕренсе лартса, ăса хывса вĕсемпе усă курма хăнăхни те пуплеве сăнарлă тума май парать.

# КАШНИ ЙЁРКИ - КУЛĂШ ТЁРКИ

## *ШКУЛ АЧИСЕН ХАЙЛАВЁСЕНЧЕН*

Карачăм йытти валли сёт туянчĕ те вĕçĕмех унта пуçне чикрĕ.

Вăл Шишкинăн "Вăрманта" картининче çухалса кайрĕ.

Повеçри геройсем шурă юланут çине утланчĕç те тĕрлĕ еннелле вĕçтерчĕç.

Крылов художникăн "Хĕллехи каç" картининче юр питĕ тарăн, ырăн-ырăн пилĕк таранах.

Çухăракан михĕрен икĕ сысна çури сиксе тухрĕ.

Хулара культура пысăк: йыттисем урам урлă питĕ сăпайлă каçаççĕ.

Сурăх путекки çухални вăл макăрнинчен паллă.

Те макăрса анать ĕнтĕ ĕне кĕтӳрен, те кулса - çакна уйăрса илме май килмерĕ.

Атте тата пиччесемпе шăллăмсем çуккине пула йăлтах пушшăн курăнать.

Унăн сăн-сăпачĕ упăтене аса илтерет: вăл лутака та вăрăм пӳллĕ, çăра та пысăк măйăхлă, куçлăхĕ пĕтĕм питне хуплать, ырă кăмăлĕ куллинчен паллă.

Тĕмсем ура тупанĕ таранах çырласемпе витĕннĕ.

Питĕ кулянниле Çеруш савăнăçне пытараймасăр уй урлă утрĕ.

Виçĕ хĕрачапа туслашнă вăл: пĕри - Литюк, тепри - Лисук, виççĕмĕшĕ - асламăшĕ.

Хлестаков кӳме çине ларсанах, лавçă мотора чĕртсе ячĕ.

Моржсем сивĕрен хăрамаççĕ, вĕсем хĕлле те тум- тирĕпех шыва кĕреççĕ.

Эх! Мĕнле ырă-çке ту çинчен çунашкапа ярăнса анма! Уйрăмах хĕлле...

Лашапа слон шахматри чĕрчунсен йышне кĕреççĕ.

Çил хытă вĕрнипе урисем унăн хăй тĕллĕнех утрĕç.

Чи авалхи этемсем пальто тăхăнса çÿремен, мĕншĕн тесен питĕ шăрăх пулнă ун чухне.

Тилĕ çав тери хытă чупнипе пула хÿрийĕ ăна аран-аран ĕлкĕрсе пычĕ.

Йывăç çинче писнĕ грушăсем çакăнса тăраççĕ.

Гигиенăпа чирлес мар тесен алăсене час-часах çумалла.

Кашни ирех эпĕ форточкăна уçăлтаратăп.

Дубровский таса чунлă вăрă-хурах пулнă, çавăнпа та çуррине кăна çаратнă вăл.

Юлташпа эпир пулла кайрăмăр. Эпĕ пĕр пулă та тытаймарăм. Вăл манран виçĕ пулă ытларах тытрĕ.

Китăн кĕлетки кÿлепинчен, хÿринчен, фонтанран тăрать.

Унăн йăмăкĕ унран икĕ килограмм çамрăкрах пулнă.

Лĕпĕш çунаттисемпе пăшăлтатса вĕçет.

Пĕр старикпе пĕр карчăкăн Мурка ятлă кушак пур. Вăл икĕ шăши тытнă. Пĕрне çисе янă, теприне холодильнике хунă.

Дима пилĕк хутлă çуртра саккăрмĕш хутра пурăнать.

Шурлăхра унăн пушмакĕсем пилĕк таранах анса кайрĕç.

Чуралăх обществинче чурасем çĕтĕк джинсăсемпе çÿренĕ.

Астăватăп: пĕчĕк çура чухне эпĕ Пиратпа уçăлма тухаттăм.

Авалхи общинăра çынсем кĕтӳпе çӳренĕ.

Александр Македонский çарне слонсем ертсе пынă.

Карап пит хытă çапăннипе виçĕ пая пайланса кайнă.

Чăх чупнă чухне ури тĕпĕсем йăлтăртатса пычĕç.

Япăх çанталăкра пирĕн çырма питĕ хытă шавлать, пулăсене çывăрма памасть.

Вăл пуçне вăрăм çивĕтсемпе çивĕтленĕ.

Мĕн эсĕ ыйтуллă юпа пек пăхса тăратăн?

Йывăçа хуппи хăй саланса каясран кирлĕ.

Тĕмсем хушшинчен мулкач вĕçсе тухрĕ.

Хытă ӳкнипе Кольăн пуçĕ çаврăнса кайрĕ, анчах темиçе минутран чарăнчĕ.

Çаранра ӳпресемпе ĕнесем çӳреççĕ.

Кушак çури йăмăх хура пулнă, куçĕ кăвак, çемçе мамăклă.

Тайга вăл - тундра.

Шăши хăйне тытма лартса панă капкăна тырă пĕрчи сĕтĕрнĕ.

Аслашшĕн сухалĕ пĕркеленчĕклĕ пулнă.

Арçын ача ĕнене чулпа печĕ те çунаттине лектерчĕ.

Муму çиме пултараймарĕ, ăна Карачăм пулăшнă.

Ирхине физзарядка тунă чухне ман урасем чĕркуççи патĕнчен хуçланчĕç.

Коля вăраниччен маларах тăрса ларчĕ.

Эпир кăмакана вут-шанкă хутăмăр та вăл пиçессе кĕтрĕмĕр.

Йăван кунсерен мар, каçсерен ӳснĕ.

Наташа Ростовăпа Андрей Болконский иккĕмĕш серинче тĕл пулчĕç.

Арçын ачапа йытă кӳлĕ хĕррине çитрĕç те хывăнчĕç.

Чылайччен çакăнса тăчĕ савăнăçлă амăшĕ салтак хулĕ çинче.

Петрусăн çӳçĕ çӳлелле ӳснĕ.

Владивосток вăл - порт, унта суту-илӳ пуйăсĕсем çӳреççĕ.

Чиновниксемпе калаçнă чухне Хлестаков микроб пек айван курăннă.

Плена икĕ генерал тата пĕр документ тытса илнĕ.

Вăкăр - ĕне евĕрлĕ, икĕ мăйракаллă чĕр чун.

Кашни фигуристах илемлĕн ӳкме пултараймасть.

Тренер конькипе чупаканăн графикне йĕркелесе пычĕ. Вăл унпа юнашар чупрĕ.

Вăйă хăвăртлăхĕ питĕ пысăк пулчĕ, хоккеистсем ăна ĕлкĕрсе пыраймарĕç.

Çил хытă вĕрнипе урисем унăн хăй тĕллĕнех чупрĕç.

Хӳшĕре плита çинче шӳрпе пĕçернĕ. Унта упăшкипе арăмĕ ларнă.

Пуйăс ерипен пырать, анчах пысăк хăвăртлăхпа.

Кенгуру хăйĕн çурисене кĕсйинче чиксе çӳрет.

Вăрмантан çĕтĕк-çатăк упа тухнă.

Дон Кихот Санчо ашакне гаража лартнă.

Яла кĕрсен Пурис кивĕ çурт тăррине, хурсем какаланине, сыснасем нăриклетнине илтрĕ.

Пирĕн çине сенкер тӳпе тата çутă хĕвел ăшшăн кулса пăхать.

Ман патăма шухăшсем пĕрин хыççăн тепри пыра-пыра кайрĕç.

Урампа сенкер, пĕтĕмпех хĕрлĕ сăрăпа сăрланă машина вĕçтерсе иртрĕ.

Вăл ăна урараn пуçласа пуç тӳпи таранах вăрçса тăкрĕ.

Хирте сыснасемпе хурсем нăриклетеççĕ.

Вăл темĕн каласшăнччĕ, анчах ун чĕлхи çыхланса ларчĕ.

Щукарь сăнарĕнче автор унăн кулăшла пурнăçне сăн-ласа парать.

Мазай атте çут çанталăка сыхлас тĕлĕшпе сăмах тухса каланă.

Геракл кăшт хускалсанах унăн мускулĕсем пĕтĕм ӳчĕ тăрăх чупнă.

Тинĕсре карап пынă, ун тăрăх çумăр çунă.

Пăхаттирсем çинче шлемсем, кальчукăсем, алсишсем пулнă.

Эпĕ радиолокаторта ĕçлеме ĕмĕтленетĕп.

Алеша Попович лаша çине ларать. Вăл хура хăмăр тĕслĕ.

Çĕр айĕнчи пуянлăх çакăн пек ушкăнсене пайланать: усăллисем, усăсăррисем тата мамонтсем.

Çул тăрăх лашасем утă турттарса пынă. Ăна вĕсем çулла хатĕрленĕ.

Эпĕ питĕ ырă кăмăллă ача пуласшăн, анчах яланах вăхăт çитмест.

Унăн сулахай пит çăмартийĕ ăшă кулăпа тулнă.

Кĕпер çинче шоферпа "Жигули" харлаттарсах çывăраççĕ.

Ансамбльте кашӑкпа питӗ ӑста вылять вӑл, ҫавӑн пекех унпа яшка та ҫиет.

Кашкӑр сурӑх путеккине курсан хӑраса кайрӗ.

Икӗ уралла велосипедпа та манран хытӑ чупаймасть.

Бокс вӑл - ташласа ҫапӑҫмалли вӑййӑ.

Самолет ҫунаттисемпе шӑхӑрса вӗҫет.

Ҫурли мӑка пулсан та алла питӗ ҫивӗччӗн касрӗ.

Робинзон Крузо "Даниэль Дефо темтепӗр курса ҫӳрени" ятлӑ кӗнеке ҫырнӑ.

Хлестаков "Трактир" хӑна ҫуртӗнче чарӑнса тӑнӑ.

Петӗр кӗнеке вуласа ҫывӑрса выртать.

Феодалсем хресченсене кӗтӳ кӗтмелли вырӑнсенче пулӑ тытма чарнӑ.

Дубровский кровать ҫинче ларса телевизор пӑхнӑ.

Учитель ӗҫӗ лайӑх ӗҫ, эпӗ ӑна питӗ юрататӑп, ҫавӑнпа та тухтӑр пулма ӗмӗтленетӗп.

Ҫеруш, ҫӑварне уҫмасӑр, яшка ҫирӗ.

Лаша пит-куҫӗ тӑрӑх ҫакӑ паллӑ пулчӗ: вӑл тинӗс еннелле пӑхать.

Мана пӗр шухӑш хытах тапӑнчӗ.

Заповедникра вилсе пӗтнӗ чӗр чунсем пурӑнаҫҫӗ.

Ула такка меллӗн вырнаҫса ларчӗ те йывӑҫа кӑшлама пуҫларӗ.

Пахчара хӑлхисене ирӗклӗн тӑсса хупахсем ӳсеҫҫӗ.

Унӑн куҫӗсем вӑрӑм куҫ харши ҫинче ҫакӑнса тӑраҫҫӗ.

Ҫăкăр сăмсине Оля малта чупакан йыттипе ҫисе пычĕ.

Вăл питĕ тарăхнипе тĕлĕкре те ҫыварма пултараймарĕ.

Ман ҫине кăваклатма пуҫланă кушакран хăраса тартăм.

Хăлхисем унăн ăҫталла пăрас тенĕ, ҫавăнталла пăрăнаҫҫĕ.

Вара Коля хурлăхлă кулăпа савăнăҫлăн кулчĕ.

Хамăн атта тăхăнсан хама килти пекех туятăп.

Унăн шпаги ăшĕнче пĕр патрон ҫеҫ пулнă.

Динозаврсене вĕсем асфальт ҫине хăварнă йĕрĕсем тăрăх тĕпчесе пĕлеҫҫĕ.

Ваня ҫула варалас мар тесе хуллен утнă.

Лаша ҫӳлелле сикнĕ те кайăк пек вĕҫнĕ.

Ачине вăл, ялав пек, хулпуҫҫи ҫинче йăтса пынă.

Выляккансем вăйă вăхăтĕнче ҫĕмĕрĕлеҫҫĕ, ҫавăнпа та пуҫĕсене шлем тăхăнаҫҫĕ.

Тачка пĕлĕтсене хăвалакан ҫиле чарса лартрăмăр.

Эпĕ хамăн туссемпе шкулта та, картишĕнче те вĕренетĕп.

Шăрăх ҫанталăкра шыва чăмса, сана тухма чĕничченех нумай-нумай вăхăт хушши ларма пулать.

Летчик ҫунаттисемпе сулчĕ те шоссене шăйăрса илчĕ.

Вăл ҫаврăнса пăхрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: ун умĕнче ут ҫинче ларакан Петĕр тăра парать.

Вратарĕн куҫĕсемпе урисем мечĕк хыҫҫăн чупнă.

Питĕ шăп тăнă хура вăрман, анчах юманлăхра кашкăрсем ӳлени илтĕннĕ.

Оля - питĕ лайăх хĕрача, кăмăлĕ кăна япăх.

Лаша хуçи патне чупса пычĕ те ăна ыталаса илсе хăлхинчен тем пăшăлтатрĕ.

Петруç пек хăюллă ача сахал, вăл чăнкă çыран хĕррине чупса пычĕ те тăвата уран шыва сикрĕ.

Вĕçен кайăксем сывлăшран çăмăлтарах, çавăнпа вĕсем вĕçеççĕ.

Хураçка ун мăйĕ çине утланса ларчĕ те сăмсине, çамкине, урисене чуптума пуçларĕ.

Кимĕ юхан шывăн илемлĕ çыранĕсемпе ишет.

Эпĕ урама тухма çеç ĕлкĕртĕм, Хĕл Мучи мана питрен ярса та тытрĕ.

Чичиков Плюшкинран "Мертвые души" поэмăна сутма ыйтнă.

Чылай вĕçен кайăк - вĕçсе, шыв чăххисем вара чупса çӳреççĕ.

Алеша Попович Илья Муромец ĕнси хыçне тимлĕн пăхса пынă

Хĕрача куççулĕ мĕн пĕтичченех макăрса тăчĕ.

Тухатмăш карчăк хăйĕн ырă кăмăлне шăпăрĕ ăшне пытарнă.

Уйăпсем турат çинче хурăн çинчи панулмисем пекех ларнă.

Поэт кантăкран пăхнă та çут çанталăк пулăмне пĕтĕмпех курнă.

Гринев тавралла сăнарĕ, анчах юр капанĕсемсĕр пуçне нимĕн те курмарĕ.

Асатте куçлăх айĕпе пăхрĕ те хăйĕн пĕркеленчĕк пит-куçне курчĕ.

Ирина хытă çывăрнипе вăранса кайрĕ.

Вӑл пуҫӗпе ҫапӑнчӗ те ун хыҫҫӑн нумай вӑхӑт хушши уксахласа ҫӳрерӗ.

Шапа ҫӑварне шывран кӑларчӗ те кӑвак! терӗ.

Тарӑн шывран хӑранипе Петӗр ҫыран хӗрринчех шыва кӗнӗ.

Троекуров тискерленсе кайнине пула тӑватӑ уран утнӑ.
Кушак хӑрах урипе хӑвӑрт-хӑвӑрт чупать.

Хӑй сулахай енче ҫывӑрнӑ, кӗнекисем - сылтӑм енче.

Тутлӑ апат шӑрши сӑмсана кӗрсе кӑтӑкларӗ.

Кӗтес хыҫӗнче ҫӑмламас ҫын курӑннӑ, ун хыҫӗнче - урисем.

Миклухо Маклай Ҫӗнӗ Гвинейӑн ӑшчиккине тӗпченӗ.

Шӑши хӳрине мӑч-мӑч хӗстерсе чупрӗ.

Йывӑҫ ҫинче ват сухаллӑ курак ларнӑ.

Палаткӑран аллине хунар тытнӑ пуҫ курӑнса кайрӗ.

Лаша ҫынна питӗ юратнӑ, ӑна вӑл тракторпа улӑштарнӑ.

Кушак йывӑҫ тӑррине хӑпарнӑ пекех, пысӑках мар ту ҫине хӑпарса кайрӗ.

Авӑ урампа урапа пырать, унпа пӗрле - лаша.

Картина рамки, кивелсе кайнине пула, тусанпа витӗнчӗ.

Сак ҫинче хура тутӑр ҫыхнӑ карчӑксемпе стариксем ларнӑ.

Вӑл шӑпчӑк пек юрланӑ, анчах сасси тухман.

Иванов колхозра ӗҫлет пулин те кунӗпех килӗнче тар тӑкать.

Артистсем урисемпе ташланӑ, пушмакӗсемпе тапӑртатнӑ.

Гаврикăн киммине "Тургенев" пăрахут хӳрипе чышса хăварнă.

Вăл вăтаннипе пуçне çĕр çумĕнче тытса тăчĕ.

Петĕр урама тухрĕ те шăплăх килнине сисрĕ.

Çуркунне çитрĕ те, пĕтĕм тĕнче симĕсленчĕ, автансем авăтса ячĕç.

Кушак пире виçĕ çура туянса килсе пачĕ.

Манăн калаçакан сăмсаллă попугай пур.

Кукаçи пирĕн куççем урлах пире аван ăнланчĕ пулас: ума тутлă пыл касса хучĕ.

Çуллахи вăхăтра Петĕр яланах яла ĕне патне сĕт çиме çӳрет.

- Апат çиме лар! - терĕ асанне çăварне уçмасăр.

Кăнтăр апачĕ çитсен рабочисем ĕçе пăрахсах каçхи апата ваcкарĕç.

Богдан Хмельницкий вырăс патши патне телеграмма янă.

Аннен тути çывăхĕнчен ăшă кулă палăрчĕ.

Библиотекăра кĕнекесем айне пулнă сĕтелсемпе ачасем тăнă.

Михаç çара уран тумланчĕ.

Ун аслашшĕне лейтенант Егоров тесе чĕнеççĕ.

Вăл рекордла ӳкнĕ, никам та ун пек вĕçмен те, ӳкмен те.

Ку картина çинче вăл ӳкерчĕк туса кăтартнă.

Çынсем йывăр ĕçлесе килсен юрласа ларнă.

Хĕрлĕ кĕрĕк тăхăннă кайăк пĕтĕм чăхха шутласа кайнă

Петĕр пĕтĕм класс умĕпе шăппăн шавласа тухса кайрĕ.

Арçын ачапа хĕрача туслă пурăннă: вĕсем аппăшĕпе йăмăкĕ пулнă.

Кăштахран шăлĕсем таранах хĕç-пăшалланнă салтаксен ушкăнĕ каллех курăнчĕ.

Упа - çирĕп хул-çурăмлă чĕр чун.

Ачасем çывăх вăхăтрах кушак пек йывăç çине хăпарма вĕренчĕç.

Тӳпере шур упаллă пĕлĕтсем юхаççĕ.

Çумăр çунă чухне шапа наркăмăшлă шывра ларать.

Шапа васкавлă пурнăçпа пурăнать, вăл шывран сиксе тухса сывлăш çавăрса илет те каллех шыва чăмать.

Ача-пăча тум-тирĕсене çĕлес план çулăмсăрах çунать.

Йăкăнатăн пуçĕ шыва чăмнă пек, юхан шывăн тепĕр çыранĕ еннелле ишнĕ.

Илле хăранипе чĕлхине çыртса илнĕ, асăрхамасăр çăтса янă.

Çул урлă каçнă чухне вăл хура кушак курнă та тăнне çухатнă.

Кампур вĕрсе ярас мар тесе шăлне çыртса выртрĕ.

Атте лавккаран мунча кĕмелли сăмавар илсе килчĕ.

Юланутлă çын лаша çине утланса ларчĕ.

Чăх çăмартисене шуратса хуранпа пĕçерчĕ.

Вăл тĕрĕслĕхшĕн мăкăрланса çуннă.

Халĕ колхозниксем килĕсенче шифонерсем тата шпалерсем çыпăçтараççĕ.

Вăл тăрса тухать те каллех çапăçăва кĕрет.

Ванюк чул ӳкерчĕ те варринчен икĕ пая пайланчĕ.

Чакак ытти вĕçен кайăксемпе танлаштарсан ытлашши палкама юрататъ.

Тăмана кăнтăрла нумай çывăрнипе каçхине çывăрма пултараймасть.

Упа пыла кашăксăрах çиет.

Хир сысни, хăй тĕллĕн тăранса пурăннипе, килти сыснана шутсăр курайместь.

Татăлса ÿкнĕ çулçăсем йывăç çинче çаплах çакăнса тăнă.

Петĕр тутине пĕçертсе ямаллах мороженăй çинĕ.

Тахçантанпах кĕтнĕ хурлăхлă çумăр лÿшкĕнтерсе çума пуçларĕ.

Тарас Бульба, чĕлĕмĕ тăшмана ан лектĕр тесе, час-часах ăна çухатнă.

Карачăм тăвата çыншăн çинĕ, ĕçлессе вара пĕчченех ĕçленĕ.

Шăна путса вилес мар тесе çырана шăлĕсемпе çыртса тăнă.

Унăн куççулĕсем çумăр евĕр шăпăртатнă.

Пулă выçса çитнипе вăлта йĕппине çыртрĕ.

Çерçи тырă пĕрчине тарла-тарла сăхать.

Çил хăваланипе ун урисем хăй тĕллĕнех чупрĕç.

Çăвакан çумăр шавĕнче нимĕн те курăнмасть.

Иринка çывăрнă чухне гимнастеркăпа сухаллă ашшĕ кĕрсе тăчĕ.

Кимĕ çурри таран шывра тăнă, çурри таран - кÿлĕрех.

Хуралçă çĕрĕпех çывăрмăрĕ, ирхине тин вăранчĕ.

Çăмартара чăх чĕпписем амăшĕн сассине илтсе ун патне васкаççĕ.

Иванов хырӑмӗ тӑраничченех ахӑлтатса кулчӗ.

Хытӑ шӑварнӑ шывпа хӑяр хытса ларчӗ.

Ҫуйӑн Павлуша чӗркуҫҫи таран сӗтӗрсе кайрӗ.

Асанне ҫывӑра-ҫывӑрах чӑлха ҫыхса ларать.

Шӗшкӗ мӑйӑрӗ татнӑ чухнех хуҫӑлса анчӗ.

Ҫеруш ҫӗнӗ ҫемӗ калама пуҫласан ачасен урисем ҫӗкленсех кайрӗҫ.

Пӑравус утни аякранах илтӗнчӗ.

Пиччӗшӗпе шӑллӗ кантӑклӑ, алӑклӑ пӳрте урисене хуҫлатса кӗчӗҫ.

Ҫапӑҫнӑ чухне вӑл нихҫан та ҫапӑҫмасть.

Хӳме хыҫӗнче хӳрине вылятакан йытӑ вӗрни илтӗнчӗ.

Ун пуҫӗ ҫинче таса мар хӑлхасем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ.

Унӑн пушмакӗ хӑйӗнчен пӗр виҫе пысӑкрах пулнӑ.

Тӗлӗннипе куҫӗсем унӑн пӗтӗм пичӗ тӑрӑх чупнӑ.

Стена ҫинче илемлӗ ҫӳҫлӗ сӑн ӳкерчӗк ҫакӑнса тӑрать.

Хӗлле эпӗ ман умра вирхӗнекен ҫунашкапа ярӑнма юрататӑп.

Район центрӗнче музыка концерчӗ пулчӗ. Унта Петр Ильич Чайковский вылярӗ.

Ҫакнашкал атмосфера нӳрӗкӗсем пулаҫҫӗ: ҫумӑр, юр, лапра, пылчӑк.

Ӑмӑрт кайӑк аллисемпе хӑлаҫланса ҫӑханпа сӑмахларӗ.

Ҫак ҫын ҫӳлелле мар, айккинелле ӳснӗ.

Сикекен мулкач тунката ҫинче ларнӑ.

Пирӗн футбол команди сцена ҫинче питӗ лайӑх вылять.

Колхоз председателӗ шкул ачине хисеп грамотипе мухтать.

Ҫанталӑк сивӗ. Ҫил вичкӗн куҫлӑн вӗрет.

Тӑпрана им-ҫамламалла. Вара пире ырлӑх кӳрет. Енчен те ӑна им-ҫамламасан вӑл ӳсмест.

Пирӗн качака тӗлӗнмелле тутлӑ ӗне сӗчӗ парать.

Сӗт пӑсӑлчӗ пулсан унран тӑпӑрчӑ туса юсама пулать.

Эсир урамра ҫынна тата хӗрарӑма курма пултаратӑр.

Ҫулла эпӗ ӗнепе улӑхра курӑк ҫисе ҫӳрерӗм.

Ҫирӗп сывлӑхлӑ пулас тесен садсемпе, парксемпе сывламалла.

Хӗрача шыва ӳкрӗ, анчах путма пӗлмерӗ.

Сунарҫӑ пӑшалне алран ячӗ те килнелле утрӗ.

Пирӗн Мария Ивановна пысӑк чӗреллӗ ҫын.

Пӑру савӑнса кайсах канава сикрӗ.

Манӑн анне почтальонка. Вӑтӑр минутра вӑл 4 подъезда валеҫет.

Чухӑнсене ӗлӗк картинӑсенче ӳкернӗ, пуянсене - портретсенче.

Ула таккан ӗнси хыҫӗ хӗрлӗ тӗслӗ.

Ҫуркунне йывӑҫсене наркӑмӑшлӑ чӗр чунсенчен сирпӗтеҫҫӗ.

Пирӗн колхозри помидорҫем лавккасене ещӗксенче каяҫҫӗ.

Хӗвел пайӑрки тӗкӗр ҫине ӳксенех унтан мулкачсем хавассӑн йӑлкӑшса тухрӗҫ.

Упа çулла пухнӑ çуне хӗлле ури лаппинчен çуласа илет.

Ирина хӗрелме пуçланӑ икӗ симӗс хӑяра шатӑртаттарса кӑшларӗ.

Вӑл çунса вӗçсе кӑна çӳрет. Мӗншӗн тесен унӑн чӗри кӑварлӑ, урисем çунатлӑ.

Çӗрсем мулкач хӳри пек кӗскелнине пула кунсем ӗне хӳри пек вӑрӑмланса кайрӗç.

Вӗрентекен асӑрхаттарнӑ хыççӑн Коля çурӑмӗ урлӑ пӑхса илчӗ те аллине хуçлатса парта çине хучӗ.

Кӗркунне çывхарса килнине пӗлме питӗ çӑмӑл: кайӑксем кӑнтӑралла вӗçеççӗ, уйӑпсем - çурçӗрелле.

Тӳпене тем хуçрӗ-хуçрӗ те, пӗлӗтсем таткаланса пӗтрӗç.

Вӑл питӗ усал, анчах хӑй кӑмӑлӗ вара çемçешке.

Анне мана хӑймапа молоко илсе килме каланӑччӗ... эпӗ сӗтпе сметана çеç туянтӑм.

Пурнӑç кивӗ машин ураписем евӗр лачакана кӗрсе ларчӗ.

Вилӗмсӗр Кощей вӗлериччен çеç вилӗмсӗр пулнӑ.

Евгений Онегин хӑй вӑхӑтӗнче çухалса пурӑннӑ, хӑйне тупас тесе вӑл ют çӗр-шыва тухса кайнӑ.

Тарас Бульба чӗлӗмне çухатман пулсан ляхсене лайӑх кӑна чӗлӗм турттарнӑ пулӗччӗ.

Сӑмах хыççӑн сӑмах, çапла патша Пушкинпа хирӗçсе каять те ӑна Михайловскине ссылкӑна ӑсатать.

Обломов килӗнче ларса та курман, вӑл диван çинче выртнӑ.

Юмахсенче Ухмах Йӑван тӑр ухмах, хӑй вара питӗ ӑслӑ.

Микуç кайри ури çине тӗрӗнсе малалла тинкерсе пӑхрӗ.

Коля питĕ пуçтах ача. Вăл час-часах учитель пуçĕ çине хăпарса ларать.

Шкул пĕтерсен эпĕ рекэт çарне хĕсмете каясшăн.

Пуринчен те çўллĕ пулнă çак çын - икĕ тăваткал метра яхăн.

Казбич Бэлăна юратнă, Бэла - Лермонтова.

Трактор ула тĕтĕмпе тĕрлĕ сасăсем кăларса пынă.

Хĕрача уринчен пуçласа çўçĕ таранах хĕрелсе кайрĕ.

Эпĕ кушак çури тупрăм та вăл манăн çунатлă тус пулса тăчĕ.

Австралире çимелли йывăçсем нумай ўсеççĕ.

Кашни ача çĕлĕкĕ çине те юр ўксе çурĕ.

Шыва путакан утрав ытла та мĕскĕннĕн курăнчĕ.

Пўлĕмре питĕ тĕттĕмччĕ, çавăнпа эпĕ радио ятăм.

Плита çинче ларакан чайник шыв вĕретрĕ.

Пўрт тăрринчен çынсем килĕсене саланаççĕ.

Арçын ача асламăшне улталарĕ те, ун пичĕ çинче совеç палли курăнчĕ.

Мулкач йăвинчен инçех мар тилĕ шăлĕсене хăйраса ларнă.

Йывăç çинче ларакан чакаксем ют чĕлхепе калаçнă.

Чацкий питĕ таса çўреме юратнă, вăл аллисене хăлхисем таран супăньпе çунă.

Этем еверлĕ çынсем малтан çăмламас пулнă, кайран аталанса пынă май вĕсем хырăнма пуçланă.

Сывлăхăм ман чиперех, вар-хырăм та аванах чăмлать апата.

Сукмакпа виçĕ хур утаççĕ, пĕри - шурă тĕслĕ, иккĕшĕ икшер уралла.

Кăткăсем йăвинче пиччĕшĕпе йăмăкĕ пек питĕ туслă пурăнаççĕ.

Балсенче вăл майрасем хыççăн чупнă, кĕçех ăна çак йăлăхтармăш йăлăхтарсах çитернĕ.

Ӳкерчĕкри хĕрача чĕрĕ пекех курăннă, анчах чĕрĕ пулман вăл.

Алăк хыçĕнче васкаман йĕр сасси илтĕнчĕ.

Кĕçех тусан ушкăнĕ татăлса аннă та çунаттисемпе сулкаласа кантăкран пӳлĕме вĕçсе кĕнĕ.

Манăн Миша шăллăма Мишша тесе чĕнеççĕ.

Çурçĕрпе кăнтăр енчен мулкача хăвалакан йытă чупса çӳрерĕ.

Сĕтел варринче сăмавар тата ытти тутлă япаласем ларнă.

Тӳпере, тинĕсри пек, пĕлĕтсемпе пĕр карап ишнĕ.

Лаша питĕ илемлĕ пулнă, анчах ăна куçĕсем сутнă.

Пĕтĕм тăвата урипе шыва сикрĕ вăл.

Вăл ача чухнех ашшĕ ĕнси çине улăхса ларчĕ те урăх анмарĕ.

Çак çăкăра эпĕ икĕ алăпа тата çурăмпа ĕçлесе илнĕ.

Унăн куçĕсем çĕр кăмрăкĕ пек çунма пуçларĕç.

Коля пĕр вĕренмесĕрех "пиллĕк" паллăсем çаклатать.

Хĕрача çине сенкер кĕпе тăхăннă, пуçне тутăр çыхнă тата тапочкăсем.

Ириш баскетбол сеткине мечĕк ыватрĕ те унта кĕрсе ларчĕ.

Çил хытă вĕрнипе унăн атти тинĕсе путнă.

Мĕтри сак ҫине ларчĕ те ҫĕлĕкне пуҫĕпех хывса хучĕ.

Микулай хăйне йывăҫ ҫумне ҫыхса хучĕ те малалла таплаттарчĕ.

Михĕрен ҫăмламас пуҫпа хӳре курăнса кайрĕ. Ку Ваҫук пулнă иккен.

Кушак ҫурин кăкăрĕпе ура лапписем тапочкă евĕрлĕ, шурă тĕслĕ.

Пĕрре ҫеҫ тинкерсе пăхрĕ Петĕр юлташĕ ҫине, лешĕ тăватă кун апат ҫименни курăнчĕ.

Хытă шăннипе унăн сăмси лапчăнса ларчĕ.

Карачăмăн сăмси хăй вырăнĕнчен кăшт ҫӳлерех ларнă пек курăнчĕ.

Сăмса сăмсах вăл, пĕрре шăршлать те чие варенийĕ ăҫта пулнине ҫийĕнчех шыраса тупать.

Сăмса питĕ сисĕмлĕ, мĕншĕн тесен унăн ҫунаттисем пур.

Хăяр нитратлă пулнине чи малтан сăмса пĕлет.

Улăхра кавлекен ҫăварлă ĕнесем ҫӳренĕ.

Йывăҫ ҫинче арпус пысăкăш курак ларать.

Ачасем портфелĕсемпе сухаласа чупрĕҫ.

Хытă шăннипе унăн пĕр куҫĕ кĕрсе ларчĕ, тепри тухса кайрĕ.

Куракăн пĕтĕм ĕҫ хатĕрĕ те сăмсипе урисем кăна.

Куля тав сăмахне ҫĕнсе илме тивĕҫлĕ пулчĕ.

Йывăр вăхăтра вăл юлташне хăйĕн вăрăм аллине тăсса пачĕ.

Натиш пуринчен ытла арҫын ачасемпе чĕр чунсене юратать.

Хĕрача аллисене пуҫ урлă ярса урисене хуҫлатса утрĕ.

Вова Юркин 1995 çулпа малалла кайма шутларĕ.

Тантăшĕ Иринăна хĕртнĕ сăмахсемпе хĕртсе çунтарчĕ.

Икĕ усал сăмахпах çапса вĕлерчĕ вăл хăйĕн тусне.

Упрам Петĕрĕ питĕрсе хунă сăмах арчине уçаймасăр чылайччен асапланчĕ.

Пушмакĕсем хывăнса ан ӳкчĕр тесе Петĕр вĕсене шнурпа çыхса çӳрерĕ.

Унăн урисем хывăнса ан ӳкчĕр.

Унăн урисем хăй тĕллĕнех унталла-кунталла çӳреççĕ.

Аллисемпе кĕсмен пек авăсса утрĕ Куля.

Вĕсем шахмат хăми хыçне кайса ларчĕç те шахматла выляма пуçларĕç.

Вĕрентекен калакан сăмахсем ун хăлхине çивĕччĕн пырса тăрăнчĕç.

Така тирлĕ кăтра пĕлĕтсем пуç тăрринче çакăнса тăраççĕ.

Хĕрӳ çулăм типĕ вутта çавăнтах ыталаса илчĕ те çӳлелле çĕкленсе хавассăн ташлама пикенчĕ.

Ачасем, пурте викторинăна хутшăнăр: сирĕн кĕсйĕр уншăн çĕтĕлмĕ те çӳхелмĕ те.

Хĕвелĕн ĕнчĕ пĕрчисемлĕ пайăркисем асамлă юрату пĕрĕхтерчĕç.

Ăна Ира мар, çут çанталăк панă ырлăх ыталарĕ.

Тахăш кун сехет йĕппи тахăш тĕле çитрĕ.

Вăл хывăнмасăрах пальтине вешалкăна çакрĕ.

Эпĕ пиллĕкмĕш класра пурăнатăп тата вĕренетĕп.

Ача садне ачасемпе пĕрле ват çынсем çӳреççĕ.

Вова тумланнă-тумланман шкула чупать.

Ман атте професси тĕлĕшĕнчен атте.

Пит çăмартийĕпе хăлхисем унăн сивĕпе çуннă.

Урам вĕçĕнче ĕне кĕтĕвĕ мĕлтлетрĕ.

Вăл сĕтел-пукана вырнаçтарса лартрĕ, якатрĕ, унтан шкапа кайса хучĕ.

Арăслан хăлхисем çинче кăпăшка çилхе, хӳри вĕçĕнче - киçтĕк.

Вова хуткупăсне ах тур! хытă тăсать: ăшалать кăна.

Йытăсем урамра выляса ывăнчĕç те ташă площадки еннелле çул тытрĕç.

Кăвакарчăн çара уранах тин çунă юр тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ.

Автанăн хĕрлĕ çĕлĕкĕ хытă чупнипе тата та хĕрлĕрех курăнчĕ.

Ивуç умывальник патне пычĕ те кушакпа пĕрле питне çурĕ.

Чи-чи кăсăя ирех кантăка шаккаса Петĕре вăратрĕ те унран мĕн те пулин çимелли ыйтрĕ.

Пирĕн вĕрентекен сăмси çине светофор пек çаврака куçлăх утлантарать те мăнтăркка та авкаланакан ăман евĕрлĕ “2” паллăсем лартма пикенет.

Вĕрентекен пулас ĕмĕт вара тахçанах сырăнчĕ унăн пуçне.

Çил ачисем çара йывăççене урса кайса лăскаççĕ, тĕпĕртетсе общежити тăррипче чупаççĕ.

Пулас урока пуçра темиçе хутчен те “алласа” тухнă вăл.

Çанталăкĕ паян сар çу пек шăранать.

Пирĕн пата кушак çура чухнех пурăнма куçса килчĕ.

Мана пĕр шухăш вирлĕн тапăнчĕ те хăпма пĕлмерĕ.

Петĕр портфельне чи малтан пы-ысăк кукăль чикрĕ, унтан - пĕр-ик кĕнеке.

Лаша çĕтĕк шăлавар тăхăннă хуçине курчĕ те чутах кулса яратчĕ.

Вăл хăвăрт чупнипе никама та курмарĕ.

Ун чунне уяв тумĕ кĕрсе ларчĕ.

Çуркунне сиккипе ĕрĕхсе иртсе кайрĕ.

Арçын ача сăрт айĕнче ларнă, ун çинче курăк ӳснĕ.

Манăн юлташ çăкăр сăмсаллă.

Çунатлă урисемпе Куля финиша чи малтан çитсе хăйăва татса ячĕ.

Пурис Йăванĕ кĕпине çăва-çăва хуратса пĕтерчĕ.

Икĕ ачасен ушкăнĕ виçĕ ачасен ушкăнĕпе тĕл пулчĕ.

Ял вăрманĕнче упасемпе кашкăрсем мар, пионер лагерĕсем нумай.

Манăн аквариумра çынсем пурăнмаççĕ.

Ӳксе чĕркуççине ыраттарсан Ларивана алă-ура хуçакансен пунктне ăсатрĕç.

Çимук телевизор умне пăтланса ларчĕ.

Яла асламăш патне кайсан Инкуш каççерен кĕтӳрен таврăнакан выльăхсемпе каласрĕ.

Авалхи çынсем кĕтӳпе пурăннă.

Арçын ача хулпуççирен шăлавар тăхăннă.

Дубровский ырă кăмăллă вăрă пулнă, мĕншĕн тесен вăл Мария Кирилловнăна юратнă.

Арçын ача чĕлхипе пылаклăн хăлхи тавра çулларĕ.

Оля йытă çине кĕнекепе пăхрĕ.

Верукăн чараксăр чĕлхи салтăнса кайрĕ те, ăна вăл ниепле те çыхма пултараймарĕ.

Калаçу арманĕ пĕр тикĕс çаврăннă.

Алоэ хăйĕн симĕс шăлĕсене хăйраса ларчĕ.

Купăс каланипе Куçукăн урисем, чипер ларнă çĕртех, выляма пуçларĕç.

Мишша пичче радио умĕнче калаçрĕ.

Вăл урлă та, тăрăх та перкелешет.

Илюшăн шухăшĕ вĕçсе кайрĕ те, ăна вăл ниепле те хăваласа çитсе тытаймарĕ.

Витя, Иринкăна юратса пăрахнипе, хăйĕн чухăн чĕрине çухатрĕ.

Рудик тапнă мечĕк чул пек вĕçсе пырса Ваçук пуçĕ çине шаплатса ўкрĕ.

Хытă чупнипе Кулян ури тĕпĕнчен çулăм тухса пычĕ.

Шутсăр вăйлă шухăшланипе унăн пуçĕ арпашса кайрĕ.

Пирĕн шкулти хоккей команди пуçран пуçласа пĕç кăкĕ таранах клюшкăсемпе хĕç-пăшалланнă.

Унăн вĕри куççулĕ юхан шыв пек шăнкăртатса юхрĕ.

Çуркуннешĕн савăнса кăсăясем кўлленчĕкре шăмпăлтатса шыва кĕреççĕ, ăш хыпнипе унти хура шыва лăнкăрт-лăнкăрт ĕçеççĕ.

Пĕрре хыпса çунма пуçланă чĕре татах та хытăрах çунма пуçларĕ. Унтан çунса пĕтсе кĕл пулчĕ те сӳнчĕ.

Хĕр тепĕр хут утиял айне кĕрсе выртрĕ те тин курнă тĕлĕкне кино пек пăхма пуçларĕ.

Пирĕн Муркка кушак кашни кун шăши тытса хăй сывлăхне упрать.

Маша сĕтел хушшине ларчĕ те шурă хута ручкăпа хуратса çыру çырма пуçларĕ.

Унăн чĕри ĕсĕкленипе ниçта кайса кĕреймест. Тен, тепĕр чĕре çăлăнмалли вырăн тупса парĕ ăна?

Илемлĕ эрешпе хупăрланнă чӳречерен çутă урамалла яр-уççăн ӳкет.

Куçĕсене тӳпенелле çĕклерĕ те хĕр - унта çутă çăлтăрсене курчĕ. Кăштахран вăл вĕсене каллех антарчĕ...

Хам ята пытармастăп. Вăл çавах çиеле тухать.

Славăн чирĕ шалтан шала кĕрсе пынă, вăл каялла тухма шутламан та.

Миля çакна чăтса тăраймарĕ, киле хăйĕн хĕрлĕ шупка пичĕ çинчен вĕри куççуль юхтарса чупса кайрĕ.

Каялла-малалла çаврăнса кайрĕç хĕрсем хăйсен килнелле.

Юрату мĕнле килчĕ, çавăн пек çухалчĕ.

Пĕрремĕш килĕштермен эпĕ вăл качча.

Ивановсен килне шырать иккен, анчах вăл ăçтарах пурăннине пĕлмест.

Хурăнсем именчĕк хĕр пек куçĕсене аялалла уснă.

“Кĕртет-ши вăл мана?”- кĕрсе тухса кайрĕ шухăш Лена пуçне.

Физкультура урокĕ тин анчах ларнă пулсан та урок тухасса чăтăмсăррăн кĕтнĕ вăл.

Урисем Мишăна итлемесĕрех Оля еннелле утрĕç.

Мĕн пытарать-ши çак асамлă сăмах хăй хыçĕнче?

Маша çемйи питĕ тĕрĕс çынсенчен тăрать.

Андрей хĕре çаклатса анкартисем хыçĕнчен çăл патне васкарĕ.

Чунĕ икĕ çунатлă пулса вĕçсе кайма хатĕрччĕ унăн. Чĕри вара чи хитре хăйĕн ташшисене ташлатчĕ, шалти "чун сасси" вара ăна такмак каласа тăратчĕ.

Çăлтăрсем тухаççĕ те тӳпене çĕр çинелле тинкереççĕ. Тем шыраççĕ вĕсем. Çухалнă япалана тупсан вара илме анаççĕ.

Телейне тупнă икĕ çыншăн савăнса хурăн та ырă сăмахсем каласа пуçне тайрĕ.

Трубкăна тытсанах тепĕр вĕçĕнче хăвăрт калаçма пуçларĕç.

Ăнсăртран Флоранс пичĕ пысăк кулăпа сарăлса кайрĕ.

Кристина ун умĕнче пĕр самантрах ирĕлме пуçларĕ.

Вĕсем сан пĕр куççуль тумламĕн тĕшшине те тăмаççĕ.

Кăн-кăвак пысăк куçлă хĕр пĕрчи лĕпĕш пек çаран тăрăх чупса пырать.

Ĕмĕтсем пуça пĕрин хыççăн тепри кĕре-кĕре тухаççĕ.

Йăл-йăл çеç кулать, çутă кăвак тум тăхăнтартнă куçсемпе ытла та килĕшет.

Çитменлĕхсене, йăнăшсене ылмаштарма пултаратăр, урăхлатма та юрать.

Саша инженерсем хатĕрлекен кабинет алăкне тăваттăмĕш çул уçса хупатчĕ.

Паллах, ку чăнах та çапла тĕрĕс ĕнтĕ.

Юратнă çынпа пĕр самант та пулсан уйрăлас килет.

"Эпĕ урăх никама та юратас çук", - текен сăмахсем те халĕ пурнăçăн çулĕ çинче çил вăйĕпе сирĕлсе кайрĕç.

Пĕвесем çыранланса ан кайччăр тесе йăмрасем лартнă.

Хĕре пуçĕнчен ачашланă май унăн та куçĕсенчен хурланнипе куççулĕ пĕр чарăнмасăр юхса анчĕ.

Çапла кунсем пĕчĕккĕн иртрĕç, çулсем те шурĕç, 17 çулхи Римма кăçал 19 çул тултарчĕ.

Хăйне валли хăй пурнăç тăвать вăл, анчах иртнĕ амăшĕпе пĕрле пулнă чухнехи кунсене аса илсен вара чун каниччен ларса йĕрет.

## *АБИТУРИЕНТСЕМ ÇЫРАÇÇĔ*

Селиме пурнăç йывăрлăхĕсене чăтаймасăр хăйĕн пуçĕ çине ал хурать.

Шерккей чĕр чунсене те юратмасть, усал чунлăскер, кушакне ним хĕрхенмесĕр турчкапа çапса вĕлерет.

Енчен те паянхи çамрăксем, хура çăкăр романри ырă сăнарсенчен тĕслĕх илсен вĕсем çутă шĕвек ĕçме пăрахатчĕç, тĕнче те илемлĕрех пулĕччĕ. Çак роман вĕсене эрех ĕçме вĕренессине чарса тăмалла, хура çăкăр çеç çиме вĕрентмелле.

Манăн халăх умĕнче парăм пур. Вăл парăм эпĕ университета вĕренме кĕрсенех пулмасть. Вара эпĕ лăштах сывласа ярăп, хама телейлĕ тесе шутлăп. Йышăн мана, хăй парăмне татма хатĕр çынна, хăв патна, университет!

Чăваш хĕрарăмĕ ĕлĕк-авал хăйĕн пурнăç шăпине купаласа пырайман.

Чăваш хĕрарăмĕн пурнăçĕ кăмака умĕнче тĕршĕнсе иртсе кайнă.

Халĕ нумай килте хĕрарăмсене çынна хумаççĕ. Вăкăр пек ĕçлеттереççĕ, кăвак куçпа çӳреттереççĕ, ача çураттараççĕ.

"Арçури" халапра чухăн хресчен вăрманта, уйра, çанталăкăн тĕрлĕ пулăмĕсем хушшинче темтепĕр курса çӳрени çинчен каласа парать.

Хĕветĕр вăрмана кайсан лашипе пĕрле аташса çӳреме тытăнать.

Хĕветĕр арçури çинчен пĕлнĕ-ха, вĕсен халапне хăра-хăра итленĕ ача чухне, çавăнпах вăрманти арçурин пуçĕнчен сĕрĕм тухма тытăннине курсан шартах сикет.

Арçури пусмăрланипе Хĕветĕр ниçта кайса кĕме пĕлмест: пăшăлтатма пуçлать, турра пуç çапать.

Хĕветĕр "ырă вилĕмпе вилесшĕн", урăхла каласан, 90-100 çула пурăнса çитесшĕн.

Авалхи чăвашсен ал-урисене тĕрлĕ тĕшмĕшпе çыхса хунă пирки пурнăçĕсем трагеди майлă вĕçленеççĕ. Хĕвел ансан Хĕветĕр, эпир ăна пĕлетпĕр, хăйĕн ырхан лашине кӳлет те, юлашки хытса кайнă çăкăрне сивĕнесрен ăшă хĕве хурать те аран-аран уткаласа вăрмана каять.

Тăхтаман Нарспие хĕнесе пурăнни Нарспие ырă мар шухăша тутарать.

Манăн анне çапла калатчĕ: "Нумай çемьесем ача çуккипе арканаççĕ, ача вара вĕсене тытса чарать капла тума". Эпĕ вара шутларăм: "Тен, Нарспипе Тăхтаманăн та ача тумаллах пулнă пулĕ, вара трагеди те пулмастчĕ пулĕ".

Нарспипе Сетнер кĕрешӳ тан мар пирки пĕтеççĕ: Сетнере вăрăсем çапса хуçаççĕ, Нарспи чун-чĕри чăтаймасăр çакăнса вилет.

Çеçпĕл чăваш словарьне çĕнĕрен те çĕнĕ сăмахсем вĕрсе кĕртнĕ.

Çĕр-шыв вăранасса Çеçпĕл хурçă шанчăкпа пĕрле шаннă

Аптраман йăхĕ виçĕ сăнарсен йăхĕ ăрăвĕсем çине пайланса тăрать.

30-мĕш çулсенче чăваш чĕлхипе кино та ÿкернĕ.

Максимов-Кошкинский хушамачĕ те лайăх çынна пĕлтерет: вĕсен йăхĕнче кушаксене юратнă пулмалла, писатель вара ăна хушамата кĕртнĕ.

Катăк Çăвар - вĕçкĕн çын. Судьясемпе те вăл вĕçкĕнле калаçать: "Ни Сăпани не видал. Ни на базар не хожу". Паллах, укçа çуккипе каймасть вăл пасара.

Юмор тесе ахăлтатса çитменлĕхсенчен кулнине калаççĕ, сатира тесе вара йĕрĕнсе лĕхлетсе кулнине калаççĕ.

Поэт та çынах. Пирĕн пекех юнран тунă çын.

П.Хусанкай трагедийĕсене 57 чĕлхепе вулаççĕ. Çак япала сире мĕн çинчен те пулин шухăшлаттарать-и? Е çук?

Поэтăн та çитменлĕхсем пур. Вăл пирĕн пекех апат çиет, шыва кĕрет. Унăн та хăш-пĕр чухне пуç ыратать.

Хăш-пĕр çынсем поэта темле идеаллă сăнар вырăнне хураççĕ. Ку, ман шутпа, пысăк йăнăш.

Поэтсен сăввисем çемьере те, пухура та, уявра та, пахчара та янраса тăччăр.

Тырра халăхран пытарма юрамасть, ма пытараççĕ ăна çăткăн кулаксем?

Сонет вăл - Мускав поэчĕсем çыракан сăвă.

Чăвашсем ăçтан пулнине кашни тĕрлĕрен шутлать: пĕрисем Адампа Еваран теççĕ, теприсем упăтерен теççĕ.

Малтанхи чăваш халăхĕ шăтăксемпе вăрмансенче пурăннă.

Хальхи вăхăтра питĕ чее пулас пулать, вара телейлĕ пулатăн.

Чăвашсене ĕлĕк наци шутне кĕртме те хăранă.

Ленин чӑвашсене ҫӗр пирки хут парать.

Хӗветӗре шуйттан ҫури евӗр арҫури курӑнса каять.

Тӑхтаман чунсӑрлӑхне пула Нарспи ӗмӗрӗ татӑлать. Тухтар вара пачах ун пек мар. Вӑл партине хисеплет.

Пуянсем укҫа ҫинче шыва кӗрекенсем те пулнӑ.

Чӑваш халӑхӗн паттӑрӗсем кӑмпа пек шӑта-шӑта тухнӑ.

Пурнӑҫ йывӑрлансах пырать: ҫӑкӑр татӑкӗсем хаклансах пыраҫҫӗ.

"Ялти чухӑн Хӗветӗр
(Эсир ӑна пӗлетӗр)..."
Ман шутпа, Федоров ҫак йӗркесемпе чӑваша пурте пӗлеҫҫӗ, чӑваш пур ҫӗрте те хисепре тесшӗн пулнӑ.

Чӑвашсем халӗ ҫуталма шутланӑ. Юрать Ульянов пулӑшрӗ, пӗрремӗш чӑваш букварӗ кӑларчӗ.

Анчах та чӑваш кӗнекине хӗрлӗ ӗне килнӗ те ҫинӗ те янӑ.

Ӗлӗк каккуй вӗренме, ытлашши хут сывлама хӑранӑ.

Ҫынсен чӗрисенче магнитофон кассети ҫинчи пек пленка: унта аса илӳсем упранаҫҫӗ.

Арҫури ҫул ҫине тухать те вӑрӑм хӳрипе вылятса питӗ хытӑ мӗкӗрет, Хӗветӗре хӑратать.

Ман ӗмӗт - ҫак университета кӗресси, ӗмӗрӗн сарлака ытамне тӗрӗс кӗрсе ӳкесси. Йышӑнсам мана, университет, хӑвӑн вӑйлӑ, хӑватлӑ ытамна!

Ырӑ ҫынсем хушшинче усал ӑслисем те тупӑнкалаҫҫӗ пек туйӑнать манӑн пӗчӗк ӑсӑма.

Пирӗн ӗмӗр пӗрре ҫеҫ килет, ҫавӑнпа унпа савӑнса, кулса, выляса юлас пулать.

"Ӗмӗр сакки сарлака",-
Тетчӗ манӑн кукамай

"Анчах ĕмĕрĕ кĕске",-
Юрлать радио пĕрмай.

Ху ĕçлесе çисе таврăнсан тин çын шутне кĕретĕн.

И.Я.Яковлев чăваш чĕлхинче алфавит уçнă.

Аннен аркинчен уйрăлас килменнипе эпĕ ялтан хулана каяс теместĕп.

Çакă пысăк çĕр çинче
Кашни тĕрлĕ ĕç тăвать:
Эпĕ парта хушшинче,
Тепри вара çывăрать.

Халĕ эпĕ тăнлă çынсем шутне кĕме тапаçланса вĕренме кĕресшĕн.

Тăхтаман усалли ятĕнчен паллă. Тăхтаман - "ман". Пурте ман, никама та памастăп: ман укçа, ман Нарспи, ман, ман, ман...

Айтар кайранхи арăмне те хĕнесе вĕлернĕ. Çапах та вăл пуçне усмасть: татах та авланма шут тытать.

Çынсем каланă тăрăх, Ленин та тĕрмере ларнă теççĕ.

Тăхтаман - улпута тухса çитеймен чăваш.

Тăхтаман усал арçын пулни вăл Нарспие ватнă чухне курăнать.

Ленин, Маркс калавĕсемпе повеçĕсене вуласа пĕтĕм тĕнче çак паллă çынсене пĕлет.

Мĕн çуралсанах эпир ĕмĕр сакки çине сиксе ларма тăрăшатпăр.

Ман чĕре пĕчĕк çаврашкара кăна-ха. Мĕнле пысăк лаптăкра вырнаçнă-ши тăван литературăри писательсемпе поэтсен чĕрисем?

Халĕ тĕнчере пурăнма питĕ йывăр. Социализм вăхă-тĕнче пурăннă çынсене капитализмра пурăнма питĕ йывăр. Нумай çынсем çак вăхăтра пăлханаççĕ, хăйсен ĕмĕчĕсене çухатаççĕ, çĕнĕрен социализм тума тăрăшаççĕ.

Чăваш литературинче юрату стилĕ те нумай тупăнать уйрăм произведенисенче.

Çамрăклăх! Кам шутласа кăларнă ăна?

Пурнăç чĕрене пурăнма хистет.

Нарспи хăй пурнăçне юратман çынпа тĕвĕлентернĕ.

Пуян çынсем хăйсен ачисем те пуян пулччăр тесе пуян çынпа тăвасшăн пулнă.

Иванов Нарспине ĕмĕт тӳпине çитернĕ, анчах телей парса çитереймен.

Ĕлĕкхи чăвашсем йĕпе вырăнсене вырнаçнă.

Ташлама пуçласан хускалми пулан.

Драмăсем драмăлла вĕçленеççĕ.

Ирĕксĕрех çынсем кукăр çулпа вăрлама каяççĕ.

Сывă арçын ясар пулмалла.

Сетнер савнă хĕрне шыраса вăрманта ларать.

Ялти хусахсем те Нарспине килĕштернĕ.

Пинерпин те юратман каччи пур: ăна Атнер тесе чĕнеççĕ.

Халĕ нумайăшĕн укçа çук: çавăнпа та вĕсем эрех кăна ĕçеççĕ, табак кăна туртаççĕ.

Елюк Çтаппан çине качча каять.

Упалене-упалене макăрать Нарспи.

Нарспи кушак пит çума тытăнсан апат-çимĕç хатĕрлеме пуçлать.

Пурнăç вăл çав тери кăткăс япала: унăн пуçĕ те, кучĕ те пур теççĕ пурăнса курнă çынсем.

Анчах та хальхи вăхăтра пулас амăшěсем туса çитереймен ачасем çуратаççě.

Пěрисем хула урамěсем çине тěрлě хут татăкěсем ывăтаççě, теприсем лайăх мар сăмахсемпе калаçаççě - хула илемне яраççě.

Měншěн Шупашкара ватă теççě? Шупашкар нихăçан та ватă пулман, пулас та çук.

Аслă та кермен пек пирěн тěп хуламăр.

Шупашкарти палăксем пěтнě: пěрин хăлхи çук, теприн сăмси катăк.

Шупашкара асамлă çыннисем, Атăлти пуллисем илем кўреççě.

Атăл хěрринче, залив патěнче, çул усрěç. Унтан инçех мар фонтан шур акăш евěр саптарса ларать.

Шупашкар çумěпе илемлě залив шăнкăртатса юхса выртать.

Шупашкар йěркеленнěренпе çур ěмěр ытла иртрě ěнтě.

Тăван хула, ěмěрех эс пěрле Атăлпала!

Шупашкарта водопадсем, зоопарксем, Диснейлендсем кирлěччě.

Пěр турă çеç пěлет Шупашкар малашлăхě çинчен. Мěн пулать, çав пулать.

Ман сана калас килет, Шупашкар: "Çакă çутă тěнчере мěскěн чăваш хěрне йышăнса ху хўтлěхне вăхăтлăха та пулин кěртсем, сан çинчен юрă юрлăп, сăвă çырăп".

Шупашкарта çěр айěнче çўремелли метро туса хумалла тесе шутлатăп. Çынсем çўлте çеç мар, çěр айěнче те çўремелле. Вěсене хăйсене те лайăх пулать, мěншěн тесен çўлте питě нумай машинăсем - çынсене таптаса кайма та пултараççě. Çěр айěнче вара лайăхрах: утса çўреме те усă, ирěклě.

*ВЫРӐНТИ РАДИОСЕМПЕ ХАÇАТСЕНЧЕН*

Канализаци ĕçлемен пирки фермăна шыв пымасть. Çавăнпа та шăтăк чавма бригадир Козловăн çичĕ-сакăр арçынна ломсемпе хăваламалла.

Прохоров тухтăр вуннăмĕш çул ĕнтĕ виçĕ хутлă ача çуратмалли çуртра ĕçлет.

Пухăва производствăра малта пыракансене тата эрех ĕçме юратакансене чĕннĕ. Пуху хыççăн уява пухăннисене пысăк та чаплă концерт кăтартрĕç.

Второй бригадăн шестой поля олăм бунтовать тума каймалла.

Ял çыннисем колхоза 87 сысна пуç самăртса пачĕç. Çак ĕç малалла пырать.

Анне хальхи вăхăта таврăнчĕ те газа сӳнтерчĕ.

Выляксансем вăйă вĕçленес умĕн вăранчĕç, çапах та кӳршĕ ял футболисчĕсене нимĕн те тăваймарĕç.

Çĕнĕ закон пурнăça кĕрет. Вăл пире ĕçрен пăрăнакансене пĕтерме пулăшать.

Столовăйпа анат вĕçĕнчи пӳлĕмсенчен тислĕк шĕвекĕпе апат юлашкисем стенасен аял енчи шăтăк-çурăкĕсенчен витепе кормоцех çурчĕ хушшине юхса тухаççĕ.

Вĕсем хăйсен интересĕсене хӳтĕлеме хутла вуçех пĕлмен, эрех ĕçме пултарайман Василий Никифорова суйланă пулнă.

Продавецсене вăхăтра пăхса юсаса тăманни тата харпăр хăй тĕллĕн тунă предохранительсемпе усă курни нумай чухне пушар кăларать.

Районтан кунсерен тенĕ пекех шăнкăрав пырать.

Хăш-пĕр ялсенче йытăсем ирĕкре çӳрени çырусене, хаçатсемпе журналсене, телеграммăсене вăхăтра çитме чăрмантараççĕ.

Колхозри ӗнесене сӑвас ӗҫе механизацилес шутпа, выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансене ырантан машинӑпа сума пуҫлатпӑр.

*ТӖРЛӖ ПӖЛТЕРӲСЕНЧЕН*

Ҫӗрпӳ пасарӗнче паян Васильев агент тир-сӑран пухать. Юлташсем, хӑвӑр тирӳсене илсе кайма ан манӑр. Ҫӗр-шыва сирӗн чӗр тавар кирлӗ!

Хисеп хӑми валли халех сӑн ӳкерчӗксем кирлӗ. Предприятире ӗҫлекенсем пурин те паян-ыранах фотограф патӗнче пулмалла. Кама-кама ӳкерсе ямаллине вӑл лайӑх пӗлет.

Профком Мускава экскурсие кайма паян юлашки кун укҫа пухать. Килейменнисен те вунӑ тенкӗ Михайлов кассир патне пырса памалла.

Катькассинчи Григорьев Павӑлӑн эрне каялла качаки ҫухалнӑ. Унӑн паллисем: тӗллӗн-тӗллӗн шурӑ-хура, хӳри кӑвакарнӑ ҫамлӑ. Тупса паракансемпе кӑмӑллӑ пулӑпӑр.

Ҫӗмӗрлери вӑрман комбиначӗ вӑрман ҫаратнӑшӑн вутӑ сутать. Кабанова тата Речной вӑрман пункчӗсене пырса ыйтмалла.

Суту-илӳре ӗҫлекенсен кунӗ пулнӑ май июлӗн 1-мӗшӗнче магазин ӗҫлемест.

Янмурзино ялӗнче пурӑнакан Иван Аптрашкин ӗнепе чупнӑ пӑру сутать.

Киоскра сутма ҫӗнӗ артистсем илсе килнӗ. Пӗри ҫирӗм пус тӑрать. Туянма васкӑр.

Ирӗкре чупса ҫӳрекен йытӑ хуҫисене малашне штрафлатпӑр.

Вуникӗ ҫула ҫитнӗ ачасемпе профкома парнесем илме кӗрӗр. Пурте васкӑр!

Лифта хупӑнса ларсан ҫиййӗнчех ҫак телефонпа шӑнкӑравлӑр.

Сирĕн атă-пушмак час-часах юрăхсăра тухать. Аң манăр, çаксене тума сире хулари атă-пушмак мастерскойĕсем пулăшĕç. Вĕсене çитме васкăр!

Пилĕк минутлăх канашлăва каятăп. Тепĕр сехетрен килетĕп.

“Çиçĕм” яслине “Хĕвел” яслинчи хам ачапа улăштаратăп. Кăмăл пуррисем çак адреспа килĕр...

Пурте клуба васкăр! Унта сире хут купăс, магнитофон, радиола, правлени членĕсем, хăнасем кĕтсе тăраççĕ.

Эпĕ шăл тухтăрĕ патне каятăп. Кĕтекенсем кĕтме пултараççĕ, каякансем - кайма. Ыратакан шăлпа çӳрес килмест ман.

Урамра çапкаланса çӳрекен йытăсене кил-тĕрĕшне илсе кĕмесен, вĕсене штрафлатпăр.

Виçĕ çамрăка хваттере яратăп. Суту-илӳре, çĕвĕ мастерскойĕнче тата театрта ĕçлекенсем пулччăр.

Паян пирĕн магазинта коляскăллă планета сутаççĕ. Илме васкăр, уйăх пуçламăшĕнче пулмасть.

Хисеплĕ юлташсем! Ыран хваттерсенче хăнкăла- таракансене хуçисемпе пĕрле им-çамлаççĕ. Пурте килте пулăр!

Пирĕн вăтам шкулта халех шăнкăрав пама вĕреннĕ уборщица кирлĕ.

Алла алă çунă чухне шыв ярса тăма килĕшетĕп.

Шыв çине сенĕкпе çырнине вулама хăнăхтаратăп.

Шывран типĕ тухакансене сăтăрса типĕтетĕп.

Пиçмен пашалу чустине хатĕрлеме вĕрентетĕп.

Мунчара чей ĕçме буфетчица кирлĕ.

## *ÇЫРУСЕНЧЕН, ĂНЛАНТАРНИСЕНЧЕН, КАЛАÇУРАН*

Хамăр хулара эпĕ Совет влаçне виççĕмĕш уйăх шыратăп.

Июнĕн 30-мĕшĕнче эп ĕçе тухрăм пуль тесе шутланипе ĕçе тухман.

Ман телейĕм пурах: эпĕ ялти больницăран мар, район больницинчен сывалса тухрăм.

Пай заведующийĕсен çак питех те кирлĕ ыйту пирки пуç тавра çивĕч шухăпласа, ун çине икĕ куçпа çаврăнса пăхмалла.

Вăтам шкул пĕтернисенчен саккăрăшĕ института, вуннăшĕ техникума вĕренме кĕчĕç. Ыттисем колхозсемпе совхозсене юлса çын пулчĕç.

Фермăра ĕне пăхакансене виçшер килограмм концентрат хушса патăмăр. Малашне сĕт суса илесси ўсмелле.

Çĕр улми хранилищисем Халимов бригадир тĕрĕслеменрен пĕтĕмпе çĕрсе кайнă, вĕсене сыснасем те çимĕç.

Купăста хытах шăннă терĕмĕр. Эппин, выльăх-чĕрлĕхе пама юрăхсăр пулсан колхозниксене валеççе парас.

Колорадо нăррисене им-çам вăхăтра çитерейменнипе кăçал вĕсем çĕр улми аврине ешĕллех çаратса хăварчĕç.

Эпĕ васкамасăр автобус чарăннă вырăна пытăм. Апла пулин те автобуса кăнтăрла тĕлне çеç кĕтсе илтĕм.

Икĕ хутчен ĕç вăхăтĕнче иртĕхме юраманни çинчен хытă асăрхаттарнă ăна.

Александра Александровна фермăна ура ярса пуссанах ĕне пуçĕсем ура çине тăма пуçларĕç.

Ачасен хăвăрт ўсекен организмĕ вĕсен ўт-пўне лайăх пăхса тăма хистет.

Мĕншĕн тесен вăрманта темскер те сиксе тухĕ тесе юнашар выртакан патака яр та ил, вăл вара шăпах çĕлен пулнă.

Валька Гнедков хăй ашшĕн ывăлехчĕ: хăйне кирлĕ мар ĕçсене хутшăнма, çуртра тата кил картинче пулса иртнипе кăсăкланма юрататчĕ.

Юлташсем! Пирĕн ялти темиçе çемье кашни çулах çĕнĕ çурта пурăнма куçать.

Çăмăлах мар лару-тăрура çынсен сĕнĕвĕсемпе критиклесе каланисем пурнăça тарăннăн кĕменнинчен йышăннă решенисем çинчен пĕлтерсе тăманни çинчен нимĕн тĕлĕнмелли те асăрхаймăн.

Пире арăмпа çурмалла уйăрма ыйтатăп. Мана унран ытлашши нимĕн те кирлĕ мар.

Йӳçкас шкулне нимĕç учителĕ вĕрентме кирлĕ. Тĕплĕнрех техничкăран ыйтса пĕлме пулать-мĕн.

Эпĕ кăшт тĕлĕрнипе çумри пăшала илсе кайнине туйман. Эпĕ юрĕ-ха, йытă мĕншĕн туйман çавна, ма вĕрмелле пулман Кампурăн?

Хăшĕ-пĕрисем мана сирĕн патăрта пĕр эрне ĕçлесех урăлтаркăça лекнĕшĕн ятлаççĕ. Ăнлантаратăп: унта эсĕ мĕн чухлĕ ĕçленине ыйтса тăмаççĕ, пуçтараççĕ те каяççĕ.

Çĕрĕпех куç хупман эпĕ. Вăрансан кăна кĕлет алăкĕ уçă пулнине асăрхарăм.

Иван Иванов хуçалăхĕнчен сăмакун аппаратне илсе тухнă. Вăл айăпне йышăнчĕ, ăна çийĕнчех комиссипе ватнă.

Пĕр остановка ытла каякан пассажирсем билетсăр шутланаççĕ. Ун пек çынсен 3 тенкĕ штраф тӳлемелле пулать.

1985 çулта медицина училищине пĕтернине ĕнентерекен диплома тупнă çынна тĕрĕс мар тесе шутлас.

Мухтанмасăр калатăп, эпир улăх-çарана икĕ хут шăвартăмăр, виççĕмĕш хут та шăварасшăнччĕ, анчах пире çумăр çуни чăрмантарчĕ.

"Малалла" фабрикăри ĕçченсем кишĕр кăларнă çĕрте пулса вуникĕ çын кăларнă.

Кĕрхи тулă кондицие ларнă, çавна май акаканĕсем те хăйсене лайăх туяççĕ.

Ĕçрен киле çăкăр илсе таврăнмасан, мана арăм çисех ярать.

Пуйăс тепĕр икĕ минутран тапранса каймалла, Ирина вара çаплах ун майĕнчен çакăнса тăрать.

Эпĕ çут çанталăка сыхлакан общество членĕ пулнă май пирĕн йывăççене качакасем кăшланинчен тĕлĕнетĕп.

Апат çуккине пула выльăх поголовине ўстерсе янине питĕ хытă ырлас.

Хăмла планне сăрапа тултарас.

Ватă вăрлăха çамрăклатас тĕлĕшпе те кунта çине тăрсах тăрăшаççĕ.

Колхозри ĕне заведующийĕ хăйĕн ĕçĕпе паллаштарчĕ.

Ферма заведующийĕ час-часах фермăра пулать.

Дояркăсем япăх ĕçлемеççĕ-ха пирĕн, вĕсене хырчăкпа куллен тасатсах тăраççĕ.

Культиваторсем паян тесен паян хире тухма хатĕр. Сеялкăсене, плугсене, ытти механизаторсене типтерлĕ юсанă.

Чирлисене лайăххрах сиплес тĕллевпе градусниксем çителĕклĕ туянтăмăр. Халĕ пăшăрханма кирлĕ мар, пурин валли те пур.

# АБИТУРИЕНТСЕН ХАЙЛАВĔСЕМ

## I

## ÇУТ ÇАНТАЛĂК НУШИСЕМПЕ КАЙĂК ТУСĔ

(çут çанталăка упрас ыйту)

Вĕççĕр-хĕрсĕр тӳперен ахах-мерчен сапакан ушкăн çăлтăр вăйăран саланчĕ, çут кĕмĕл питлĕ уйăх шуса-шуса пычĕ те ... çухалчĕ. Ыйхăллă таврана кăвак сăн çапрĕ. Тӳлек çил йывăç çулçисемпе ачашшăн вылять. Унта та кунта кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетни илтĕнме пуçларĕ. Уçă саслă автансем пĕрин хыççăн тепри авăтса ячĕç. Ăмăртса, Хусанкай калашле, шарăлтатса авăтаççĕ вĕсем. Çĕнĕ кун пуçланать. Çут çанталăк лăпкă ыйхăран вăранать.

Çут çанталăк ... Мĕнле илемлĕ те ырă вăл пуриншĕн те. Ăна курса çын савăнать, унпа пĕрле чĕрĕлет, вăй-хал пухса ĕçлеме пуçлать.

Çулталăк хушшинче çут çанталăк тăватă хут улшăнать, тăватă тум тăхăнать. Хĕлĕ те, çăвĕ те, çурĕпе кĕрĕ те хăйне май хитре, ырă, пуян, пархатарлă. Çуркунне йывăççем чĕрĕлнипе, кайăксем вĕçсе килсе йăва çавăрнипе паха. Çу илемĕ çимĕççем пулнинче, ӳсен-тăран паркаланнинче, чĕпĕсенчен, çурасенчен патвар та илемлĕ ăру çитĕннинче ĕнтĕ. Çынна тата ытларах хавхалантараканни - кĕр мăнтăрĕ. Лартса-акса тунине, мĕн çитĕнтернине вăл тăкаксăр пухса кĕртме, упраса хăварма тăрăшать. Хĕлле вара шурă мамăкпа витĕннĕ йывăççем лăпкăн тĕлĕрнине сăнаса малашлăх çинчен ĕмĕтленет, шухăшлать.

Çут çанталăк пирĕншĕн епле ырă пулнине манатпăр эпир хăш чухне.

Ăçта-ши чăваш уй-хирĕн ĕмĕрхи тусĕ, юрăçи сарă путене? Хир чăххисем ăçта-ши тата? Çĕр мулкачĕ те, арлан та çук. Кам айăплă-ха çакăншăн? Çын паллах. Константин Иванов каланă пек, çĕрсем çинче, шыв çинче хуçа пулса вăл тăрать. Анчах ытлашши, виçесĕр хуçаланмасть-ши вăл çут çанталăк ырлăхĕпе?

Ĕлĕк-авалтан улăх-çаранра чăваш утă çулнă. Пĕвесем туп-тулли пулнă, вĕсенчи тăрă шывра тем тĕрлĕ пулă ĕрчетнĕ.

Халĕ вара ... унччен утă çулнă вырăнсене выльăх таптать, пĕвисем юшкăнпа тулнă. Тата мĕн чухлĕ тасамарлăх, удобрени, тĕрлĕ хими им-çамĕ, фермăсенчи выльăх каяшĕ çуркуннехи шывпа е çумăрпа çырмасене, юхан шывсене лекет.

Хими завочĕсем таврашĕнче типсе ларнă йывăççсем çулла та хĕллехи пек шап-шурă курăнса лараççĕ. Унта, паллах, кайăксемпе тискер чĕр чунсене кураймастăн. Çулсерен сахалланаççĕ вĕсем.

Тĕлĕнмелле мар-и-ха! Атăл тăрăх вилĕ пулă татти-сыпписĕр юхать (ăна ГЭС патĕнче пуçтарса çынсем курасран çĕрле тонни-тоннипе таçти вырăна турттарнă теççĕ). Çĕмĕрле районĕнчи Мыслец ялĕ тĕлĕнче тўннĕ вагонсенчен наркăмăш шĕвексенчен чи хăрушши - фенол юхса тухнă текен хăрушă хыпар çĕр-шывĕпех сарăлчĕ. Чăн-чăн трагеди пулчĕ вăл чăвашшăн. Нумай çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Чирлисен шучĕ те пĕчĕк мар.

Темиçе çул каялла Красноармейски сали çывăхĕнче газ хăваламалли станци турĕç те - сероводород çăтса минреççĕ кунти çынсем. Çĕнĕ Шупашкарти хими комбиначĕ мĕн чухлĕ сиен кўчĕ-ши тата чăваша? Унта атом ракетиçен топливине те тунă теççĕ.

Çут çанталăк çыншăн мар, çын çут çанталăкшăн пулмалла. Çак чăнлăха мансах пыратпăр-çке эпир.

"Çĕре сахал парса нумай илеймĕн",- тенĕ ватăсем мĕн авалтан. Чăваш хăй ачине мĕн пĕчĕкрен çут çанталăка упрама вĕрентсе ўстернĕ. Эпĕ пĕчĕк чухне асатте çулталăкра икĕ хут йывăç лартма илсе тухатчĕ пире: пĕрре çуркунне, юр кайса пĕтсен, ял урамĕсем, çырма-çатрасем тăрăх шăнкăртатса шыв юхма пуçласан, тепре кĕркунне, йывăççсем сарă тум тăхăнсан.

Кайăк-кĕшĕке, тĕрлĕ чĕр чунсене упрас тĕллевпе тунă заповедниксем сахал мар. Анчах браконьерĕсем те нумай-çке... Юлашки вăхăтра чăваш вăрманĕсенче пăшисем, пурăшсем, хир сыснисем питĕ сахал юлни çинчен калаçма пуçларĕç. Мулкачсен анчах мар, тилĕсен те хисепĕ самаях чакнă иккен.

Çынсем, чарăнăр! Тавралла çаврăнса пăхăр-ха... Мĕн тăватăр эсир, мĕн туса хутăр?

Пуласлăха хăвăр аллăрпа пĕтеретĕр мар-и?

Темиçе çул каялла "Пионер сасси" хаçат шкулта вĕренекен пĕр çамрăкăн сăввине пичетленĕччĕ:

Хёрлĕ пĕсехеллĕ уйăпсем
Пахчана пилеш çиме килеççĕ.

Хĕрлĕ пĕсехеллĕ уйăпсем... Çав сăвва вуланă хыççăн шартлама хĕл кунĕсенче яланах кĕтетĕп йăмăх хĕрлĕ кăкăрлăскерсене. Пирĕн пахчари пилеш çине темшĕн килмеççĕ вĕсем. Сахалланчĕç-шим, пĕтеççĕ-шим...

## ЁМЁРСЕН СЁМЛЁХЁНЧИ ЧĂВАШĂН ЙĂХ-НЕСЁЛ ЁМЁТНЕ ПАЯН МЁНЛЕ КУРАТĂП

Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ.
Çĕн йĕрке килсен
Юхмĕ, юхмĕ тек куççулĕ
Пурнăç хĕсĕкрен.
Çĕнĕ пурнăçăн хĕвелĕ
Пăхĕ çутатса...
Çеçпĕл Мишши.

Кунсем, уйăхсем, çулсем... Ăçта васкаççĕ-ха вĕсем, ăçта çитересшĕн пире?

Никам та çĕр çинче темиçе-темиçе ĕмĕр пурăнма çуралман. Хăналăха килнĕ эпир кунта. Самантлăха. Этемлĕхĕн темиçе миллион çула тăсăлакан историйĕнче уйрăм çын пурнăçĕ вăл йăлтăрса илнĕ çăлтăр çути пек кăна. Иртнĕ ĕмĕрте эпир пулман, çитессинче те пирĕн сасă илтĕнес çук. Эпир - ĕмĕрсен сыпăнăвĕ (çыхăнăвĕ теме те май пур!). Иртнĕ ĕмĕрсенче тĕнчере мĕн пулнине, тăван халăхăн ун чухнехи ĕçне-хĕлне тĕпчевçĕсем çырса кăтартнинчен çеç пĕлетпĕр.

Сĕм авалах чăмăртаннă чăваш йăх-несĕлĕ. Атăл хĕррине куçса килнĕ хыççăн вĕсем ăрăва тăсассишĕн, аталантарассишĕн, халăха пĕтĕçтерессишĕн ытларах тăрăшма пуçланине палăртаççĕ ăсчахсем.

Кашни халăхăн хăйĕн культури, уйрăм сăн-сăпат, юрă-такмак. Атăл тăрăхĕнчи халăхсем чăваш юрă ăсти пулни çинчен калани паллă. Çĕр çул ĕлĕкрех чаплă вырăс писателĕ Гарин-Михайловский "Чăваш ялĕнче" ятлă кĕнекинче çапла çырса

хăварнă: "Пысăк çавракa карта ерипен юхса шăвать: хĕрсем пичĕсене карта варри еннерех çавăрса пĕр-пĕрин хыççăн утаççĕ. Пĕр утăмне пысăккăн ярса пусаççĕ те чарăнса тăрса ерипен урисене сиктереççĕ...

Мĕн вăл опера, мĕн романс? Вĕсенчен пулать-и çак яланах çамрăк çуркунне ырă шăршине, вĕçсе иртен ĕмĕрсемшĕн ачашшăн хуйхăрнине систересси-туйтарасси? Епле туйтарĕç вĕсем пурне те çĕмĕрекен самантсем витĕр икĕ пин çултан та хăйĕн авалхи сăн-сăпатне ку тарана çитерне халăхăн юррине? Ун пек юрра шухăшласа кăларма пулать-ши вара?"

Тутар-монголсен, вырăссен пусмăрне сахал мар тӳснĕ халăхăн юрри пĕр ĕмĕр çеç мар çут тĕнчене тухаймасăр пурăннă. Мухтавлă поэтăмăр Константин Иванов халăхăн ĕлĕкхи пурнăçне чуна ыраттаракан сăмахсемпе сăнланă:

... Юррисене юрлаççĕ,
Куççулĕпе кулаççĕ.
Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савăнăç-и, куççуль-и
Сан куçунта куç тулли?

Хурлăха парăнас мар тесе юрланă пуль чăваш.

Чăваш халăхĕн историне тĕпĕ-йĕрĕпех тĕпчемен-ха. Араб çынни Ахмед ибн Фадлан çырса кăтартнă тăрăх, пирĕн ят пин çул каяллах палăрнă. Унран нумай маларах та çак ятпах çӳренĕ пулас эпир.

Истори авăрĕнче кашни йăх, халăх хăйне май çаврăнать. Пĕрисем хăвăрт аталанса ыттисенчен чылай мала каяççĕ, хевтине пĕтерсе сӳнеççĕ, теприсем вара урăх халăхпа хутăшса чĕлхине те, культурине те улăштараççĕ. Халăхăмăр пĕчĕккĕн, васкамасăр малалла каять, çепĕç чĕлхине, тĕнчене тĕлĕнтернĕ тĕррине упрать.

"Чăваш ятне ан çĕрт!"- тенĕ халăхра. Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕ пысăк. Кашнинех хăйĕн халăхне тивĕçлĕ пулма тăрăшмалла. Унăн ăс пурлăхне хушма, малалла яма хатĕр пулмалла.

Пирĕн мăн асаттесем чăвашран та ăслă çынсем, вăйлă çынсем, пултаруллă çынсем тухасса хытă шаннă. Халăх шанăçне унăн мухтавлă ывăлĕсем тÿрре кăларчĕç.

Тăван халăха çутта кăларнă Иван Яковлевич Яковлева аса илер. Пирĕн мухтавлă поэтсемпе прозаиксене хисеплесе тухмасăр та май çук: Петĕр Хусанкай, Ухсай Яккăвĕ, Стихван Шавли, Александр Алка, Илпек Микулайĕ, Куçма Турхан, Алексей Талвир тата ыттисем. Классиксем каламасăрах паллă.

Мĕн чухлĕ ученăй тата чăвашăн! Техника, филологи, медицина, истори, математика, пеагогика наукисен докторĕсен ячĕсене çырса тухма хут самаях кирлĕ. И.Я.Яковлевăн сăваплă ĕçне малалла тăсакан Кураков академик чăваша аслă пĕлÿ илес тĕлĕшпе малта тăракан Раççейри ытти халăхсемпе юнашар тăратасшăн хăçантанпа тăрăшать ĕнтĕ.

Тĕнчипе чапа тухнă Бичурин, Надежда Павлова ташăçă, Анатолий Любимов гобоист чăваш ятне çÿле çĕклеççĕ. Андриян Николаев космонавт та, Геннадий Волков педагог та чăваш ятне çĕртмерĕç.

Ĕмĕр сакки... "Сакки чăн та сарлака, анчах ĕмĕрĕ кĕске,"- теççĕ пĕр юрăра. Чăваш халăхĕн ĕмĕр сакки сарлака, ĕмĕрĕ вара кĕске теме пулать-ши? Çук, пулмасть кун пек калама. Унăн ĕмĕрĕ вăрăм, ĕмĕчĕсем çутă. Мал ĕмĕтлĕ, çутă шанчăклă халăхăмăр сулмаклăн утать историн тумхахлă çулĕпе. Нихçан та никама та тапăнман чăваш, ыттисене хур тăвасси унăн йăлинче пулман. Унăн, халăхăн, тымарĕ çирĕп, вулли патвар, тураттисем сарлака. Çын çумне çын, ял çумне ял, хула урамĕ çумне тепĕр урам хушса ĕрчет халăхăмăр.

Çапла виç çын - ĕçчен чăваш сухаçă
Чăваш çĕр-шывĕнче тахçан авал
Лартма шутланă пĕчĕк кăна ял.
(хамăн сăвăран).

"ЭПИР ПУЛНĂ, ПУР, ПУЛАТПĂР."

(П.Хусанкай пултарулăхĕ тăрăх).

Манăн шухăшăмпала -

Эпир пулнă, пур, пулатпăр!
П.Хусанкай

Чăваш литературинчи чи çутă çăлтăрсенчен пĕри вăл - Петĕр Хусанкай. Ăна, Чăваш халăх поэтне, К.В.Иванов тата Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премисен лауреатне, пĕлмен, унăн произведенийĕсене вуламан çын та çук пулĕ. Вăл хăй умĕнхи тата хăй вăхăтĕнчи чăваш поэзийĕн мĕн пур çитĕнĕвĕсене ытамласа çĕнĕ пахалăхлă иксĕлми пуянлăх хăварчĕ.

Вăхăт иртнĕçемĕн унăн произведенийĕсене тĕксĕм тĕс çапмарĕ. Кашни çын тăван халăх çинчен çырнă сăввисемпе поэмисене юратса вулать. Петĕр Хусанкайăн хаклă йышши чул пек йăлтăртатса тăракан тĕрлĕ енлĕ поэзийĕ тăван халăхăн пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл чăваш халăхĕн историлле кун-çулне çутатса парать. Куç умĕнчех унăн "Çӳлелле" поэми, "Аптраман тавраш" сăвăлла романĕ, "Эпир пулнă, пур, пулатпăр!" сăвви. Хăйĕн сăввисемпе поэт тăван халăха çĕклесшĕн. Тупа тунăн илтĕнеççĕ поэтăн чунран тухакан сăмахĕсем: "Çĕр çинче юратнă эп пĕр халăх, уншăн çеç пурăнассăм ман килет". Çак шухăша яр-уççăн çутатса парать пире "Эпир пулнă, пур, пулатпăр!" сăвă. Хусанкай пултарулхĕнче чăваш халăхĕн историри пурнăçĕ çинчен шухăшласа çырни пысăк вырăн йышăнать. Чăваш халăхĕ мĕн авалтанах тымар янă, çирĕпленсе, тĕрекленсе пынă. Темĕнле йывăр пулсан та асапсене тӳссе ирттернĕ вăл, пĕтмен.

Каснă, вăтăрнă пире,
Кăкласа хăртман та мар-тăр,
Вăрлăх юлнă пурпĕрех:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Чăнах та, мĕнле кăна йывăрлăхсем чăтса ирттермен пуль чăваш, çапах та парăнман, малаллах талпăннă. Çав-çавах чăваш халăхĕ йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла аталанса пырасса çирĕп шаннă поэт. Вăл чăваш халăхне ытти халăхсемпе тан, «ăс-пуçран та катăк мар», «чун хавалĕпе те паттăр, «чĕрепе те шĕл-кăвар» курать. Юрри-сăввине, ташши-кĕввине, пин-пин тĕррине, çепĕç чĕлхине упраса хăварнăшăн савăнать. Чăвашăн малашлăхĕ пысăк пуласса шанать поэт:

Пирĕн юрă, пирĕн тĕрĕ,
Пирĕн тӳсĕмлĕ сăмах
Упранса вăл ҫитсе кĕрĕ
Коммунизм таранах.
Чун ҫакна шанми пулсан -
Маншăн шăтăк та ан алтăр,
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Кирек хăш вăхăтра та, темĕнле йывăр пулсан та чăваш халăхĕ пĕтмен, вăл пулнă, пур, пулать те!

Чăваш халăхĕ ытти халăхсемпе тан пулни, тĕнче уҫлăхне алла илни ҫинчен каласа парать пире «Ҫӳлелле» публицистикăлла-лирикăлла поэма. Поэмăри лирикăлла герой - ҫăмăл мар пурнăҫпа пурăннă, анчах ҫутă ĕмĕтне ҫухатман этем - тĕнчери халăхсем ĕмĕртенпе кĕтнĕ ĕмĕт пурнăҫланнишĕн савăнать. Тĕнче уҫлăхне парăнтарни этемлĕхшĕн пысăк вырăнта пулнине ăнланать герой. Чăваш ачи, Андриян Николаев, «ҫĕр туртăмĕнчен» тухса кайнишĕн пĕтĕм чун-чĕререн хĕпĕртет поэт:

Сехетсерен ҫĕнелекен ҫĕр
Сире чĕнет малтан мала.
Пур йывăрлăхсене те эпĕр
Ҫĕнтерĕпĕр Андриянла.

Чăваш халăхĕн малашлăхĕ ҫутă, пуласлăхĕ ҫирĕп. Тĕнче уҫлăхне малалла тĕпчес ĕҫре чăвашăн та тӳпи пысăк. Йывăрлăхсене ҫĕнтерсе ҫирĕп утăмсемпе ҫӳлелле талпăнать чăваш.

Тăван халăхăн пурнăҫĕпе патриотизмла ĕҫ-хĕлне сăнласа парать пире «Аптраман тавраш» сăвăлла роман. Романра халăхăн вăрҫă умĕнхи хаваслă пурнăҫне, вăрҫă хыҫҫăнхи лару-тăруне ҫутатса панă. Аптраман йăхĕнче пурте паттăр, харсăр, чăн чăваш ҫыннисем. Чăваш халăхĕн ăс-тăнĕпе кăмăлĕ, тĕнче курăмĕ улшăнни, пултарулăхĕ пысăкки, кăмăлĕ таси Тăван ҫĕр-шыв чысĕшĕн пынă хаяр вăрҫăра та хăйсен паттăрлăхĕ-хастарлăхĕпе ытти халăхсенчен кая юлман, «чăваш ятне ҫĕртмен». Халăхăн «аптраманлăхне», ĕҫри хастарлăхне, ҫапăҫури харсăрлăхне, кăмăлĕн пиҫĕлĕхне куратпăр эпир геройсенче. «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» - мĕн тери тарăн шухăшлă сăмахсем каланă Хусанкай. Ҫак шухăш унăн произведенийĕсенче витĕмлĕ палăрать. Темĕнле

пулсан та чăваш халăхĕ нихăçан та аптраман, вăл яланах паттăр, хăюллă пулнă, йывăрлăхсенчен хăраман:

Шăрăх, сивĕ е йĕпе -
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

"Хусанкай кирек хăçан та Хусанкай",-тенĕччĕ пĕр тишкерӳ статйинче. Чăнах та, пысăк поэмăсенче те, лирикăллă пĕчĕк сăввисенче те, чăваш кун-çулĕ, культури çинчен чуна çĕклемелле, чĕрене вут хыптармалла çырнă статйисенче те унăн хăйне евĕрлĕ сассине тӳрех уйăрса илетĕн:

Натали кĕпе тĕрлет.
Кам валли
Çав тери хитрелетет
Натали?

Темле кăткăс çаврăмсем, абстрактлă сăнарсем çук ун сăввисемпе поэмисенче. Сăнарлăх вара... Вăл тулса тăкăнса тăрать хăш чухне:

Шурăм пуçран та шурă сурпанне
Тирпейлĕн сырăнать ыр асанне.

Е тата:

Чăваш сăмахĕ - пирĕн чăн çăл куçĕ,
Шăнкăртатать вăл ĕмĕр-ĕмĕре.
Унпа кăна поэт хăйне çул уçĕ,
Унпа кăна вăл чĕрĕ тĕнчере.

Петĕр Хусанкай сăввисене нумай-нумай чĕлхене куçарнă. Вăл хăй те тутар, грузи, пăлхар, ытти халăхсен поэчĕсене чăвашла калаçтарнă. Чăваш литературин элчи теме пулать ăна çавăншăн Вăл вунă çул ытла пăлхар чĕлхине ятарласа вĕреннĕ.

Чăваш халăхĕ юратакан Хусанкай хĕрӳ çулăмлă публицист та пулнă. Çакна унăн статйисене пухса кăларнă «Пин-пин чĕре» кĕнекерен тӳрех туятăн.

Атăл хĕррине, Шупашкар çурчĕсене карлăкпа, эрешпе илемлетнĕ архитектор çинчен çырать-и е чăвашсен паллă композиторĕсемпе паллаштарать-и - Хусанкай яланах тăван халăх культуришĕн, унăн пуласлăхĕшĕн чĕрипе хыпса çунать.

Хамăн хайлава чаплă поэтăмăр «Çамрăк чăваш поэчĕсене калана сăмахри» пĕр сыпăкпа вĕçлесшĕн: "Эсир наци малашлăхĕшĕн сăмах тытмалли çынсем. Халăхсене вĕсен литературипе виçеççĕ тенĕ Виктор Гюго. Чăваша малашне сирĕнпе виçĕç. Сулмаклăрах пусасчĕ сирĕн çав тараса çине!»

## ЫТАРАЙМИ ТĂВАН КĔТЕСĔМ

Ăçтан пуçланать-ха кашни çыншăн Тăван çĕр-шыв? Паллах, хăв çуралнă ялтан, хăв юратнă тăван кĕтесрен. Пысăк-и тăван ял е пĕр урамран çеç тăрать-и, асфальт сарнă сарлака урамлă е хура кĕркунне утса тухмалла мар пылчăклă-и - темĕнле пулсан та вăл чи илемли, чи хакли. Тăван кĕтесрен темĕнле инçетре пулсан та йывăр самантсенче ялах туртать. Темĕнле хытă чунлă пулсан та тăван кĕтесе манса каймa май çук. Мĕнле манăн-ха ешĕл курăклă урамсене, çара уран чупнă хăйăрлă çарансене, пулă тытнă ăшăх юхан шыва; ытарайми пыл шăршиллĕ улăха, пин-пин сасăллă чăтлăх вăрмана, икĕ йывăç хушшине çакнă чуччуна, хĕлле çунашкапа ярăннă тăвайккине? Çук, нихăçан та асран тухас çук вĕсем. Вунă çул иртсен те, çирĕм çул иртсен те, юратнă çынна тĕл пулса мăшăрланса тухса кайсан та.

Тăван тавралăх илемĕпе, шăплăхĕпе хăйĕн патне туртать. Уйрăмах çакна шавлă хула пурнăçĕ хыççăн лайăх туйса илетĕн. Хулан кĕмсĕркке, шавлă урамĕсенчен ял çумĕнчи вăрман сукмакĕ çине килсе лекетĕн те тарăннăн сывласа яратăн. Хула пурнăçĕнче шухăшласа ывăннă пуç лĕпсĕр каять. Шăплăх, шăплăх... ăшра та, вăрманта та. Туратран турата чалт та чалт сикекен пакша та, йывăç çинчи ула таккан тăк-тăк сасси те, йывăçсен шĕпĕлтетнĕ сасси те - пурте чуна канлĕх кӳреççĕ. Хула кăна мар, уçă сывлăшлă чăтлăх вăрман та пурришĕн савăнатăн вара.

Юратнă тăван тăрăхăм! Ытарайми тăван ялăм! Çак сăмахсем яланах асра, кунсерен хăват параççĕ. Пирĕн ял хăйĕн илемĕпе те, пысăкăшĕпе те ытти ялсенчен уйрăлса тăмасть. Анчах маншăн унăн илемĕ яланах çĕнĕ. Унăн ват йăмраллă ешĕл урамĕсем хăйсен сăнне çулталăкра темиçе хут та улăштараççĕ. Ял çумĕнче тĕмескеллĕ-тайлăклă, авăнчăк-пăрăнчăк юрттипе шал-шал туса

юхать ытарайми Чулкаç шывĕ. Унăн çыранĕ хĕрринче вĕтĕ чул ывăçăн-ывăçăн ывăçласа пăрахнă пек сапаланса выртать. Унăн ăшăх шывĕнче йăпăлкка пулă уланкă пур. Питĕ йăпăрккаскер. Пĕчĕк чух алăпа шыв тĕпне хыпашла-хыпашла тытаттăмăр, хамăр лачкам пулаттăмăр. Çыранĕсем вара Чулкаçăн çеремлĕ, çумăр хыççăн çерем кăмписем кача пӳрни тăршшĕ пĕчĕк-пĕчĕк салтаксем пек шăкăрин ларса тухаççĕ. Пăхсан шĕшкĕ măйăрĕ пысăкăш кăна хăй, çапах тĕлĕнтермĕш япала, улăх-çаран, çеремлĕх кучченеçĕ. Тăван тавралăхăн сахал кăмпи те савăнăç кӳрет. Эпĕ час-часах асаннепе кăмпара çӳреттĕм. Пĕчĕк урасем часах ывăнатчĕç те, канма ларattăмăр.

Ялтан инçех мар чăрăшлăх. Çулталăк тăршшĕпех вăл хăйĕн симĕс илемĕпе савăнтарать. Йăрăс, çӳллĕ чăрăшсен чаплă тумне тивĕçлипе хĕлле çеç хаклатпăр. Чăнах та, епле шеп курăнса лараççĕ вĕсем шап-шурă юр çивитти айĕнче. Каласа та çитерес çук тавралăхăн тĕлĕнмелле илемĕ çинчен. Унсăр пуçне, тавралăх çулталăкра темиçе тĕрлĕ те улшăнать. Çулталăкăн кашни вăхăчĕ çĕнĕ илемлĕх, çĕнĕ сĕм парать.

Эпĕ уйрăмах тавралăха çу пуçламăшĕнче, июнь уйăхĕнче кăмăллатăп. Хуларан килнĕ чух, автобусран ансассăн, тавралăхпа киленсе пĕччен утма юрататăп. Ытармалла мар чечек, илемлĕ те паха чĕлтĕр-чĕлтĕр июнь хĕвелĕ. Тӳпе тĕлĕнмелле кăвак та çутă. Хĕвел хăйĕн ăшшине пĕртте хĕрхенмест, тырă пуссисем çине ăрша сапать. Пĕтĕм тавралăх ешĕл симĕс, куçа кантаракан çивиттипе витĕннĕ. Çăра курăк хушшипе авкаланса выртакан ансăр сукмак та, çыраналла анакан картлашкан картлă-картлă карлăкĕсем те, чĕвĕл-чĕвĕл кайăкĕ те - йăлт чуна уçăлтарса ячăççĕ. Çуллахи çанталăкăн çак пĕчĕк кĕтесĕ канăçпа пылакланнă пек. Кунашкал кунсенче савăнас килет. Ăшăмра темле кĕвĕ янăрать. Йĕри-тавра пĕтĕм чĕрĕ тĕнче çунат çапнă вăхăт. Утатăп та хир сывлăшĕпе киленетĕп. Тӳпере тăрисем ывăнма пĕлмесĕр юрлаççĕ, вĕлтлетсе вĕçсе çӳреççĕ.

Акă сукмак чăрăшлăха авăнса кĕрсе каять. Чăрăшлăх сывлăшĕ хир сывлăшĕнчен уйрăмрах. Хир сывлăшĕ тăри юрри пек таса пулсан, чăрăшлăх сывлăшĕ çăра та шухăшлă.

Хĕлле вара тавралăх пачах урăхла. Пурте - шĕмпĕл-шĕмпĕл кӳлĕ те, ешĕл чăрăшлăх та, Чулкаç шывĕ те - тарăн ыйха путаççĕ.

Пур çĕрте те куç алчăраса каймалла, кĕмĕл çутăпа вылаcа, юр выртать. Çăмламас шурă юр пĕрчисем сывлăшра вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăнса çĕр çине ӳкеççĕ.

Тăвайккисем юрпа витĕннĕ-витĕнмен çунашкасем туртса чупаттăмăр. Каçченех янратчĕ ача-пăча сасси таврара. Киле пăрланса ларнă кĕпе аркипе, йĕп-йĕпе алсишсемпе, хĕрлĕ сăмсасемпе таврăнаттăмăр. Лекетчĕ те хăш-пĕр чух аннесенчен...

Çапла, çулталăкăн кашни вăхăчĕ тавралăха хăйне майлă капăрлатать. Çак илемпе пирĕн киленме пĕлмелле, ăна упрамалла. Эпир вара хăш чух шутламасăр, ăнланмасăр çак çут çанталăка сăтăр тăватпăр, хуçатпăр, вататпăр, ним вырăнне те хумастпăр. Çавăн пек хытă чунлă пулас марччĕ, тавралăха упрама тăрăшасчĕ.

## ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИНЧИ ЭТЕМ ТИВĔÇЛĔХĔШĔН КĔРЕШЕКЕН ЧĂВАШ ХĔРĔСЕМ

**(К.Ивановăн «Нарспи», П.Осиповăн «Айтар», Н.Илпекĕн «Хура çăкăр» произведенийĕсем тăрăх).**

Тĕрлĕ хĕр пур çут тĕнчере: хитри тата сăнĕпе чиперех марри, ĕçченни тата кахалли, сăпайлă та çепĕççи тата мăн кăмăллă та чурăсси, хăйне тыткалама пĕлмен чараксăрри тата сапăрри... Анчах ырă хĕрсем нумайрах пулĕ. Вĕсем хушшинче ĕлĕкхи вăхăтра çĕр çывăрмасăр уялла утнă, улахсенче ахаль лармасăр тĕрленĕ, арланă, чăлха-нуски çыхнă чăваш хĕрĕсем те çителĕклех. Чун савнийĕ, пулас упăшки валли кĕпе-тумтир çĕлеме хитре пир тĕртнĕ чăваш пики, ăна шурăм пуç шуралса килнĕ чух шур юр çине сарса шуратнă, çурхи шывпа çуса çемçетнĕ, хура тăпра е ешĕл вăрман, сенкер тӳпе е мăкăнь тĕсĕпе пĕветнĕ. Тĕнчене тĕлĕнтернĕ чăваш тĕрри, сурпанĕ, улача кĕпи, кĕмĕл тенкĕллĕ хушпăвĕпе тухйи - çаксем пурте пирĕн хĕрсен алли витĕр тухнă-çке!

Пур енчен те пултаруллă чăваш хĕрĕсен сăнарĕсене К.Ивановăн «Нарспи», П.Осиповăн «Айтар», Н.Илпекĕн «Хура çăкăр» произведенийĕсенче куратпăр. Акă мĕнле вăл Нарспи:

Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,

Икĕ хура шăрçа пек.

Пуян килте çуралнă пулсан та ырă чунлă, çепĕç кăмăллă ӳснĕ хĕрĕн юрри-кĕввине автор кайăк юррипе танлаштарать, чипер сăн-питне ешĕл курăк хушшинчи сар чечек пек кăтартать.

Юратнă Сетнерпе пĕрле пулма ирĕк памасăр хĕрĕн ĕмĕтне ашшĕ-амăшĕ ним шелсĕр таптать. Силпи ялĕн чи хитре пикине акă кама качча параççĕ:

Лаптак сăмса, хĕсĕк куç,
Сарă çӳçпе сар сухал,
Лаши вĕçсе пырупа
Пичĕ-куçĕ пит усал.
Хура сăхман, сар çĕлĕк,
Çамки çинче тенкĕпе.
Шурă чăлха-çăпата
Пит килĕшет кĕрĕве.

Юратман çын мăшăрĕ пуласси, ăна чăтса, юраса пурăнасси никамшăн та çăмăл пулас çук. Чи йывăр ĕçрен те, чи пысăк нушаран та асаплăрах вăл хăвна хĕнекен, тертлентерекен çынпа пĕр сĕтел хушшинче ларса апат çиесси, пĕрле выртса тăрасси. Кашни кунах Нарспи пуçĕ çинче саламат явăнать:

Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Чунне кăлар унăнне!
Асаплантар, Тăхтаман,
Хурсам йытă вырăнне!
Хĕне, хĕне, Тăхтаман:
Санран çамрăк ан култăр!
Асаплантар, Тăхтаман:
Нарспи часрах ватăлтăр!

Сăмах май каласан, çак йĕркесенче илемлĕх мелĕсем нумай (саламат сывлăша çурнă сасă: х-х-х-х; темиçе хут калани; риторикăлла чĕнӳ т.ыт.те). Çамрăк арăмне эхлетсе çапакан тискер Тăхтаманăн садизмĕ, автор Тăхтаманран йĕрĕнсе тăрăхлани, Нарспин тавăру туйăмĕ амаланса каясси сисĕнсе-курăнса тăрать ку çаврăмра.

Нарспин çын тивĕçлĕхне таптарĕç... Унăн чунне тискерле çурчĕç... Мĕн тумалли юлать-ха кун хыççăн?! Тавăру çеç пулма пултарать, тавăру çеç! Çапла тăвать те Нарспи. Анчах хăй те пĕтет.

Пурте телей ҫӑлтӑрӗ айӗнче ҫуралмаҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗрисен тӳпинчи ҫӑлтӑр ытла тӗксӗм-ҫке. Ҫакнашкал шӑпаллӑ хӗр сӑнарӗ - Илпек Микулайӗн «Хура ҫӑкӑр» романӗнчи Селиме. Чухӑн ҫын хӗрӗ, Тухтара юрататъ. Ку произведенире те икӗ савнӑ чун пӗрлешме пултараймаҫҫӗ. Вӗсен хушшинче хӗрне пуян ҫынна качча парса ҫитмен пурнӑҫне саплаштарасшӑн вӗтеленсе ҫӳрекен Шерккей тӑратъ. Селиме тӗрӗсмарлӑха хирӗҫ, этем тивӗҫлӗхӗшӗн хӑйне май кӗрешет. Ҫӗнтереймест. Унӑн та пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр татӑлатъ. Вӑхӑчӗ ҫапла пулнӑ пулӗ... Пӗччен кӗрешсе никама нимӗн ӗнентерме ҫук, ҫӗнтерме пӳрмен самана... Ишсе ишме ҫук пурнӑҫ тытӑмӗ... Ахальтен мар «Нарспи» поэмӑри Сетнер ҫапла калатъ: «Тӑшмана пӗтерсен те унран усал тӗнче пур».

«Айтар» драма вилӗмсӗр «Нарспи» витӗмӗпе ҫуралнӑ. Авторӗ хӑй каланӑ тӑрӑх, вӑл малтан «Пирӗн пурнӑҫ хӑтлӑхра» ятлӑ пулнӑ. Кайран ӑна Петр Осипов чылай юсанӑ, вӑйлатнӑ. Константин Иванова халалланӑран кунти герой ячӗсем те пӗр пекрех янӑраҫҫӗ: Нарспи-Пинерпи, Сетнер-Сентиер. Шӑпине кура ҫак сӑнарсем апшӑшӗпе йӑмӑкӗ, пиччӗшӗпе шӑллӗ пек туйӑнаҫҫӗ.

Пинерпи - «Айтар» драмӑри пусмӑр тӗнчин йывӑрлӑхне, тертне пуринчен ытла тӳсекен сӑнар. Вӑл хӑй телейӗшӗн нумай асапланатъ, кӗрешет. Унӑн кӑмӑлӗ ҫирӗп. «Айтар, тӗрӗссипе калатӑп,- тет вӑл, - сана эпӗ пурпӗрех юратас ҫук, ҫавӑнпа вӗлерес пулсан ҫакӑнтах вӗлер, аслӑ Киремете санран парне пулам, е Сентиерпе пӗрле пулмалла ту». Хӗр Айтара ватӑ пулнӑшӑн, ӗмӗтне татнӑшӑн, хаяр кӑмӑлӗшӗн кӑна мар, ял-йышран мӑшкӑлланӑшӑн, таврари халӑха пусмӑрланӑшӑн, ӑна хурах пусса пурӑннӑшӑн кураймастъ.

Каҫхи тӳпере ҫӑлтӑрсем нумай. Вӗсенчен виҫҫӗшӗ, тем тесен те, Нарспи, Селиме тата Пинерпи. Ырӑ сӑнӗсемпе ҫуттӑн ялкӑшса кашни чӑваш хӗрне ҫапла ӑс параҫҫӗ: «Хӑвӑн телейӳшӗн, пурнӑҫри вырӑнушӑн, тивӗҫлӗхӳшӗн кӗрешмеллине ан манӑр. Ырӑпа ырӑ, усалпа усал пулӑр. Юрату ҫепӗҫ, ачаш туйӑм ҫеҫ мар, вӑл тата кӗрешӳ те.»

Алексей Талвирӑн «Никӗс» роман-эпопейинче те Нарспи йӑмӑкӗ пур. Романри тӗп геройсенчен пӗри чӑваш пики Харьяс. Турӑ ҫырнинчен иртме ҫук тесе вӑл, Нарспи пекех, иртӗхсе пурӑнакан Пухвир Явушкинӑн пусмӑрӗнче пулатчӗ пулӗ. Анчах

Харьяс Кируш пулăшнипе юратман çыннинчен хăтăлма пултарать, çĕнĕ пурнăç çулĕ çине тăрать.

Федор Павловăн «Ялта» драминчи Елюкăн пурнăçĕ синкерлĕрех. Çтаппанпа пĕрлешме тăнă чухне, туй вăхăтĕнче, вăрçăра вилнĕ тесе шутланă, анчах унтан чĕрĕ таврăннă юратнă упăшкиех персе пăрахать ăна.

Хĕрарăм шăпи тесен, темшĕн, сочинени теминче кăтартнă виçĕ хĕр шăпи мар, пилĕк чăваш пикин кун-çулĕ аса килет. Çав сăнарсене, ман шутпа, пĕрле, юнашар тăратса пăхса тухмалла.

## КАШНИ СĂМАХĔ ĔНЧĔ ТЕ АХАХ

(Чăваш халăх юррисен сăнарлăхĕ, пĕлтерĕшĕ, илемлĕхĕ)

Чăваш туй юррипе мăшăрланать, кил-çурт çавăрсан кĕрекене ларса юрлать, ачи çуралсан юрласа сăпка сиктерет. Ватăлса вилсен те юпа юррипе юлашки çула ăсатаççĕ ăна:

Шурăмпуçсем килет шуралса,  
Шурă чаршав карса чарас çук.  
Пирĕн тăван каять уйрăлса,  
Ылтăн-кĕмĕл парса чарас çук..

Çĕнĕрен çĕнĕ сăвă-юрă хывать чăваш халăхĕ. Ăçта-ши çав юрăсен пуçламăшĕ? Хăçан çуралнă-ши юрă? Чăваш халăх сăмахлăхĕн ылтăн арчинче юрăсем хутлам-хутламăн, сийĕн-сийĕн выртаççĕ: йăла-йĕрке юррисем, ĕç юррисем, кулленхи юрăсем.

Юрă - халăх чунĕн уççи, чĕре таппийĕ, кăмăл екки, сасă йăпанмăшĕ, пурнăç тĕкĕрĕ. Пирĕн мăн асаттесем Аттила патша вăхăтĕнчех (5-мĕш ĕмĕрте!) паттăрлăх юррисем шăрантарнă.

Тутар-монгол ханĕсен пусмăрĕ те, Хусан ханĕсен тискерлĕхĕ те юрлама чарайман. Хурлансан та, кулянсан та, пăшăрхансан та юрă ĕнернĕ пирĕн хитре сурпанлă мăн асаннесем.

И.И.Одюков фольклорист чăвашсен ĕç юррисем ытти халăхсенниничен нумайрах тесе çирĕплетет. Шухăша ямасть-и çакă? Çав юрăсенче çĕр ĕçĕ туса пурăнни, кил-çурт çавăрни, пир тĕртни, кĕпер сăвайĕ çапни сăнланнă:

Ана пуçĕ анатра,  
Така пуçĕ хуранта.

Сăмсипе сывлакан,
Урипе утакан,
Пурте вырăр васкаса,
Киле кайăпăр юрласа.
Вырăр, вырăр, ачасем.
(ниме юрри).

Акă тепĕр юрă:

Ыйхă çинчен шутласан
Куç хупăнать, куç курмасть.
Ыйхă çинчен шутлас мар,
Курăс чĕрме манас мар.
(чăпта çапакансен юрри).

Йăла-йĕрке юррисенчен нумайăшĕ çулталăкра пĕр вăхăта килекен йăласемпе çыхăннă. Вĕсен шутне хĕр сăри, çăварни, сурхури, сĕрен юррисем кĕреççĕ. «Сĕрен» юрăри сăмахсем çапла:

- Хĕвел анать, каç пулать, выляйрасчĕ хĕрпеле.
- Кĕтни харам пултăрах, кĕтни харам пултăрах
- Эй, аппа, тус аппа, пире кала-ха.

Кулленхи лирика юррисем те йăлапа çыхăнаççĕ: ĕçкĕ-çикĕне тĕрлĕ уявсенче иртерессĕ, улахсем хĕлле, çамрăксен уявĕсем çуркуннепе çу пуçламăшĕнче пулаççĕ.

Пĕр хăна юрринче çакнашкал йĕркесем пур:

Юрла кăна, юрла, ай, теетĕр,
Сире епле юрăсем пит кирлĕ?
Сакăр вунă сакăр юррăм пур,
Пĕр сак çине сарса суйлатăп.

Кулленхи юрăсенче йăла пĕлтерĕшĕ çеç мар, пурнăç çинчен философла шухăшлани, ăна историлле хаклани те палăрать.

Пĕрремĕш хут чăваш халăх юррисене Шупашкара килнĕ Д.П.Ознобишин Федя ятлă çамрăкран çырса илнĕ. Каярахпа чăваш ялĕсенче Александра Фукс юрăсем пухса çÿрет. Чăвашăн лайăх юрăсем пуррине, вĕсен илемлĕх мелĕсем пуян иккенне каярахпа В.Сбоев этнограф палăртать. Унтан сăмахлăхпа музыкăна пухас ĕçе Спиридон Михайлов, Федор Павлов, Иван Яковлев хутшăнаççĕ.

Чăваш юррин паллисене Н.Ашмарин, В.Магницкий, А.Веселовский тĕпченĕ.

Халăх юррисем шухăшĕпе анчах мар, илемлĕх мелĕсемпе, сăнарлăхĕпе те пуян. Вĕсенче сасă янравлăхĕ те (аллитераци, ассонанс) пур, анафора та (юнашар йĕркесем пĕр сăмахсенчен пуçланни), эпифора та (юнашар йĕркесем пĕрешкел вĕçленни), танлаштарупа метафора, антитезăпа гипербола, чĕрĕлетсе кăтартни, темиçе çут калани т.ыт.те пур.

Анафорăпа эпифора тата повтор харăсах пулни:

Ешĕл йăмра çулçи, ай, лăс кăна,
Ешĕл йăмра çулçи лăс кăна,
Юрлар-ха, тăвансем, ай, лăп кăна,
Юрлар-ха, тăвансем, ай, лăп кăна.

Юнашар йĕркисем пĕр сăмахран пуçланакан юрра илсе кăтартар:

Хура вăрманта хумханмарăн-и,
Хура кунсенче хурланмарăн-и?
Сăпкара чухне хĕпĕртерĕн-и,
Çитĕнсе çитсен кулянмарăн-и?

Танлаштару тĕслĕхĕ:

Хĕвел пек ăшă, уйăх пек уçă
Атте-анне ырлăхне тав тăватпăр.
Тинĕс пек тăрă, уй-хир пек тулăх
Атте-анне ырлăхне тав тăватпăр.

Ансăр тата анлă, тӳрĕ тата хирĕçле танлаштарусем тĕл пулаççĕ юрăсенче. Вĕсем ытларах “пек”, “евĕр” хыççăмахсемпе çыхăнаççĕ (хамăр ялăн арăмĕсем шур купăста пуçĕ пек чăмăртанса çӳреççĕ). Хирĕçле танлаштарăва çак сăмахсемпе кăтартма меллĕ:

Удельнийĕн кантурне
Хĕрлĕ сăрпа сăрланă.
Хĕрлĕ сăр мар, ай, мĕн мар -
Хура халăх куççулĕ.

Чĕрĕлетсе кăтартни (олицетворени):

Йĕслĕ йĕвенĕсем пуснă ĕнсине.

Сăнарсен хирĕçӳлĕхĕ (антитеза, контраст):

Чĕлхеçĕм калаçать, тутам кулать,
Икĕ куçăн хĕррисем шывланать.

Чăваш халăх юррисен илем-эрешĕ, сăнарлăхĕ çинчен тем чухлĕ калама, çырма пулать. Вĕсен пĕлтерĕшне, шухăшне вĕçĕмсĕр тĕпчесен те тĕпчесе пĕтерес çук.

Ял, хула урамĕсенче, уявсенче, ĕçкĕсенче, шкулсенче, культура çурчĕсенче, пасарта янăрать чăваш юрри. Юрă юрлакан халăх пĕтмест, çĕнтерсе, савăнса пурăнать.

Юрă - юн таппийĕ, ăс-тăн тыткăчи, чун уççи. Хитре юрлакан хĕре, качча юратаççĕ. Юрă нумай пĕлекене хисеплеççĕ, ăмсанаççĕ. Темиçе çĕр юрă астăвакансем те тĕл пулаççĕ халăхра. Республикипех чапа тухнă Г.Ф.Федоров вара хăй пуçĕнче пине яхăн юрă-кĕвĕ упранă - сăвăллине те, сăвăсăррине те.

«Уяв» фольклор ансамблĕ нумай пулмасть Францирен таврăнчĕ. Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕ нумай çĕр-шывсене çитсе курчĕ. Халăх юррисене Венгрирен, Болгарирен килсе тĕпчеççĕ. Чăваш юррине тĕнче тăнлать.

... Ирхи шуçăм çутипе вăранса каятăп. Уçă чӳречерен шап-шурă çурăлнă çĕмĕрт шăрши кĕрет. Те таçтан-таçтан аякран, те манран хамран шалтан-шалтан темле ырă-ырă кĕвĕ сăрхăнса юхать. Ытарайми самант! Асамлă самант! Манăн та кĕвĕ кĕвĕлес килет. Митта Ваçлейĕ калашле,

Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам.  
Пин юррăмран пĕри кăна юлайтăр.  
Ăна тăван савса юрлатăр -  
Вара ман канлĕ пулĕччĕ тăпрам.

## СĂПКА ЮРРИ ЮРЛАТĂРЧЧĔ АННЕ

Чи лайăх, ачаш, çепĕç юрă вăл, ман шутпа, сăпка юрри. Çав юрăран пуçланать пепке чĕлхи. Унтан тĕвĕленет этем ăс-тăнĕ. Пурнăç кĕвĕлĕхне, янравлăхне туясси те унпах çыхăннă-тăр.

Ача амăшĕн чĕрçийĕ çинче çитĕнет. Утьăкка такмакĕпе кĕвĕллĕн сиктереççĕ ăна. Хуп сăпка туса унта хураççĕ. Сăпка пĕкĕчи - вăл куллен сăнакан пĕрремĕш сăн.

Çитĕнет ача, пурнăç сукмакĕ çине тăрать. Каллех ашшĕ-амăшĕ тĕрев парать. Малалла та çаплах.

Анчах... Пур чухне те, пурин те ашшӗ-амӑшӗ яланах хӑйсен тӗпренчӗкӗсемпе пулаймаҫҫӗ. Манӑн та ҫапла килсе тухрӗ.

Пирӗн ҫемьере икӗ ача пулнӑ: эпӗ тата манран кӗҫӗнрехххи. Аттепе анне совхозра ӗҫлетчӗҫ. Кашни кун тенӗ пекех сенӗк е кӗрепле йӑтса уя ӗҫлеме каятчӗҫ. Пире вара пӳрте хупса хӑваратчӗҫ. Анчах анне нумай пурӑнаймарӗ, 50 ҫулта вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ. Эпӗ ун чухне тӑххӑртаччӗ, йӑмӑкултӑ ҫултаччӗ. Паянхи кун та куҫ умӗнче аннен илемлӗ сӑнарӗ.

Аннене ялан пурнать пуль теттӗм -
Мӗншӗн манӑн ывӑҫра тӑпра?
Тӑприне куҫҫульпеле йӗпетрӗм,
Ятӑм шӑтӑка хӑра-хӑра.
Ӗненместӗп: аннене пытартӑм.
Ӑшӑм-чунӑм килчӗ те ҫунса -
Макӑрма уя ача пек тартӑм
Таврӑнтӑм калла мӑн ҫын пулса.

Петӗр Яккусен ҫак сӑвва пирӗн ҫинчен ҫырнӑ тейӗн. Анне... Аннеҫӗм... Юратнӑ аннем... Кам кӑна каламасть-ши ҫак сӑваплӑ сӑмахсене хӑйне кун кӑтартнӑ пӗртен-пӗр хаклӑран та хаклӑ ҫынна асӑнса! Анне пур чухне хӳтлӗх те, хӗвел ӑшши те пур. Ҫут ҫанталӑк та илемлӗн ҫуталса тӑрать. Анне хакне, унӑн иксӗлми вӑй-халне, чи пысӑк юратӑвне унран ӗмӗрлӗхех уйрӑлнӑ хыҫҫӑн тин туйса илетпӗр. Ҫавӑнпах-и, тен, ӗмӗртен ваттисем ӑслӑ сӑмахсем, пил сӑмахӗсем хӑварнӑ: "Ватта пӑхакан хур курман", "Атте-анне пилӗ ӗмӗрлӗх"...каласа пӗтерме те ҫук. Уйрӑм кӗнекен пухса кӑларсан аван пулӗччӗ. Юрӑра мӗнле юрланӑ-ха? Сӑвӑнса, ырласа, чи ӑшӑ сӑмахсем каласа. Ман асӑмра пӗчӗк чухне илтнӗ юрӑ упранать:

"Атӑл та хумханчӗ пуль,
Тинӗс те хумханчӗ пуль.
Икӗ хум пӗрле пулса
Карапа путарчӗҫ пуль
Анне те ылханчӗ пуль,
Атте те ылханчӗ пуль.
Ик ылхан пӗрле пулса
Телее ҫухатрӗҫ пуль".

Хурланса юрлатчĕç ку юрра ваттисем. Атте-анне ылханĕ, атте-анне пилĕ... Çак ăнлавсене ăруран ăрăва çитерсе пынă.

Ача çуралсан чи малтан ăна амăш е асламăш кĕпипе чĕркеççĕ, ăшă та çепĕç сăмахсем калаççĕ. Халăх педагогики аннене хисепленине юрă-такмакра та илтетпĕр.

Анне пулмасан чылайăшĕ халăха тивĕçлĕ, пултаруллă çын пулайĕччĕç-ши? Аса илер-ха Петĕр Хусанкай сăввисене. Уйрăмах амăшне халалланине. Вăл ăна тĕнче кăтартнăшăн тав тăвать. Сăвăç пулма та амăш вăй панине палăртать. Поэтсем, писательсем аннене чĕререн юратса çырнă йĕркесене сахал вулană-и эпир? Анне çинчен çырман пĕр поэт та, пĕр писатель те çук пулĕ. Илер-ха Михаил Захаровăн йĕркисене. Мĕнле янăравлă вĕсем:

Хамăр анне пек
Ырри, йăвашши,
Пирĕншĕн пулсан
Тĕнчипе те çук.
Çав тери паха
Сар хĕвел ăшши-
Эпĕ унпала
Савнă аннене
Улăштарас çук.
Хамăр атте пек
Ăслă, кăмăлли
Пирĕншĕн пулсан
Тĕнчипе те çук.
Паччăр мул-тупра
Икĕ куç тулли
Çав пуянлăхпа
Харсăр аттене
Улăштарас çук.

Анне вилнĕ хыççăн эпĕ пурнăç çине урăхла пăхма пуçларăм. Мĕншĕн тесен пĕтĕм хĕрарăм ĕçĕ ман çине тиенсе килчĕ. Аттене питĕ тав тăвас килет. Вăл пире пăрахмарĕ, эпир шкултан килнĕ çĕре яланах тутлă апат-çимĕç пĕçерсе лартатчĕ. Çавăнпа та йăмăкпа иксĕмĕр атте пурришĕн, пире вăл пăрахса, ĕçсе, тепĕр хут авланса ют арăм кĕртменнишĕн мĕн чухлĕ савăнаттăмăр. Йăмăкпа иксĕмĕр те ăна яланах пулăшма тăрăшаттăмăр. Манăн тата çакна

пĕлес килет: мĕншĕн пĕр ҫыннăн кăна нуша курмалла-ха? Пĕрре хуйхă пуҫлансан вара...

Акă ĕнтĕ атте те нумай пурăнаймарĕ, 59 ҫулта вăхăтсăр ҫĕре кĕчĕ. Кама мĕн тунă-ши вăл? Мĕн туса ҫынна кӳрентернĕ-ши?

Ку инкек ака уйăхĕнче пулчĕ. Эпĕ ун чухне 11-мĕш класра вĕренеттĕмччĕ. Пире ҫуркуннехи каникула ярсан эпĕ тăвансем патне Шупашкара хăнана килтĕм. Каҫхине "Санта Барбара" кино пăхатпăр. Телефон шăнкăртатрĕ. Тăвансен аслă ывăлĕ трубкăна илсе калаҫрĕ. Эпĕ мĕн пулнă-ха терĕм. Вăл вара нимĕн те чĕнмерĕ. Анчах эпĕ тархасласа ыйтнине курсан вăл мана: "Дядя Гриша умер,"- терĕ. Эпĕ ларнă ҫĕртен кайса ӳкме тытăнтăм, анчах мана хулран тытрĕҫ. Ҫак хыпара илтсен манăн пурăнас килми пулса кайрĕ. Яланах шутласа ҫӳреттĕмччĕ вара: "Мĕншĕн ҫуратса янă-ха пире ҫĕр ҫине"? Тăлăх турат пуличчен хăрăк турат пулас та кĕрхи ҫилпе вĕҫсе ӳкес, ҫурхи шывпа юхса каяс.

Ҫапла эпир тăлăха тăрса юлтăмăр.

Ҫĕр ҫинче ырă ҫынсем сахал мар. Пире хамăр ялти хĕрарăм хăйĕн патне пурăнма илчĕ. Тавтапуҫах ăна ҫакăншăн. Нихăҫан та манса каяс ҫук, яланах вăл манăн асăмра. Унпа пĕрле яланах телей, сывлăх ҫӳретĕр. Халĕ вăл пире хăйĕн ачисем пек пăхать. Вĕсене мĕн ҫитерет, пире те ҫавнах парать. Нихăҫан та пире уйăрса хăвармасть. Хамăн вăрттăн шухăшсене те ăна кăна калатăп. Манăн пуҫра халĕ яланах ҫак сăвă йĕркисем:

Ĕҫлес пулать, тăван, ĕҫлес пулать
Халăх ҫине ыр ят тухиччен,
Халăх ҫине ыр ят тухсассăн
Ыр ҫынсемпе пĕрле ҫӳрес пулать.
Канас пулать тăван, канас пулать,
Хĕвел тухса куҫа уҫсассăн
Ыр кун ҫути пулса тăрас пулать.
Юрлас пулать, тăван, юрлас пулать
Шăпчăк чĕппи чĕлхе уҫиччен.
Шăпчăк чĕппи чĕлхе уҫсассăн
Ыр кăмăлпа ăна тăнлас пулать.

Пурăнан пурнăҫра темĕн те курма тивет: лайăххи те пулать, япăххи те. Анчах та йывăр вăхăта тӳссе ирттерме вĕренесчĕ. Пирĕн шăпана никам та тумасть, хамăр тăватпăр, эпĕ халĕ темле

йывăр пулсан та чăтса ирттерме тăрăшатăп. Çынна яланах ырă тăвасчĕ. Нихçан та мăн кăмăллăн пуçа каçăртса çӳрес марччĕ. Пур çынсем пекех сăпайлă, маттур, ĕçчен хĕр пулса çынсене савăнтарасчĕ. Манăн тĕп тĕллев те çакă çеç.

Кашни ялтах пур ашшĕсĕр е амăшĕсĕр юлнă ачасем. Йывăр вĕсене, пĕлетĕп. Тăлăх тени сахалрах пултăрччĕ. Ялан янăратăр çĕр çинче анне юрри, сăпка юрри.

## АН ПУЛТĂРЧЧĔ ЫЛХАНЛĂ ВĂРÇĂ НИХĂÇАН

Тумламсем... Вĕри куççуль тумламĕсем... Яштака шурă хурăн патĕнче çап-çамрăк хĕр тăрать. Унăн анис улми пек пит çăмарти тăрăх вĕри те тăварлă куççуль тумламĕсем юха-юха анаççĕ, пичĕ çинче йĕр хăвараççĕ.

Ах, вăрçă... Мĕншĕн пулмалла пулчĕ-ши сан? Кама усă кӳтĕн-ши эсĕ? Мĕн чухлĕ çамрăк пуçĕсене ахаль хумарĕç-ши çак вăрçăра! Вĕсен тĕнче пек пысăк пурнăç çулĕ çине тухмалли вăхăт çывхарса çеç килетчĕ-çке-ха?

Хĕр пуçне ирĕксĕр тенĕ пекех асаилӳсем кĕреççĕ... ...Володьăпа Светлана çуллахи ăшă каç тĕл пулчĕç. Малтанах вĕсем пĕр-пĕринпе калаçма хăяймарĕç. Пĕр-икĕ сăмах хушсан паллашсах кайрĕç. Володя Светланăран пĕр çул аслăрах иккен. Çак ăшă та киленӳллĕ каçран пуçласа вăл Светлана патне кашни каçах килме тытăнчĕ. Вăхăта вĕсем пĕрмаях савăнăçлă ирттерчĕç, пĕр-пĕринпе хирĕçсе кайни пулман.

Вăхăт иртнĕçемĕн иртсе пычĕ. Володьăпа пĕр çулхи каччăсем патне салтака кайма чĕнӳ хучĕ килме тытăнчĕ. Володьăн юлташĕсем пурте тенĕ пекех ăсату каçĕ хыççăн ахах мерченĕ пек ирхи сывлăм симĕс курăк çине ӳкичченех салтака ăсанчĕç. Вĕсене тăванĕсем йĕре-йĕре, пил парса ăсатрĕç. Часах Володьăн та чĕнӳ хучĕ килчĕ. Ун çинчен чи малтанах вăл Светăна каларĕ.

Акă ăсату каçĕ те вĕçне çитсе пырать. Володьăна ăсатма юлташĕсемпе тăванĕсем пурте тенĕ пекех килнĕ. Светлана та пур. Вăл пĕтĕм вăйне пухса йĕмесĕр тăрать. Анчах темле вăйлă пулсан та пит çăмартисем тăрăх куççуль пайăрăн-пайăрăн юхса анать.

Сисмесĕрех сывпуллашу вăхăчĕ çитрĕ. Володя тăванĕсемпе, юлташĕсемпе сывпуллашнă хыççăн Света патне пырса тăчĕ. Хĕрĕн куçĕсем унăн хурлăхан пек хура куçĕсемпе тĕл пулсан вăл пĕр вырăна пăталаса лартнă евĕр хытса тăчĕ. Чĕри хыттăн, siksе тухасла тапма тытăнчĕ. Светланăн кăвак тӳпе пек куçĕсенче чăтмалла мар ырату курсан ăна лăплантарма тытăнчĕ. Хĕр урăх чăтса тăраймарĕ: Володьăн кăкăрĕ çине пуçне хурса ĕсĕклеме тыттăнчĕ. Пулас салтак савнине ăшă сăмахсемпе пăшăлтатса çыру çырассине шантарчĕ. Светлана та Володьăна кĕтме сăмах пачĕ. Çав вăхăтрах вăл халăхра çӳрекен "Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ" текен сăмахсене аса илчĕ.

Светлана тусне салтака ăсатнă хыççăн клуба, ташă касне тухма пăрахрĕ. Кашни кун тенĕ пекех çыру кĕтрĕ.

Çĕр те пĕр шухăш пуçра явăнать

Çĕр те пĕр шухăш чуна канăç памасть.

Пĕрремĕш çыру илсен вара Светлана çиччĕмĕш тӳпенех хăпарса кайрĕ. Унти ăшă сăмахсене вуласан хăйне çĕнĕрен çуралнă пек туйрĕ.

Вăхăт шурĕ, шурĕ... Кунсем пĕрин хыççăн тепри тем пулнă пек васкарĕç.

Икĕ савнă тус пĕр-пĕрин патне çыру çырсах тăчĕç.

Анчах... "Инкек куçа курăнса килмест", - теççĕ çав ваттисем. Светлана Володьăран черетлĕ çыру кĕтетчĕ. Почта килнине курсанах Светлана çыру ещĕкĕ патнелле чупрĕ. Çырăва уçса вулама тытăнасшăнччĕ çеç... Турăçăм! Мĕне пĕлтерет ку? Çырăва ют алăпа çырнă. Хĕр чĕри темĕн лайăх мара сиссе хăвăрттăн-хăвăрттăн тапма пуçларĕ. Володя вилнĕ текен сăмахсем патне çитсен Светăна çут тĕнче хуралса килнĕ пек туйăнчĕ, çĕре тăнсăр пулса тĕшĕрĕлсе анчĕ. Мĕн чул выртнине, кам пӳрте кĕртсе вырттарнине туймарĕ вăл. Тăна кĕрсен çыру çинчен аса илчĕ. Чунĕ кӳтсе килнипе пĕр кана тепĕр хут йĕме тытăнчĕ. Умĕнче амăшĕ ăшталанса çӳрерĕ. Хĕрне çăмăлтарах пултăр тесе лăплантармалли сăмахсем каларĕ. Эх, мăнтарăн амăшĕ! Хăйĕн ачишĕн, хăйĕн тĕпренчĕкĕшĕн мĕн кăна тума хатĕр мар-ши вăл!..

Вăрман хĕрринчи шурă хурăн патĕнче Светлана асаилӳсенчен хăтăлаймасть. Куçне хупсанах Володьăн сăнарĕ тухса тăрать, чĕрине каллех хурлăх пусса илет.

Тӳпере шур уйăх тулчĕ,
Чĕтренсе йĕрет йăмра.
Çул çине ÿкет сар çулçă,
Çухалать таçта, умра.

... Пĕр хĕр шăпине çырса кăтартрăм эпĕ. Чăвашра, Раççейре ун пеккисем мĕн чухлĕ!

Ан пултăр вăрçă! Ан макăрччăр хĕрсем, амăшĕсем.

## ЕЛЮК ТАТА НАРСПИПЕ ПИНЕРПИ - КИВ ПУРНĂÇ ПУСМĂРĂНЧЕ ÇĂЛĂНĂÇ ÇУЛĔ ШЫРАКАНСЕМ

Юрату тĕшшийĕ - ирĕклĕх, вăл
ирĕксĕрленĕ çĕрте типсе ларать,
пăхăнса тăнипе хăранине тата
кӳлешĕве чăтма пултараймасть.
П.Шелли.

Телей...

Пур-ши вăл çĕр çинче?

Мĕн-ши вăл телей? Телей - пурăнмалли кил-çурт, атте-анне, шанчăклă тус-юлташ, юратнă çын пурри. Пĕрисем телее ĕçре кураççĕ, теприсем - çемьере, виççĕмĕшĕсем - пуянлăхра.

Пуянлăхпа телей пĕр тан мар. Çакна Нарспи, Пинерпи, Елюк сăнарĕсене калăплакансем лайăх кăтартса панă. Пуян Тăхтаманпа Нарспи нихçан та телейлĕ пулас çукки произведенире малтанах сисĕнетчĕ. Вĕсем арлă-арăмлă пурăннине сăнлакан йĕркесем çак шухăша ним иккĕленмелле мар çирĕплетсе хураççĕ:

Хирте ака айĕнче
Курăк вăш-вăш йăванать.
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи пуçĕ усăнать.

Çурхи кунпа пĕрле савăнаймасть çамрăк арăм:

Куллен-кунах тĕнчене
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет.
Хуйхă-суйхă кунтан кун
Нарспи чĕрине çиет.

Хăйĕн юратăвĕшĕн, телейĕшĕн кĕрешет Нарспи, Сетнерпе пулас тесе Тăхтамана наркăмăш парать. Анчах пĕр ҫынна вĕлернипе вăл вăхăтри усал тĕнчерен хăтăлаймасть.

Ҫамрăксен вĕри юратăвне сăнлакан тепĕр произведени - П.Осиповăн "Айтар" драми. Кунти чипер хĕр Пинерпин шăпи те Нарспинни евĕрлĕрех. Ăна пуян ҫынна ирĕксĕр качча параҫҫĕ. Унăн пулас упăшки - хăрушă та тискер Айтар, ҫынсене ҫаратса пуйса пурăнаканскер. Сетнерпе Пинерпи кивĕ тĕнче йĕркинчен хăтăласшăн ҫунаҫҫĕ, хăйсен телейĕ патне ăнтăлаҫҫĕ. Ҫук ҫав, вĕсен шăпи те ун чухнехи ытти ҫамрăксенни пекех. Айтар Пинерпие ҫĕҫĕпе вилмеллех амантать.

Типлă хĕр сăнарĕ "Ялта" драмăра та пур. Ҫак произведенин те ĕмĕрĕ ăмсанмалла вăрăм пулчĕ. Виҫĕ произведенири тĕп паллăсенчен пĕри ҫакă: вĕсен геройĕсем вĕри туйăмлă, вăйлă. К.Иванов та, П.Осипов та, Ф.Павлов та, калаҫса татăлнă пекех, пĕр сăмахсемпе усă курнă. Сетнер те, Ванюк та, Сентиер те - "вĕри юнлă". Ахăртнех, ҫакă вăл романтизм паллисенчен пĕри.

"Хăҫан качча илĕн мана?" - тет Елюк савнă Ванюкне пĕрремĕш пайра. Пьеса вĕҫĕнче вара татăклăн ҫапла калать: "Таврăнмастăп!" Ванюк Ҫтаппана персе пăрахмаллаччĕ, Елюк упăшки патне таврăнмаллаччĕ. Ф.Павлов вара драмăна урăхла вĕҫленĕ. Шăпах ҫакă нумай тавлаштарчĕ литература тишкерӳҫисене. Мана та шухăшлаттарать. Эпĕ те ҫакăнта темле психологилле сăлтав шыраса тертленетĕп. Тĕплĕнрех пăхса тухар-ха апла Елюк сăнарне.

"Суд тăватăн пулсан, суд ту - санăн ирĕк. Мĕн тăвас тенине ту", - тет пĕркенчĕк айĕнчи Елюк Ванюка. Хăйĕн айăпне йышăнать вăл, уншăн явап тытмаллине те туять. Ҫтаппан мăшкăллама, вăйпа чысран кăларма хăтланнă хыҫҫăн Елюк хăй айăплă маррине тӳрех калать: "Эп айăплă мар, Ванюк".

Айăплă-им-ха вăл?

Выҫă вилесрен ҫын патĕнче тарҫă пек ĕҫлесе пурăнни, Ванюк вилнĕ текен хыпара илтни хăй ĕҫнех тăваҫҫĕ. Елюк чун-чĕререн хурланса, йĕрсе вăйран сулăнать. Уншăн ҫутă тĕнче те ҫутă мар. Елюк умĕнче вилĕм сăнарĕ тискеррĕн тăрать ("юн юхать... шăлĕсене йĕрнĕ"). Савни таврăнасса кĕтсе тăни ăна мĕскĕн

пурнăçа чăтма вăй-хал парса тăнă пулĕччĕ. Анчах Елюкăн юлашки шанчăкĕ те сӳнчĕ-çке.

Пьесăн чи тавлашуллă, драматизмлă пайĕ - юлашки курăну. Елюк чĕнменнине автор темиçе хутчен те палăртса хăварать кунта. Ванюк килсе кĕрсен вăй хăй сисмесĕрех ун еннелле пĕр утăм тăвать, вăйĕ пĕтнипе халран кайса ӳкме тăрать. Тĕлĕнни, савăнни, нихçан тӳрлетейми йăнăш туса хунине ăнланса илни - пурте çак сценăра. Савнă çынни Çтаппанран кăна мар, унран та тăрăхлама пуçлать. Йĕп пек тăрăнаççĕ ун сăмахĕсем Елюк чĕрине. Ултавлă çыру çинчен нимĕн те пĕлменскер, Ванюк Елюк Çтаппана унăн пуянлăхĕшĕн качча тухать пулĕ тесе шухăшлать, йĕкĕлтесе калаçать: "Чипер, чипер кĕçĕн çын... Мĕн чухлĕ тӳлерĕн ку арăмшăн?"

Ванюкпа çĕнĕрен пĕрле пулас çуккине ăнланса илет Елюк: "Эпĕ сан патна пырсан та телей тупас çук. Суд тăвас тетĕн пулсан, суд ту - санăн ирĕк". Çапла каласа хăйне хăй суд тăвать телейсĕр арăм.

Чĕри çунса кĕлленнĕ, ăсĕ-тăнĕ арпашăннă самантра урăх мĕн калама пултарĕ-ши вăл? Сăмахĕсем те нумайăшĕ тĕлсĕр, вырăнсăр пулĕ çак пăлханнă самантра: "Эпĕ тин сан арăму мар. Акă ... на! Ку сан çумна çыхнă сăнчăр! Мана вăл урăх кирлĕ мар!"

Елюк турă çырни тенинчен иртеймест-ши е çирĕп кăмăлне пула каялла чакма пултараймасть-ши? Мĕншĕн çапла вĕçленчĕ-ха унăн пурнăçĕ? Шухăшлаттарать çакă, калаçтарать, тавлаштарать. Çавăнпах кăсăк та "Ялта" драма.

Виçĕ хĕр сăнарĕ... Пурте чипер те кăмăллă вĕсем. Виçĕ хĕр шăпи... Пурте трагедиллĕ.

Хăй телейĕшĕн çуннă, савнине чунтан кĕтсе пурăннă Елюкăн юлашки хăтланăвĕсене пурте ăнлансах çитерейместĕ пек туйăнать. Çапла пулмалла та.

Кам нимĕнле пăтăрмахсăр, чăрмавсăр юратса свнипе пĕрлешнĕ, çавă çак драмăна ăнлансах çитереймĕ; камăн ĕмĕчĕ çăмăллăн тулнă, тĕллевĕ часах пурнăçланнă, çавă та тӳрех ăнкараймĕ драмăри конфликтсене; кам çăкăрсăр, тертлĕ-нушаллă пурнăçпа пурăнса курман, вăл та тĕшмĕртсех пĕтереймĕ Ф.Павловăн хайлавĕнчи хирĕçӳлĕхсене; кама пурнан пурнăçра никам та мĕскĕнлетмен, ура лартман, такăнтарман, вăл та ăсĕпе,

чунĕпе çавăрса илеймĕ, ăша хываймĕ "Ялта", "Айтар" драмăсен, "Нарспи" поэмăн тĕп шухăшне, унти ĕç-пуçсене, характерсене.

"Анчах темле вăйлă этем те хăй тĕнчине пăхăнать", - тенĕччĕ Константин Иванов. Виçĕ хĕр сăнарĕшĕн те вырăнлă сăмахсем.

## ÇĔР ÇИНЧИ ÇЫННĂН ТĔЛЛЕВĔ - ШĂПАПА ÇУРАÇАССИ-ШИ?

Эп пурнăç пурăнма ансат тесе,
Эп çын шутне кĕме часах тесе
Çын шутне кĕме часах пулмарĕ,
Нушам хыçран пĕр шит юлмарĕ.
П.Хусанкай.

Кашни çын çĕр çине телей курма çуралать. Анчах... Уксаххисем, чăлаххисем, утайманнисем, хĕвел çутине курайманнисем, сăмах хушса сăмах илтейменнисем те пур пирĕн хушăра. Вĕсем шăла çыртса та пулин пуçа каçăртса малашнехи çинчен шухăшлаççĕ. Теприсем вара, сывă, тĕреклĕскерсемех, кăшт йывăрлăх, пысăк мар инкек пулсан та çухалса каяççĕ, пăшăрханма тытăнаççĕ.

"Виçĕ çăлтăр шăкăрт
Тухса ларнă та...
Шăхăрт, шăпчăк, шăхăрт,
Пурнăçа мухта", -

тенĕччĕ йывăр чирне пула ĕмĕрлĕхех кровать çумне пăталаннă вĕри чунлă харсăр поэт Альберт Канаш. Мĕн чухлĕ оптимизм çак йĕркесенче! Пурнăç илемне курма пĕлни, ăна юратни!

Чăваш халăх поэчĕ куççăр Шелепи тĕнчере мĕн пулса иртнине пĕлсе-курса тăнă. Ухсай хăй романĕнче çапла çырать:

Шелепи старик каларăш,
Мĕн-мĕн кăна çук кунта.

Пасарсенче каçăрăларах тăрса сăвă калакан Шелепин кăтра сухалĕ, чее кулли нумай статьясенче курăнать.

"Колчак" поэма, тĕрлĕ калавсен авторĕ Илья Ефимович Тăхти чирлĕ пулнă. Хăрушă ӳпке чирĕ... Нумай асаплантарнă вăл

Тăхтине. Анчах чăваш çыравçи аллине усса ларман, шанчăкне çухатман. Хăйне мĕскĕне хурса, çын куçĕнчен пăхса тĕрлĕ пуçлăхсене кĕллесе çӳремен вăл. Тӳсĕмлĕ, мал ĕмĕтлĕ çын пурнăça ытарса пĕтермелле мар юратнă, çавăнпа чăн-чăн сăмах ăсти, художник пулнă.

Тăхти вилнине кая юлса пĕлнĕ Петĕр Хусанкай ывăç тăпри сапайманнишĕн хурланса икĕ сонета çырать. Вĕсенчен кашнинчен пĕрер çаврăм илсе парсан пăсăк пулмĕ тетĕп:

Ун çӳллĕ çут çамки ăста çиçетчĕ,
Вылятчĕ шӳт ун типĕ куçĕнче.
Анчах туяттăм: çын çав тер пĕччен -
Алла ик аллипе тытса силлетчĕ.
Сархайнă сăн-питне пăхаттăм та,
Аса илеттĕм эп пайтах ята.
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Хĕвел хăпарчĕ ешĕл Йăлăмран.
Çын пăхрĕ тинкерсе: "Пурнар-ха", - терĕ.
Куккук пĕр вĕçĕмсĕр кун-çул пиллерĕ.

Хусанкай, ытти поэтсемпе литераторсем çырнисене аса илетĕп те, куç умне Атăл хĕрринче мăшăр качака çавăтса çӳрекен Тăхти сăнарĕ тухса тăрать. Унăн пĕчĕк тăпăл-тăпăл пӳлĕмĕ те Атăл хĕрринче пулнă. Мĕн çинчен шухăшланă, мĕне ĕмĕтленнĕ-ши поэт аслă шыв çине пăхса?

И.Тăхти йывăр чирне пăхмасăр энциклопедилле ăс- тăн пухнă, ытти халăхсен культурипе паллашнă. Чĕлхене авкалама-хуçкалама, унпа пĕлсе усă курма вĕреннĕ. Çакна "Çанталăк" калаври пĕр сыпăк уççăн кăтартать:

"Тĕрлемес. Станцă. Юман вăрман. Ыраш пусси. Чугун çул. Вакунсем. Калла-малла пăравус çӳрет кăшкăртса. Тĕрлемес çил арманĕ авăртать".

Хăйсен шăпипе çураçса лармасăр пурнăç çулĕн чылай пысăк катрамĕсене, шăтăк-путăкĕсене, тумхахĕсене, лакăмĕсене çĕнтерсе малтан мала утнă чăваш ачисен йышĕ пĕчĕк мар. Вĕсен хушшинче курăнсарах тăраканнисем çаксем: тĕнче касса çӳренĕ Никитиа Бичурин, чăваша çутта кăларнă Иван Яковлев, Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши классиксем, Çемен Элкер, Ухсай Яккăвĕ. Космос паттăрĕ Андриян Николаев, Петербургри "Çуллахи сад"

эреш картана тунӑ Егоров архитектор, граждан вӑрҫи геройӗ Василий Чапаев тата ыттисем те ҫав ретрех тӑраҫҫӗ.

Синкер пурнӑҫлӑ, шӑпаллӑ ҫынсене илсен ытларах эпир писательсене, поэтсене пӗлетпӗр.

Элеке, суяна, тӗрӗсмарлӑха пула хӑй пурнӑҫӗн пӗчӗк мар тапхӑрне тӗрмере ирттернӗ Митта Ваҫлейӗ те шӑпипе ҫураҫса ларман. Ӗҫпе те, сӑмахпа та кӗрешнӗ вӑл. Чӑваш интеллигенцийӗ хушшинче паттӑр пек пуҫ каҫӑртса ҫӳренӗ пӗр путсӗре ҫапла питлет сӑвӑҫ:

Ехрем ҫуртне ҫӳре-ҫӳре
Эс пултӑн сӑвӑҫ та тӳре.
Малашнехи кӗрешӳре
Мӗнпе эс тухӑн-ши тӳрре?

Нумай таптанӑ Миттана суя идеологипе витӗнсе ӗҫлекенсем, сывлӑхне хавшатнӑ, ӗмӗрне кӗскетнӗ. Ниме парӑнмасӑр тӗрмере ларнӑ чухнех поэт "Тайӑр" поэма ҫырать. Унти ҫак йӗркесем авторӗ ҫинчен каланӑнах туйӑнаҫҫӗ:

Жандарм кӑшкӑрать: - Тайӑл!
Поэт калать: - Эп - Тайӑр!

Пурнӑҫ...этемӗн пӗтӗм кун-ҫулӗ ҫак сӑмахра вырнаҫнӑ тейӗн. Ман шутпа, ҫын пурнӑҫӗ ача пӗрремӗш хут кӑшкӑрнӑ сасӑран пуҫланать. Кӑткӑс япала вӑл пурнӑҫ тени. Асап, хӗн-хур, чӑтайми йывӑрлӑхсем капланса килӗҫ - пуҫна ан ус. Апат анми пулӗ, пурнӑҫ ҫути тӗксӗмленӗ - пуҫна ан ус. Сана хисеплеме пӑрахӗҫ - хӑвна ху хисепле. Шанми пулӗҫ - шан хӑвна!

## "ЭС МАНА САВСА СИКТЕРТӖН ХӐВӐН ЕШӖЛ САПКУНТА"

Шӑппӑн-шӑппӑн, йӑппӑн-йӑппӑн шуса килчӗ шуҫӑм. Кӳршӗ ял хыҫӗнчи тӑвайкки тӑрринче хӗвел хӑйӗн ҫаврашкине пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн кӑтартса, пысӑклатса пычӗ, пӗрре шуралса илчӗ, тепре кӑвакарчӑн пӗсехи тӗслӗ пулса кайрӗ, унтан хӗреле-хӗреле тӳпене кармашрӗ. Тӑвайккинчи ҫамрӑк хурӑнсене мӑкӑнь тӗсӗ ҫапрӗ.

Ҫӗнӗ кун килет.

Анăç енче - урăх сăн. Куçпа пăхса çитейми инçете тĕллĕн-тĕллĕн симĕс, тĕллĕн-тĕллĕн сарăрах, хăмăртарах, кăвакрах, хурарах тĕслĕ хир тăсăлать. Такам ятарласа сăрă тăкса тухнă тейĕн тăван уй тăрăх.

Эпĕ, аслă шкула вĕренме кĕме хатĕрленнĕскер, укăлча хапхи умĕнче тăратăп. Манăн ыран Шупашкара тухса каймалла. Тăван енрен пĕрре те уйрăлас килмест. Хула пурнăçĕ мана илĕртмест. Тăван кĕтес, ачаран çара уран чупнă çырма-çатра, уй-хир манран нихçан та уйрăлас çук пек туйăнать. Инçе çула тухас умĕн эпĕ тăван тавралăха пăхса çаврăнасшăн.

Акă хапхаран ĕне касăвĕ тухать, ун хыççăн - сурăх касăвĕ (пирĕн ялта, эп астăвасса, кĕтӳ яланах ир хăваланă). Кĕтӳçĕ çук пирки черетпе илсе тухаççĕ выльăха çырмана.

Ĕнесем хыçĕнчен хулпуççи урлă çакса янă пушă авринчен кăшт кăна пысăкрах ача лĕпĕстетсе пырать. Куçĕсене шăлкалать. Çывăрса тăранман ĕнтĕ.

Эпĕ касу кайнă çырмана мар, урăххине çул тытатăп. Тарăн вар теççĕ ăна. Пуян çырми тесе калакансем те пур. Тем тĕрлĕ йывăç-курăк ӳснĕрен çапла ят панă имĕш.

Шăлан çеçки шăрши чуна каçăхтарса сипетлет. Ирхи сулхăнра çӳçеннĕн, çамрăк вĕрене çулçисем кăшт чĕтренсе илеççĕ. Çил варкăшĕ кăштах сисĕнет. Çырма пуçĕнче - чăн-чăн вăйă карти. Çичĕ хурáн вăр çавра кăшăл туса вырнаçнă, варринче - çамрăк чăрăш. Шутламан-туман çĕртен сăвă йĕркисем çуралаççĕ:

Ырă-ырă шăршă...  
Темле сăн та пур:  
Капăр, симĕс чăрăш  
Ташша тухнă - кур!

Кайăк концерчĕ... Мĕн вăл симфони! Мĕн вăл опера! Этем хăлхишĕн тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăк сассиллĕ пурнăç юрринчен ырăраххи мĕн пултăр?

Вĕçен кайăксем - вăр-вар, çаврăнăçуллă чĕрчунсем. Вăрмансене, кӳлĕсемпе юхан шывсене, ялсене илем кӳреççĕ вĕсем. Тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, вĕçен кайăксем шуса çӳрекен тăвата уралла чĕр чунсенчен 190 млн çул ĕлĕкрех, мезозой эринчи тапхăрĕнче аталанма пуçланă. Авалхи вĕçен кайăк инçе вĕçме пултарайман иккен. Çуначĕсене сарса пĕр йывăç çинчен теприн

çине çеç куçнă. Хальхи вăхăтра çĕр çинче кайăксен 8590 тĕсĕ пурăнать имĕш. Чăваш Республикинче вĕсен 200 яхăн тĕс пур теççĕ. Пирĕн таврара вĕсем миçе-ши? Питĕ пĕлес килет.

Колхозра ĕç кунĕ пуçланчĕ пулас: сенажлăх утă çулакан трактор çӳллĕ прицеп кăкарса хире тухрĕ. Ун хыççăн тепре, унтан - виççĕмĕшĕ. Механизаторсем ĕçчен пирĕн. Районта яланах малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Ытти çĕрте мĕнле те, пирĕн ялта усал çынсем çук пулас. Хамăрăн ентешсем çинчен ман çакна çеç калас килет: кашни çын вăл - ахах та мерчен, ăсĕ-тăнĕпе те, ӳт-пӳрен те хитре; кашни çын - хăй тĕнче, унăн тавракурăмĕ, пурнăç ăнланăвĕ, илеме туясси хăйне евĕрлĕ; кашни çын вăл - артист, хăш чух култарать, тепĕр чух макăртать, вăрçтарать; кашни çын - ăсчах, унăн хăйĕн философийĕ пур.

Ял çумĕнчи пекарня еннелле пĕрерĕн те икшерĕн утма пуçларĕç çынсем. Çемçе çăкăр илме çӳрет кунта ял-йыш. Çăкăр пĕçерекенсен йышне ĕçчен, ырă кăмăллă, тараватИра аппа ертсе пырать.

Чăваш хĕрарăмĕ вырăс хĕрарăмĕ пек мар çав. Нумайрах ĕçлет, хăйне шеллемесĕр, сывлăхне упрамасăр тăрмашать, нихçан та нăйкăшмасть. Ялта пурăнакан чăваш хĕрарăмĕн тĕкĕр умĕнче тăма вăхăт çук. Васкамалла, ĕçлемелле унăн, пурнăçшăн тапаçланмалла. Вăл пĕтĕм йывăрлăха хăй çине илет. Илемне хĕрхенмест. Ира аппа анчах мар, пирĕн ялти пур хĕрарăм та çапла. Чăваш хĕрарăмĕн паллă енĕ пулĕ вăл ĕçченлĕх, тӳсĕмлĕх, сăпайлăх, яланах каçарма хатĕр пулни.

Утă çулакан тракторсем темиçе çаврăм та турĕç. Хирте - тикĕс ĕç шавĕ. Тракторсем ялан пĕр пек кĕрлесе тăнă чух симĕс çерем çине выртса çывăрас килет.

Тарăн варпа юнашар - хурах варĕ (вăрçă вăхăтĕнче таркăнсем пурăннă теççĕ кунта, ячĕ çавăнтан пулса кайнă). Унта тахçанах, колхозсем пуçланса кайнă çулсенчех тунă, халĕ ăшăхланса юлнă çăл пур. Пури те çĕрсе пĕтме пуçланă ĕнтĕ. Шывĕ вара тутлă. Ăна ĕçетĕп те килелле утатăп.

Сĕлĕ, ыраш, тулă калчисем кĕпçеленнĕ, сыпăк çумне сыпăк хушса çĕкленеççĕ. Кăшман ани çумĕпе иртекен ансăр сукмак яла илсе çитерет.

Ял витĕр тухнă чух кашниех сăмах чĕнет, сывлăх сунать, мĕнле пурăннине, ăçтан килнине ыйтса пĕлет. "Ăçтан килетĕн-ха?-тени нумай чухне сывлăх сунни вырăнне пулать пирĕн тăрăхра. Кăткă тĕми евĕр йăшăлтатакан хулара çапла пулас çук.

Кунта пĕтĕмпех ырă, ăшă. Ăшă çăкăр пĕçерессĕ, ăшшăн кĕтсе илсе ăш пиллĕн ăсататçсĕ, ăшă сăмахпа чуна лăпкаççĕ. Çилĕ те ăшăрах пек тăван кĕтесре. Çын, çырма-çатра ячĕсем те кунта кăмăллăрах илтĕннĕ пек туйăнаççĕ.

Тӳперен хĕвел çунтарса пăхать. Анкартинчи утă купи техĕмлĕ ырă шăршă сарса ларать. Пахча хыçĕнчех пуçланакан çăкалăхра саркайăк шăхăрса ытти вак кайăк сассине хуплать.

Кăнтăр тĕлĕ.

Утă купи çумне ларатăп та шухăша каятăп. Пăтрашуллă, йывăр пурнăçпа пурăнать манăн тăван ен. Раççей пуçĕнче пултăксăр çынсем тăнăран укçа та вăхăтра илейместпĕр, тивĕçлĕ апат, тумтир кураймастпăр. Тен, çакă чăвашсем хушшинче аслă пĕлӳ илнĕ çынсем сахалрах пулнинчен килет? Тен, улталаççĕ пире влаçра ларакансем... Ăçта вăл паянхи кун тĕрĕслĕхĕ? Танлăх тени пур-и вăл? Кам ăнлантарĕ, каласа кăтартĕ?

Тупсăмне хамăнах тупмалла пулать пулĕ. Аслă пĕлӳ илмесĕр вара çакна тума май çук.

Паян эпĕ каç пулнă-пулманах çывăрма выртасшăн: ыран ирех тăрса поезд çине утмалла. Сăлтавĕ урăххи те пур-ха. Клуб умне пухăннă вăйăра купăс сасси илтĕнсен эпĕ унта тухса чупмасăр чăтса тăраяс çук.

Çулла ялан çапла. Каçхи ял, уй тăрăх каять купăс çемми, магнитофон сасси. Тăван сăнсем... Тăван сасăсем... Тăван атте-анне... Мĕнле пăрахса каяс сире...

## ÇАК ЮРРА ЭП АХАЛЬ МАР ЮРЛАРĂМ

(Митта Ваçлейĕн пултарулăхĕ тăрăх)

Митта Ваçлейĕн хĕн-хурлă пурнăçне çырса кăтартма çак сăвăран çеç (шăпах çак сăвăран!) пуçламалла:

Сиктермерĕн мана кĕленче сăпкара,
Макăрсан пыл хумарăн тута-çăвара.

Анчах сансӑр пуҫне, ыр ҫӗр-шывӑм,
Тӗнчере чи хакли тек пур-ши вӑл?

Унӑн пултарулӑхӗн тӗп шухӑшне, тӗшшине вара ҫак йӗркесенчен лайӑхрах кӑтартакан, пӗлтерекен сӑмахсем тупма та ҫук:

Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам.
Пин юррӑмран пӗри анчах юлайтӑр.
Ӑна тӑван ыр кӑмӑлпа юрлатӑр -
Вара ман канлӗ пулӗччӗ тӑпрам.

Вунҫичӗ ҫул Сталин лагерӗсемпе пуҫ янӑ вырӑнсенче ҫын курман терте курнӑ поэт юлашки сывлӑшӗ тухичченех ҫепӗҫ лирик пулса юлни такама та тӗлӗнтермелле.

"Шурӑ хурӑн, шурӑ хурӑн,
Шурӑ шупӑрна хывам-и,
Сарӑ кимӗ эп тӑвам-и?
Сар чечеклӗ сарана пек
Сарӑлса ишсе ҫӳретӗр", - тет вӑл пӗр сӑввинче. Таптанӑ, вӑтӑрнӑ, кӑкланӑ чунра мӗн тери ӑшӑ туйӑмсем упранни "Чул ҫыран хӗрринче" сӑвӑра та сисӗнет:

Чул ҫыран хӗрринче пӗчӗк пӳрт,
Юр тултарнӑ мӑрйиийӗ таран...
Мӑнакка, хӑвӑртрах уҫса кӳрт,
Ҫитсе ӳкрӗм паян эп аран.

Чун кӗввисем унӑн сӑввисенче кӗсле сасси, сар кайӑк юрри, чӗлтӗрме чӗлтӗртийӗ, шӑнкӑрав шӑнкӑртийӗ пулса янӑраҫҫӗ:

Пит маттур-ҫке Иванов бульварӗ,
Пыллӑхри пек ҫамрӑк ҫӑкасар.
Ҫта ҫитсен те манӑҫа юлмарӗ
Шурӑ тум тумланнӑ Шупашкар.
Чечекре нар питлӗ сар настурци,
Ҫӑлтӑр - астра, капӑр георгин...
Ҫамрӑк чух, тен, хамӑр та маттурччӗ,
Ҫакна темшӗн эп астурӑм тин.
Шухӑ пулнӑ, шухӑшсӑр ҫӳренӗ,
Такӑрлатнӑ Атӑл хӗррине.
Кам шутланӑ, кам ӑна ӗненнӗ
Чи хакли яш ӗмӗр иккенне?..

Лирика çепĕçлĕхĕ "Ан кулян" сăвăра та палăрать:

Шавлă вăйă-кулă
Кĕр уявĕнче.
Эсĕ çеç салхуллă
Ларан çын çинче.
. . . . . . . . . . . . . . . .
Тав туман курканăн
Йӳççине чăтса
Асăнăн, хурланăн
Куççульне çăтса.

Мĕнле хитре тата ак çак сăвă:

Ах, Шура, Шура! Шурĕ, шурĕ
Ирхи шур çамрăклăх пĕрле.
Ирхи кунсенĕн абажурĕ
Асамат пек пире тĕрлет.

"Çак юрра эп ахаль мар юрларăм" кĕнеке умсăмахĕнче Атнер Хузангай поэт хăйĕн пултарулăхне ыттисенчен уйрăмрах, чăрсăррăн, иможинистла пуçланине, вăл Çеçпĕлĕн ĕçне малалла тăснине палăртать. Туйăмсен капланăвĕ, чĕрене витерекен лиризм пуррине асăрхать литература тĕпчевçи Митта сăввисенче. Чăнах та, унăн малтан çырнисенче Сергей Есенин кĕввисем илтĕнеççĕ, унăн интонацийĕ сисĕнет. Унăн поэзи чанĕ çапла янăрани шăпах поэта пуç ямалли сăлтав пулнă та ĕнтĕ. Нумай вăрçаççĕ поэта çеçпĕлле-есенинла нотăсемшĕн. Аркадий Золотов ăна çапла асăрхаттарать: "Сан юлашки сăввусенче, Митта, кирлĕ мар нотăсем туйăнаççĕ. Есенин хыççăн кайни палăрать. Çав Хусанкайсем илĕртмерĕç-и сана?" Пуçлăхра ларакан Золотов йышши айвансем, поэзи дилетанчĕсем, кĕвĕç те çĕтĕк чунсем сахал мар сăхнă Миттана. Анчах вăл парăнман:

Упаленет анранă уйăх -
Çапса ӳкер ăна чулпа!..
Поэт тени пит чăрсăр çын вăл;
Мĕскер шутлать - çавна тăвать.
Салхуллă уйăх - сăнсăр символ -
Ак кутăн-пуçăн ывтăнать.

Çакăн пек имажинистла ун чухне чăваш поэчĕсенчен тепĕр лирик кăна - Петĕр Хусанкай калама пултарнă. Ахальтен мар çак

икĕ сисĕмлĕ чун пĕр-пĕрне шыраса тупса яланлăхах, ĕмĕрлĕхех туслашнă.

Митта Ваçлейĕн Хусанкай патне çырнă нумай çырăвĕ упранса юлнă. Вĕсенче тăван литература шăпи çинчен шухăшлани, тăван культура, поэзи мĕнле çулпа каясси çинчен пуç ватни пур. Пĕр автографра Митта çапла çырать:

Сана асăнсан, ялан пĕр сăмах:
"Чăваш тухйинчи чи пысăк ахах".
Анчах эп каласшăн: "Петĕр Питравĕ
Ахах кăна мар - пуянлăх утравĕ".

Çырса пурăнмалла пулнă пулсан Митта ăсталăх тĕлĕшĕнчен Хусанкайран пĕрре те кая юлман поэт пулатчĕ-тĕр. Вĕсен пурнăçа ăнланни те пĕрешкелтерех пулнă. Ахальтен мар иккĕшне те сĕрĕмре çӳрекен поэтсем, чăваш халăхне малалла мар, каялла туртакан çыравçăсем тесе вăрçнă. Хулиган поэтсем тесе те пăхнă. Идеологи пуçĕнче тăракансем Миттана хузангайщинăран хăтăлма çине-çинех сĕнеççĕ. Анчах пĕр кĕвĕ ĕнерекен икĕ чун епле уйрăлччăр-ха?

Митта Ваçлейĕ вырăс поэчĕсенчен нумай вĕреннĕ. Есенин сăввисене ытараймасăр вуланă, нумайăшне куçарнă.

1956-мĕш çулта поэтăн "Кăмăлтан" кĕнеки кун çути курать. Унти сăвăсенче Миттан уçă, çепĕç, хăш чухне кăшт хурлăрах сасси илтĕннĕ. Кĕнекене критика ырласа кĕтсе илет. Митта тăван чĕлхе сĕткенне туйни, сăвăсенче таса гражданлăх пурри çинчен çыраççĕ.

1957-мĕш çулта тухнă кĕнекинче поэт çапла калать: "Мартăн 6-мĕшĕ. Ĕнер 49 тултартăм. Тата çакăн чухлĕ пурăнсан çитет. Пурăнас кăмăлăм тем пысăкăш, анчах мехелĕ çавнашкал. Чĕре япăх. Пурнăç тиевне тапса туртни туйăна пуçларĕ".

Çак çулах июнь уйăхĕнче чаплă поэтăн чĕри вăхăтсăр тапма чарăнать.

Арапуç ялĕн çăви çинче Митта вилтăприне виçĕ хурăн ир те, каç та хуралласçĕ. Хисеплĕ хурала тăнă тейĕн вĕсене. Пысăк мар чул палăк... чие йывăççисем. Тĕрĕллĕ чăваш кĕпи тăхăннă поэт сăнӳкерчĕкрен ăшă куçĕсемпе пăхать.

# ЧĂВАШ АЧИ, САССУНА ПАР!

(Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕ тăрăх)

Эй, эсир, çамрăксем! Ăмăрт куçлă, çунатлă
Çеçпĕл чĕннĕ чăваш ачисем!
Эп сире чи çӳлте халь курасшăн çунатăп,
Ĕненсе, юратса пехиллем.
Вăхăт çитрĕ: чăвашăн чĕлхи тимĕр татрĕ,
Туптăр, хăйрăр ăна малалла!
Ыранхи çĕн ăста тĕнчене янраттарĕ.
Çамрăксем! Вăл - сиртен тухмалла.

Петĕр Хусанкай.

1999-мĕш çулта чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, кăвар чĕреллĕ поэчĕ Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 100 çул çитет. Çирĕм виçĕ çултах çĕре кĕнĕ поэтăн сăввисем пит нумаях та мар, анчах мĕнле хĕрӳллĕ, чĕнӳллĕ, йыхравлă, трибун сассиллĕ вĕсем. Тинĕс сасси те, çĕнĕ пурнăç кĕвви те, иртнине пăрахăçласа çĕнни патне чĕнни те илтĕнсе тăрать чунпа çырнă йĕркесенче. Çеçпĕлĕн ĕçĕ - хакласа çитерейми тĕлĕнмелле пысăк пултарулăх.

Ача чухне выçăллă-тутăллă пурăннă, ашшĕсĕр тăрса юлнăскерĕн сывлăхĕ хавшак пулнă. Вуник çултах çăкăр çимелĕх те пулин ĕçлесе илес тесе Мишша вулăс кантурне ĕçе кĕрет. Ял куштанĕсен, вулăс пуçлăхĕсен ирсĕр ĕçĕсемпе ултавĕсене курса тăнă, патша пусмăрне туйнă çамрăк ача хăй вăхăчĕшĕн ытла ăслă йĕркесем çырса хурать:

Халăх хум пек çĕкленет
Тăвăллăн, хаяррăн.
Таса мар патша йăхне
Час юхтарса ярĕ.
Час хĕвелĕмĕр çӳлте
Çурхилле вутланĕ,
Тырă-пулă уй-хирте
Савăнса хумханĕ.

Çĕр-шывăн илемлĕ пуласлăхне, вăл çурхилле чечекленессе ĕненсе тăнă пулас поэт.

Çеçпĕл Мишши яланах малти ретре, пурнăç аварĕнче пулма тăрăшнă. Лăпкăлăх, канăçлăх, йăвашлăх, мĕскĕнлĕх уншăн ют пулни сăвăсенчен аван курăнать. "Хурçă шанчăкра" вăл çапла çырать:

Чĕрем, сик хăюллăн, хавассăн,
Хăюлăх юрри кĕвĕле -
Чăваш чĕрĕлнине курмалла сан,
Ăна тĕл пулса илмелле...

Харсăр поэтăн чунĕ çепĕç, кăмăлĕ черчен пулнине кăтартакан йĕркесем те сахал мар Михаил Кузьмин çырса хăварнисенче:

Хĕрлĕ-хĕрлĕ, хĕрлĕ мăкăньсем,
Виçĕм çул чечеклĕ чĕрĕлнисем,
Çил силлерĕ, çил вĕçтерчĕ-çке сире,
Хăйăр хĕртрĕ çеп-çемçе çĕре.

Йĕлпер тĕрлĕ хĕрлĕ мăкăньсем,
Виçĕм çул чечеклĕ чĕрлнисем,
Çут хĕвеллĕ кăнтăрла ăшши
Каллех çавăрăнса килĕ-им?
Симĕс çитлĕ симĕс пахчара
Кĕтсе илейĕр-ши хуçăра?

1919-мĕш çулта Çеçпĕл Хĕрлĕ Çара каясшăн пулать, анчах парти комитечĕ ăна ирĕк памасть. Ăна Чăваш Автономи Облаçне чĕнсе илеççĕ те комсомол обкомĕнче ĕçлеме сĕнеççĕ. Каярахпа вăл юстици пайĕн пуçлăхĕнче вăй хурать.

Çеçпĕл хăйĕн ăсталăхне ÿстерсе, пултарулăхне хĕмлентерсе пырать. Нумай вулать, статьясем хатĕрлет, вырăс поэчĕсене куçарать. "Хĕрлĕ тинĕсре", "Иртнĕ самана", "Атăл юрри" сăввисем пичетленсе тухаççĕ. Вĕсенче чăвашăн иртнĕ пурнăçне, сăн-сăпатне сăнланă. "Катаран кас килсен" сăввинчи йĕркесем:

Ман çĕр-шыв хĕрлĕ юнлă хĕрес çумĕнче
Çакăнса, çыхăнса тăраять.
Кăмрăкланнă асаплă чăваш чĕринчен
Юн тумлать, юн тумлать - хĕрлĕ юн.
Чăваш пуçĕ çинче хуп-хура сивĕ кун
Шăхăрса ахăрать пур енчен.

Хурлăхлă сăнсем савăнăçлă ÿкерчĕксемпе ылмашасса шанса, чăваша ытти халăхсемпе пĕрле çут малашлăха утма йыхравласа "Çĕн кун" аки сăвă çырать поэт:

Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ
Хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе
Кун-çул уйне тухса хĕвел тумне тумланĕ,
Çĕн Кун ăна ыталĕ савăнса, ачашшăн.
Умне, çĕн çул çине, çĕн чечексем чĕртсе
Интернационал кĕперĕ анĕ.

Çеçпĕл - çĕнĕ чăваш поэзине пуçараканĕ, романтизм мелĕсене алла илекенĕ. Романтизм кĕввисене Çеçпĕл уйрăмах килĕштернĕ. Унăн нумай сăввисенче романтизмла çĕкленÿлĕх, хавхаланулăх сисĕнет. Ĕмĕтленме питĕ юратнă М.Кузьмин. Чăваш чĕлхи пуласлăхĕ лайăх пулинччĕ тесе çырнă:

Вăхăт çитĕ - чăваш çĕрĕн
Кăмăллă чĕлхи
Чаплă пулĕ, вăлах пулĕ
Çамрăк чун пахи.

Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
Сăвă-юрăсем,
Пулĕç аслă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем.

Çеçпĕл Мишши поэт - трибун анчах мар. Есенинла лиризм та ют пулман унăн поэзине. Çакна "Шухăшласа кăларнă куççене" сăвă йĕркисем те çирĕплетсе параççĕ:

Эй, эп савнă, юратнă куççем -
Сĕм кăварлăхра ик хура çăлтăр,
Хама хам мăшкăллас тесе
Юррăмпа сире çутрăм-ши йăлтăр?

Сирĕн тĕпĕрсенче - пăхсан -
Кăвак çĕнĕлĕхĕн сиренĕ,
Чечеке чуптуса-сăхса
Çĕнĕ шухăш ĕçме эп вĕреннĕ.

Сăвăсем çеç мар, публицистла статьясем те çырать М.Кузьмин. Вĕсенче те унăн поэтла хĕрÿлĕхĕ, тÿртен калас йăли

палăрать. "Çапла пулăшатăр-и?" статьяра вăл чăвашсене Хĕрлĕ Çара тырă парса пулăшманшăн ятлать.

"Пирĕн вăй" статьяра чăвашран кулакан вырăс пуçлăхсенчен хăтăлма, пурнăç тилхепине тăван халăх ачисене тыттарма вĕрентсе çырнă тăван чĕлхепе тухакан хаçатсене тĕрлĕ çĕрте пурăнакан чăвашсем патне çитерме чĕнсе каланă.

Мĕнле хитре çырнă Çеçпĕл тăван чĕлхе çинчен! Акă вăл йĕркесем: "Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ. Хĕртнĕ хурçă пек пулĕ. Вăхăт çитĕ - чăваш юрри те илтĕнсе кайĕ. Таса пĕлĕте, çут тĕнчене, хĕрлĕ хĕвеле савса юрлĕ вăл".

Çеçпĕл пултарулăхĕ пин-пин çын шухăш-кăмăлне палăртса тăрать. Малтан мала талпăнакан харсăр чунлă поэт пулнă вăл. Ĕмĕчĕсемпе пурнăçран темиçе çул малта пынă. Шел пулин те нумай пурăнайман.

## М.Ф.ФЕДОРОВĂН "АРÇУРИ" ПОЭМИНЧИ ПУРНĂÇ ЧĂНЛĂХĔПЕ ÇЫН АСАПĔ

Тинкеретпĕр малалла,
Кайрине те халь куратпăр...
П.Хусанкай

Михаил Федоров - чăваш литературинче тарăн йĕр хăварнă çыравçăсенчен пĕри. Унăн вилĕмсĕр "Арçури" поэмине кашни çын пĕлет ĕнтĕ. Мĕн çинчен çырнă-ха М.Федоров "Арçури" хайлавĕнче? Автор ку произведенире вунтăххăрмĕш ĕмĕрти чăваш халăхĕн йывăр кун-çулне, шухăш-кăмăлне сăнланă:

Хĕвел ансан Хĕветĕр,
(Эсир ăна пĕлетĕр)
Хĕвне çăкăр чикрĕ те,
Лаша кӳлсе ларчĕ те,
Тухрĕ кайрĕ вăрмана
Хăрăк турат пуçтарма.

Мĕншĕн Хĕветĕр хĕвел ансан кăна каять-ха вут-шанкă патне? Мĕншĕн тесен вăл вăрман хуçи тытасран шикленет. Чухăн

хресченĕн ирĕксĕрех вăрра кайма тивет. Кăнтăрла вут патне кайма унăн укçи-тенки те çук.

Хĕветĕр - вунтăххăрмĕш ĕмĕрте пурăнакан чухăн хресчен сăнарĕ. Автор унăн тавракурăмне, шухăшне, кăмăлне сăнласа ун чухнехи хресчен психологине тĕплĕнрех пĕлме пулăшать.

Хĕветĕр - асап-нуша тӳсекен, тĕшмĕш сĕрĕмĕпе пуçне минретнĕ çын. Çак тĕттĕмлĕхе кăтартма Михаил Федоров арçури сăнарĕпе усă курать те ĕнтĕ. Пурнăç йывăррипе Хĕветĕр пек тертленекен çынсем ялта нумай-ха: Микулай карчăкĕ тата ыттисем те. Анчах вĕсем Хĕветĕрпе пĕрле вăрмана пыраймаççĕ

"Карчăк Микули каймарĕ,
Ăна юлташ пулмарĕ",-

тет автор. Пĕрисем лава кайнă, теприсем салтак ăсатаççĕ, виççĕмĕшсен вара арăмĕ питĕ чирлĕ выртать.

Хĕветĕр вăрмана тĕттĕм пулсан кăна çитет. Куçа йĕп тирсен те нимĕн курăнмасть, пĕлĕтсем кăна масар патĕнчен тухса хăяматалла вĕçеççĕ. Вăрман кашлать, кассăн-кассăн вĕрекен çил йывăçсене шатăртатттарать. Çакăн пек тискер çанталăк пуринчен те хăракан Хĕветĕр ăс-тăнĕнче арçури сăнарне çуратать:

Сикрĕ тухрĕ çырмаран,
Пĕкке хуçрĕ çурмаран.

Анчах ку пуçламăш çеç-ха. Каярахпа усал вилнĕ карчăк пек, сухаллă качака пек тухса тăрать тĕттĕм чăваш умне.

Поэт арçури сăнарĕпе усă курса Хĕветĕрĕн ăс-тăнне, тĕнчекурăмне кăтартасшăн.

Хĕветĕр çак вăрманта вилме хăрамасть. Ăна урăх япала канăç памасть. Унăн çемйи пысăк. Арăмĕ те питĕ чирлĕ выртать. Ачисен аллисем сухапуç патне пыман-ха. Çемьен пуласлăхĕ Хĕветĕре питĕ пăшăрхантарать:

Пуян çын вилет - мул юлать,
Чухăн çын вилет - ят юлать.

Мĕн юлать-ши Хĕветĕрĕн? Паллах, асап-нуша куракан ачисем, арăмĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ вăл вăрманта вилсе выртасшăн мар. Аслашшĕсемпе асламăшсен çулне çитесшĕн, вырăн çинчех вилесшĕн. Ăна ачисем авăлхи йăла-йĕркепе пытарасса шанать, ĕненет.

Çурма çултан иртсен Хĕветĕрĕн шухăш вĕçевĕ сирĕлет, куçĕсем арçурине мар, хуçалăхра кирлĕ япаласене сăнама пуçлаççĕ.

Хĕветĕр пурнăç мĕншĕн йывăр пулнине, çакă куштансемпе усламçăсенчен килнине питĕ лайăх пĕлет. Анчах ҫа унăн тĕнче курăмĕ ансăр пирки çак йĕркене мĕнле улăштармаллине чухласах каймасть-ха.

Михаил Федоров поэмăра крепостла йĕркене пĕтернĕ вăхăта сăнланă. Поэмăри йĕркесем çакна çирĕплетеççĕ. Çав вăхăтра хресченсен хăйсен пĕчĕк çĕр лаптăкне укçа парса илмелле пулнă, çемьене выçă вилĕмрен çăлас тесе хушпу, тухья тата ытти илемлĕ эрешсене сутма тивнĕ.

Çапла, М.Федоров "Арçури" хайлавĕнче пурнăç чăнлăхĕпе çын асапне тарăннăн сăнласа панă. Çавăнпа та ĕнтĕ ку хайлав классика шайĕнче. Çак произведени хальхи вăхăтшăн та питĕ пырăнлă.

Вунтăххăрмĕш ĕмĕрти пекех, хальхи чăваш хресченĕн те пурнăçĕ пылак мар. Çĕр ĕçĕпе ĕçлеме кирлĕ техника, топливо тата специалистсем çукки тыр-пул тухăçлăхне ӳстерме чарать.

Паянхи хресчен ăс-тăнĕ, тавракурăмĕ Хĕветĕрĕнни пек мар паллах. Анчах хресчен ялан конкретлă шухăшлать. Хĕветĕр пекех. Сăмахран, вăрманпа пынă чухне вăл кĕреçе е сенĕк аврилĕх чăрăш, пĕкĕ авма меллĕ хурама, çуна тупанĕлĕх хурăн курать. Чăнах та çапла хресчен психологийĕ. Çакă Хĕветĕр сăнарĕнче те палăрать. Апла пулсан вăл - типлă, пурнăç чăнлăхĕнчен уйрăлман сăнар.

## ÇĂЛТĂР ПЕК ЯЛКĂШСА ТĂРАКАН ТАЛАНТ...

(Константин Иванов пултарулăхĕ çинчен)

Чăваш поэзийĕн чăн тӳпинче икĕ çутăран
та çутă çăлтăр йăлтăртатать: пĕри - Иванов,
тепри - Çеçпĕл. Пĕри - асамлă художник -
эпик, тепри - чĕрене вут-кайăкла чĕртсе
яракан çунатлă лирик.

Петĕр Хусанкай.

Паллă педагог Геннадий Волков "Нарспи" поэмăна чăваш поэзи çĕр-шывĕн çăлкуçĕпе танлаштарнăччĕ. Украина халăх поэчĕ Павел Тычина К.В.Иванова литература картти çинче ялкăшса тăракан çăлтăр тенĕччĕ. "Нарспи" пăлхар вулаканĕсем патне те çитнишĕн савăнса ăна кашни халăхшăн сывăх, савăк произведени тесе хакланăччĕ Ангел Тодоров, пăлхар çыравçи. Вырăссен чаплă поэчĕ Александр Твардовский вара Константин Иванов поэзийĕ формипе те, содержанийĕпе те халăх поэзийĕ пулнине палăртнăччĕ.

Чăнах та, К.Ивановăн генийĕ пуринчен ытларах "Нарспире" палăрнă. Ăна çырнă чухне вăл вунçиччĕре-вунсаккăрта çеç пулнине аса илетĕн те тĕлĕнсе каятăн. "Нарспи" илемлĕ произведени анчах мар, вăл чăваш пурнăçĕн энциклопедийĕ те! Анчах талантлă поэтăн пĕчĕкрех япалисем те пулнă.

Революцичченхи чăваш литературинче К.Иванов пултарулăхĕн тӳпи пысăк. Унăн пултарулăхне пĕтĕм тĕнче литератури витернĕ, М.Лермонтовпа А.Пушкинран пуçласа Гомер таран. Пулас поэт литература теорийĕпе вунпилĕк çултах интересленме пуçлани паллă. Некрасов, Гете, Гейне, Гюго, М.Горький çырнисемпе паллашать вăл. Вырăсларан куçарать.

Çакă тĕлĕнтерет, шухăша ярать: "Нарспи" поэма çаврăмĕсем 20 йĕркерен тăраççĕ, Пушкинăн "Евгений Онегинĕ" те çаплах. Юмахĕсене те вăл Пушкина евĕрлĕрех тăвасшăн тăрăшнă. Чăваш поэчĕ Пушкинран вĕреннĕ тесе çирĕппĕнех калама пулать апла.

Унăн малтанхи юмахĕсенче яланах "асамлă виçĕ хут" тĕл пулать. "Тăлăх арăм", "Икĕ хĕр", "Тимĕр тылă" юмахсенче пĕр-пĕр ĕçе виçĕ хӳтчен тăваççĕ, вăхăчĕ те вĕсенче виçĕ кунлăх. Çакă шăпах юмах палли шутланать те. Иванов юмахĕсем халăх юмахĕсенчен уйрăмрах тăни сисĕнет. Çакă авторăн тĕнчекурăмĕнчен, унăн художествăлла ăнланăвĕнчен килнĕ. Поэтăн хăйĕн стилĕ пур: произведенисенче автор позицийĕ тĕп вырăнта тăрать. Сăмаха вăл халапçăлла пуçласа ярать:

Юмах юпа тăрринче,
Халап хапха тăрринче...

Автор пĕр-пĕр япалана ăнлантарса пама пултарать:

Хăвăр пĕлетĕр: юсман,
Ырăсене асăнса

Вĕрсе-сурса пĕçерсен,
Пит хăватлă япала...

“Нарспи” поэмăра вара телейсĕр героя вулаканпа пĕрле шеллет автор:

Епле Сетнер мĕскĕн-çке
Урнă вăрман ăшĕнче.
Епле çирĕп йывăççем
Юрлаççĕ пуç тăрринче.

К.Иванов çырнисенче фольклорла шухăшлани те, илемлĕ литературăри пек пĕтĕмлетсе калани те пур. Ивановăн кашни çаврăмĕ халăхла янăрать, çав вăхăтрах поэт халăх сăмахлăхĕн традицийĕсене пуянлатма, çĕнĕлле кĕвĕсем хывма тăрăшать.

Константин Иванов çырнисем пурте ансат сюжетлă. Вĕсенче ĕçсем умлă-хыçлă хăйсен еккипе пулса пыраççĕ. Сăнарлăхĕ те темле çăмăл, кăткăс мар, анчах халăха çывăхскер. Ваттисен сăмахĕсемпе, туй юррисемпе, вĕрӳ-суру сăмахĕсемпе усă курать, вĕсене çĕнетсе илемлетет автор.

“Нарспи” поэмăра çутçанталăка сăнласси анлă вырăн йышăнать. Пурнăç чуппи сисĕнсех тăрать: хĕвел хĕртсе пăхать - юр ирĕлет - курăк шăтать - чечексен тĕрлĕ шăрши сарăлать - путек-сурăх сиккелет - кĕтӳç шăхличĕ калать. Çут çанталăк сăнĕсем кунта ялан хусканура.

Поэмăри çынсене сăнланă чух та Иванов пит ансат ӳкерчĕксем тăвать: Нарспин явăнакан çивĕчĕ, каччă чĕрине çемçетекен куçĕçем, çӳхе тути, савăнтаракан сасси. Тăхтаманĕ урăхла сăнланать:

Лаптак сăмса, хĕсĕк куç,
Сарă çӳçпе сар сухал.
Лаши вĕçсе пырупа
Пичĕ-куçĕ пит усал.

Шухăша туллин уçса парасси - Иванов пултарулăхĕн паллă енĕ. Хăш чухне иртнĕ ĕçсем çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каламасть вăл. Вулакан унсăрах чухлать тесе шутлать пулĕ.

Акана хăçан тухса кайни çинчен тӳррĕн каламан, анчах çакă вăл паллă:

Кӳлес ĕнтĕ лашана,

Тухса каяр акана.
Эй, турăçăм, сывлăх пар,
Акнă тыррăма ăнтар!

К.Ивановăн таланчĕ çинчен çырнă чухне тата çак шухăшсене хушмалла: унăн лирикин халăхлăхĕ, иксĕлми пахалăхĕ курăнсах тăрать; этнографипе фольклор элеменчĕсем унăн поэзине халăхла шухăшлавпа халăхла сăнарлăх сĕмĕ кўреççĕ; унăн пултарулăхĕнче философла шухăшлани, публицистла калани сисĕнет.

Поэтăн пысăкрах произведенийĕсенче чăваш халăхĕн тĕнчекурăмĕ, ăс-хакăлĕ, кăмăл-туйăмĕ тĕрĕс сăнланнă. Çапла тума пысăк талантлă çыравçă çеç пултарнă.

## САСАРТĂК ТРЕВОГА ЯНРАРĔ ИРПЕ

(чăваш поэзийĕнчи çарпа патриотизм теми)

Пирĕн çĕр-шыв тăшмана, нимĕç хурахĕсене çапса аркатрĕ, историре пулман паттăрлăх кăтартрĕ. Çав паттăрлăха сăнлакан , мухтакан сăвăсем çуралчĕç.

Чăваш героикăлла поэзийĕн историйĕ маларах пуçланнă. Тал-Мăрса хăй вăхăтĕнчех çакăн пек йĕркесем çырнă:

Хĕрлĕ Çар çапăçать,
Тăшман тарать -
Çавраçилсем тесе калăн çав.

Иван Ахах та Тăван çĕр-шывăн патриочĕ пулнă, унăн нумаях та сыхланса юлман сăввисенче патриотизм кĕвви янăрать:

Питĕ кансĕр çанталăк...
Çил вĕрнипе юр вĕçет...
Лере, картасем панче,
Пĕр çын такама кĕтет.

Пирĕн хĕрлĕ салтак вăл,
Хуралта иккен тăрать.
Таса, харсăр, лăпкă вăл.
Шур тăшмансенчен сыхлать.

Çапла, граждан вăрçи вăхăтĕнчех аталанма пуçлать чăваш поэзийĕнче çарпа патриотизм теми. Илле Тăхтин "Колчак" поэмине, Çеçпĕл Мишшин "Пурнăçпа вилĕм" сăввине аса илмесĕр май çук çак темăна пăхса тухнă чухне.

Нимĕç фашисчĕн юнлă ури пирĕн çĕр çине пусман-ха...: Ытти çĕрсем тăрăх утать вăл, тĕнчене хăратать. Вăрçă пуçланичченех Уйăп Мишши çак темăна аталантарать:

Хĕççине хăйрать тăшман, пире юнать,
Тупписем тăсасшăн вутлă чĕлхине.
Юхтарасшăн-мĕн вĕсем пирĕн юна,
Тавăрасшăн каялла ĕлĕкхине.

Тупăсем пирĕн çĕр-шыв чиккисенче кĕрĕслетме пуçличчен çар тумне тăхăннă Александр Алка та сыхлăх, патриотизм темипе сахал мар сăвă янратать. П.Хусанкай, Ç.Элкер, С.Шавли вăрçă хăрушлăхĕ çинчен астутарсах тăнă, тăван çĕре хӳтĕлеме хатĕр тăма чĕннĕ. Иван Ивник та хăй сăввисенче тăшман пирĕн еннелле сăхăланса пăхнине, вăл пирĕн пуç çинче вилĕм çӳретесшĕн пулнине систернĕ.

Вăрçă... Хăрушă, ылханлă вăрçă. Унăн пĕрремĕш кунĕсенчен пуçласах нимĕç фашисчĕсене çиллĕн питлекенни Н.Шелепи пулнă. Акă мĕнле янăраççĕ унăн чĕнӳллĕ, çулăмлă сăмахĕсем:

Вырăс, чăваш, тутар,
Харăссăн утар,
Фашистсене часрах
Çапса аркатар!

Вăрçă кĕрлесе тухнă çул Шелепи утмăл тултарнă. Куçĕ пач курми пулса ларнă, анчах поэт халăхпа пĕрле пулса тăшмана хăвăртрах çĕнтересси çинчен çине-çинех çырать, тĕрлĕ ялсене, хуласене çитет.

Чăваш халăх поэчĕн Çемен Элкерĕн пултарулăхĕнче патриотизм теми тĕпписенчен пĕри пулнă. Çакна унăн сăввисен ячĕсемех кăтартса параççĕ: "Фашистсене вилĕм!", "Эпир аван пурнаттăмăр!", "Фашизм йăхне - çĕр тĕпне". "Вăл вилĕмсĕр" поэмăра Çемен Элкер чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ Иван Смирнов пулеметчик паттăрлăхне сăнланă.

Тăван çĕр çийĕн пульăсем шăхăрнă, снарядсем ӳлесе вĕçнĕ вăхăтра чăваш поэчĕсемшĕн вăрçă теми тĕп тема пулса тăрать.

Петĕр Хусанкайăн та çак вăхăтри пултарулăхĕ нумай енлĕ. Чĕнӳллĕ-йыхравлă сăвăсем, героикăлла поэмăсем хайлать вăл. Унăн лирикăлла геройĕ çак çулсенче йăлтах улшăнать теме те май пур. Çепĕç лирикăсем сахалланаççĕ, хивре сăвăсем нумайланаççĕ. Çирĕммĕш-вăтăрмĕш çулсенче унăн геройĕ хăйне уйрăмрах тыткаланă пулсан, халĕ вăл халăхпа пĕрле.

Тăван çĕршывăн аслă вăрçи çулĕсенче поэт совет çыннисен патриотизмне туллин те витĕмлĕн кăтартса пама тăрăшнă. Кĕске сăвăсем анчах мар, чылай анлă произведенисем çырать вăл. Вĕсен шутне чи малтан "Таня" лирикăлла-эпосла поэмăна кĕртмелле. "Аптраман тавраш" сăвăлла романра вара вăрçă питĕ анлăн, тĕрлĕ енлĕн курăнать. Унăн трагедийĕ, инкекĕ пур çынна та çитсе çапнине автор Аптрамансен кил-йышĕ урлă сăнлать. Кунта пĕр пысăк йăхăн темиçе ăру пурнăçĕ çинчен каланă. Çак йăх вăрçă тĕрĕслевĕ витĕр чыслăн тухать. Тылра - ĕçлет, вăрçăра - çапăçать, юратмалла чух - юратать.

Вăрçă темипе Ухсай Яккăвĕ те питĕ нумай çырнă. Унăн "Атă кунчинчи тетрадь"ярăмĕнчи сăввисене сахал мар çын юратса вуланă. Окопри салтакăн юрату туйăмĕсене, тунсăхне, çирĕп кăмăлне уçса паракан сăвăсем Ухсайăн чăнах та нумай.

Илле Тукташăн "Шурă кăвакарчăн" сăввине, Аркадий Ĕçхĕлĕн "Ăмăрткайăк" поэмине асăнмасăр ман сочинени тулли пулас çук. Вăрçă темине тытса пынисен шутнех çаксене кĕртмелле: Андрей Петтоки, Владимир Бараев, Василий Васькин.

Çĕр-шыв çийĕн хура пĕлĕтсем капланнă тапхăрта чăваш сăвăçисем ĕнентерӳллĕ, сăнарлă произведенисем çыраççĕ. Вĕсен кашни сăвви - тавăру бомби, кашни поэми - хăватлă орудисен залпĕ.

Ак çак йĕркесем вара Алканччĕ пулас:

Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.<br>
Сасартăк, пĕр харăс тăрса.<br>
Эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă, хирпе<br>
Васкарăмăр аслă вăрçа.

# II

# ВАТӐ ШУПАШКАРӐН ÇАМРӐКЛӐХНЕ, МАЛАШЛӐХНЕ ЭПӖ МӖНЛЕ КУРАТӐП.

Шупашкар, Шупашкар, Шупашкар.
Эс паратӑн пире пархатар.

Юрӑран.

Шупашкар... Мӗнле илемлӗ ят. Çак сӑмаха илтсен чӗре çӗкленет, кӑмӑл çемçелет. Шупашкар - Чӑваш республикин тӗп хули. Çак хулана пӗлмен çын пур-ши таврара? Ӑçта кайсан та, Шупашкар ятне асӑнсан, пурте сана хапӑл туса йышӑнаççӗ. Апла пулсан Шупашкар - пурте пӗлекен, юратакан хуласенчен пӗри.

Таçтан аякранах курӑнакан çӳллӗ çуртсем Шупашкар хулине илем кӳрсе лараççӗ. Малтан виç-тӑватӑ хутлӑ йывӑç çуртсем пулнӑ пулсан халӗ вара çултан çул вунӑ-вун ик хутлисем ӳсе-ӳсе лараççӗ. Ку анчах-и? Мӗн чухлӗ чаплӑ та илемлӗ парксем, урамсем, скверсем хулара. Шупашкарӑн мӑнаçлӑ завочӗсемпе фабрикисем, вӗренӳ, правительство учрежденийӗсем - пурте тӑван хулан пуян енӗсене палӑртаççӗ. Çакна пӗтӗмпех эпӗ халь куратӑп. Анчах тӑватӑ-пилӗк çул каялла Шупашкар хулине килсе курасси маншӑн ют çӗр-шыва кайнӑ пекехчӗ. Шупашкарта пӗрремӗш хут пулни халӗ те куç умӗнче. Ун чухне эпӗ улттӑраччӗ. Автобус çинчен ансанах темӗн чухлӗ машина мана çавӑрса илнӗн туйӑнчӗ. Ниçталла пусма та çук. Аннене аллинчен çатӑрласа тытрӑм та мӗн хуларан кайиччен вӗçертмерӗм. Магазинсене кӗрсен тӗлӗнсе каймалла. Мӗн кӑна çук иккен унта. Урамра тата халӑх кӑткӑ пекех хӗвӗшет . Çулпа пынӑ чух эпӗ çынсем çине пӑхса тӑнипе аннерен çухалнӑ та юлнӑ. Ӑçта пӑрахса кайтӑр ӗнтӗ шӑнкӑрч хӑй чӗппине вӗçме вӗрентмесӗр. Анне мана хӑвӑртах шыраса тупрӗ.Çавӑнпа манӑн пӗрремӗш экскурси вӗçленчӗ. Çавӑн чухнех эпӗ Шупашкар хули мана хӑй патне туртнине сисрӗм. Ку хуларан манӑн пачах каяс килмерӗ. Унтанпа сахал мар пулнӑ эпӗ Шупашкарта. Унӑн чаплӑ та мӑнаçлӑ, куç чарӑлса каймалла илемлӗ театрӗсенче те сахал мар пулнӑ, тап-таçа больницӑсенче те пулма тӳр килнӗ. Мӗн тери вашават калаçаççӗ иккен Шупашкар тухтӑрӗсем. Ыратни те çийӗнчех иртсе каять. Ытларах та ытларах килӗшме пуçларӗ мана çак хула. Вара манӑн тӑван хулара пурӑнас,

унпа татах та тĕплĕнрех паллашас кăмăл çуралчĕ. Халь ĕнтĕ эпĕ Шупашкар хулине Урал тăвĕсем çине кайса ярсан та палласа илĕп. Мĕнле вăйлă туртма пултарать иккен вăл хăй патне! Кашни чăваш çынни хăйне çак хулара тăван килĕнчи пек туять. Чăваш кăна та мар-ха. Мĕн чухлĕ ют çĕр-шыв çыннине курма пулать кунта. Нумайăшĕ вĕренет, вĕсемех вĕренсе пĕтерсен çакăнтах çемье çавăраççĕ, хăшĕсем Шупашкар хулине юратнипех ĕçлеме килеççĕ. Шупашкар тĕрлĕ наци çыннисене хăй патне хăнана чĕнет, вĕсене вăл тарават, хапăл туса йышăнать. Çапла вăл тĕрлĕ наци халăхне туслашма, çирĕп çыхăну тытма пулăшать. Мĕн чухлĕ поэт, писатель, юрăç, врач, лĕтчик, актĕр, профессор - çĕр-шывĕпе кăна мар, тĕнчипе паллă çынсем çуралса ӳсеççĕ юратнă хуламăрта. Шупашкарăн пур илемлĕхĕ, вăй-хăвачĕ çинчен каласа та пĕтерес çук. Анчах та ыр ут та такăнать, ыр çын та йăнăшать тесе ахальтен каламан иккен ваттисем. Кашни çыннăн, кашни çемьен, кашни хуçалăхăн, кашни хулан, кашни республикăн, кашни çĕр-шывăн хăйĕн çитменлĕхĕсем, йăнăшĕсем, йывăрлăхĕсем пур ĕнтĕ. Шупашкар тем пек чаплă хула пулсан та унăн хăйĕн кăлтăкĕсем. Малтанах эпĕ кашни çынран хăйĕнчен килекен ĕçсем пирки асăнасшăн. Шупашкара килсенех тирпейсĕрлĕхе асăрхама пулать: унта та кунта пушă кĕленче выртать, стенасем çине темĕн те çырса тултарнă. Малтан та пулнă вăл, анчах халĕ тата та вăйлăрах палăрма пуçларĕ. Мĕне пĕлтерет-ши ку? Камăн айăпĕ-ши кунта? Мĕн шутлать-ши хăнана килнĕ çын? Паллах, çакă чăвашăн сăнне кăтартса парать. Мĕншĕн çавăн пек тăватпăр-ши эпир? Çакă вăл чăвашăн культура шайĕ чакнине пĕлтерет. Час-часах тата чăваш çынниех хулана килсен вырăсла калаçнине илтме пулать. Енчен вырăс çыннипе пуплетĕн пулсан вырăслах калаçмалла, паллах. Анчах чăваш хулинче чăвашсем пĕр-пĕрин хушшинче вырăсла калаçни тăван чĕлхене хисеплеменнине пĕлтерет. Троллейбус,автобус çинче киревсĕр сăмахсемпе перкелешнине те нумай тĕл пулатăн. Ку та ĕнтĕ вăл чăваш çынни кăмăл-сипечĕпе илемсĕррине пĕлтерет. Чăваш хулинче чăвашла илемлĕ калаçни хула ятне татах та çĕклеме пулăшать пек туйăнать мана. Законсене пăхăнса туман ĕçсем те хулара сахал мар. Автобуссем çинче укçа-тенкĕсем кăлараса илесси, хваттерсем çаратасси, çынна вĕлересси йăлана кĕре пуçларĕ. Ку хăрушă мар-и? Ман шутпа,

айăпĕ укçа çителĕксĕр пулнинче. Нумайăшĕ ĕçсĕр лараççĕ, хăшĕсен ĕç укçи çемьене тăрантарма аран-аран çитет тата ăна вăхăтра парса пыманни те чăрмантарать. Халĕ пуриншĕн те йывăр самана. Укçа хальхи пурнăçра пысăк вырăн йышăнать. Шупашкарта вĕренме кĕме халĕ нумай заведенисенче укçа тӳлемелле тунă. Ман шутпа, ку пысăк йăнăш. Тен, темĕнле вĕренес текен ача укçа çителĕксĕр пулнипе вĕренме кĕреймест. Тепри вара, пуянраххи, ним йывăрлăхсăр вĕренет. Вара малалла утăм тăвас вырăнне хуламăр каялла каймĕ-ши? Анчах ку нумая пымĕ тесе шутлатăп. Ваттисем каланă пек, халăх улшăнать, пурнăç та улшăнать. Халăх ырăланасса, пурнăç лайăхланасса шанса тăратăп, мĕншĕн тесен чăвашсем ĕлĕкех вăйлă, çирĕп халăх пулнă. Тем пек йывăр асапа ĕлĕк чăтса ирттернĕ пулсан, çак йывăр саманана та çăнтерме вăй çитерĕ вăл. Юратнă Шупашкар татах та çĕнелсе, мăнаçланса пытăр, çынсем унăн пуянлăхĕпе, вăйĕпе тĕрĕс усă курма пултарччăр. Хамăн сочинение вĕçленĕ май манăн пĕр шухăш калас килет:"Юрататăп тăван Шупашкара, упрар ăна, хисеплер, çавнах ыттисене те сĕнер". -

## ЭПИР ПУЛНĂ, ПУР, ПУЛАТПĂР

(П.Хусанкай пултарулăхĕ тăрăх)

Шăрăх, сивĕ е йĕпе -
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!
П.Хусанкай

Петр Петрович Хусанкай, чăваш халăх поэчĕ, К.В.Иванов тата Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премисен лауреачĕ - чăваш поэзийĕн тӳпинче çутатса тăракан çăлтăрсенчен пĕри, хăй сӳнсен те çĕр çине пин-пин йăлтăр çутă сапаканни. Хăйĕн пурнăçне вăл пысăк ĕмĕтпе те шанчăкпа, хĕрӳ ĕçре, кĕрешӳре, пĕр вĕçсĕр шыравра ирттернĕ. П.Хусанкай пурнăç нушине те, пултару тертне те тӳснĕ. Çакă ăна хăйĕн пултарулăхĕнче чăваш халăхĕн йывăр пурнăçне, çутă пуласлăхне сăнласа кăтартма пулăшнă. Чăваш халăхĕ малалла та аталанса пырасса çирĕп шаннă поэт:

Тинкеретпĕр малалла,
Кайрине те халь куратпăр...

Манăн шухăшăмпала -
Эпир пулнă, пур, пулатпăр.

Поэт чăваш халăхне ытти халăхсемпе тан, «чун хавалĕпе те паттăр», «ăс-пуçран та катăк мар», «чĕрепе те шĕл кăвар» курать. Çакна пĕтĕмпех поэт хăйĕн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăввинче çирĕплетет.

Чăваш халăхĕ авалах пулса кайнă, йывăрлăхсене тÿснĕ, анчах та пĕтмен, аталаннă, юрри-сăввине, ташши-кĕввине, пин-пин тĕррине, çепĕç чĕлхине упраса хăварнă:

Каснă, вăтăрнă пире,
Кăкласа хăртман та мар-тăр,
Вăрлăх юлнă пурпĕрех:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

П.Хусанкай хăйĕн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăввинче чăваш халăхĕн хăйĕн юрри, хăйĕн ташши пурри çинчен савăнса, мăнаçланса çырса парать:

Пирĕн юрă, пирĕн тĕрĕ,
Пирĕн тÿсĕмлĕ сăмах
Упранса вăл çитсе кĕрĕ
Çут малашлăх таранах.

«Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăвăри шухăшсем чăваш халăхĕн историлле кун-çулĕпе килĕшсе тăраççĕ. Чăваш халăхне «каснă«, «вăтăрнă«, анчах та вăл пĕтĕм йывăрлăхсене чăтса ирттерет, хăйне валли çутă пуласлăх тăвас тесе кĕрешет. Чăваш халăхĕ тутарсен пусмăрне те тÿссе ирттерет. Вырăс халăхĕпе пĕрлешнĕ хыççăн та унăн пурнăçĕ çăмăлах пулмасть.

П.Хусанкайăн чăваш халăхĕн историлле кун-çулне сăнласа кăтартакан произведенисем тата та пур. Акă, тĕслĕхрен, унăн «Çÿлелле» поэми, «Аптраман тавраш» сăвăлла романĕ. Поэтăн «Çÿлелле» хайлавĕ - тĕнче уçлăхĕн малтанхи паттăрĕсене халалласа, чăваш халăхĕн историлле кун-çулĕ çинчен шухăшласа çырнă лирикăлла поэма. Поэмăри герой - йывăр пурнăç нушине тÿснĕ, анчах çутă ĕмĕтне çухатман çын - тĕнчери халăхсем ĕмĕртенпе кĕтнĕ ĕмĕт пурнăçланнишĕн савăнать. Тĕнче уçлăхне парăнтарни этемлĕхшĕн çĕнĕ самана пуçланнине ăнланать вăл:

Эппин, пуçланчĕ çĕнĕ эра.
Шав космонавт та космонавт..

Кам халиччен те ӗненмерӗ -
Ак уншӑн тепӗр ҫӗнӗ факт.

Чӑваш, чӑнах та, пурӑнать, малалла утать. Паллах, пурнӑҫ йывӑрлӑхсемсӗр пулмасть. Анчах вӗсене ҫӗнтерме пулать:

Сехетсерен ҫӗнелекен ҫӗр
Пире чӗнет малтан мала.
Пур йывӑрлӑхсене те эпӗр
Ҫӗнтерӗпӗр Андриянла.

Чӑваш халӑхӗ вӑрҫӑ-харҫӑ, выҫлӑх, тӗрӗсмарлӑх нушине чӑтӑмлӑн ҫӗнтерет. Тӗнче уҫлӑхне хӑпарма та вӑй ҫитерет. Апла пулсан вӑл пулнӑ та, халӗ те пур, пулать те.

«Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!» - тенӗ П.Хусанкай. Ҫак сӑмахсене ҫирӗплетекен йӗркесем «Аптраман тавраш» сӑвӑлла романра та пур. «Аптраман тавраш» никӗсне поэт халӑх пурнӑҫӗнче пысӑк пӗлтерӗшлӗ вӑхӑт талккӑшне, Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫи тапхӑрне, хывнӑ. Ку романра эпир чӑваш чӑнах та хастар пулнине пӗлетпӗр. Аптрамансен йышӗнчи ҫынсем ӗҫри ҳастарлӑхпа, ҫапӑҫури харсӑрлӑхпа, кӑмӑл пиҫӗлӗхӗпе палӑрса тӑраҫҫӗ. Романра халӑхӑн ӗҫ-хӗлне, йӑли-йӗркисене, кулленхи пурнӑҫӑн паллисене сӑнланисем нумай. Акӑ, тӗслӗхрен, утӑ ҫулнине, ҫамрӑксем вӑйӑ вылянине, ташлани-юрланине кӑтартакан ӳкерчӗксем. «Аптраман тавраш» романра эпир халӑх пурнӑҫне чӗррӗн, юхӑмра, ӳсӗмре, аталанура куратпӑр. Эппин, чӑваш халӑхӗ пулнӑ, халӗ те пур, малалла та пурӑнать. Петӗр Хусанкай халӑх пуласлӑхне ӗҫченлӗхре, культура ӳсӗмӗнче, илем енне туртакан чун хавалӗнче курать. Ҫав пӗрлӗхлӗ вӑя шанса поэт «Ҫук ҫынна чарас хӑват!» - тесе ҫирӗплетет.

Петӗр Хусанкайӑн «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!» сӑвви «Ҫӳлелле» поэми, «Аптраман тавраш» сӑвӑлла романӗ халӑх асӗнчен нихӑҫан та тухмӗҫ. Мӗншӗн тесен вӗсене вуласа ҫынсем чӑваш халӑхӗн историлле кун-ҫулӗ ҫинчен пӗлеҫҫӗ. Ҫак произведенисем П.Хусанкай сӑмахӗсене ҫирӗплетсе параҫҫӗ. «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр!» - тенӗ П.Хусанкай. Ман шутпа, ҫак сӑмахсем питӗ тӗрӗс, мӗншӗн тесен чӑваш халӑхӗ иртнӗ ӗмӗрсенче те пулнӑ, халӗ те пур, хӑйӗн пуласлӑхӗшӗн тӑрӑшать. Апла пулсан вӑл малашне те пулать. Эппин эпир ҫак сӑмахсене мӑнаҫлӑнах калама пултаратпӑр:

Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

## ЧĂВАШ ХĔРĔН ИДЕАЛĔ

Идеал. Мĕне пĕлтерет-ха çак сăмах? Мĕнле пулмалла-ши идеал? Паллах, кашни çыннăн хăйĕн идеалĕ пулма кирлĕ. Вăл хăвăнтан ăсларах, илемлĕрех, ĕçченрех, тавçăрулларах, пултаруллăрах пулмалла ĕнтĕ.

Мĕн авалтан чăваш халăхĕ хăйĕн илемлĕ те сăпайлă, ĕçчен хĕрĕсемпе палăрса тăнă. Чăваш хĕрĕ ирхи шăпчăкпа пĕрле тăрса мĕн кас пуличченех ĕçленĕ: пӳрт-çуртне тирпейленĕ, пир тĕртнĕ, тырă вырма тухнă... Каçхине вăййа тухсан вара ташă-юрăра хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Чăваш хĕрĕ хурăн пек яштака кĕлеткеллĕ, çийĕнче аркăллă кĕпепе, тĕрленĕ саппун, пуçĕнче тĕрленĕ тутăр. Мĕн тери илемлĕ вăл!

К.В.Ивановăн «Нарспи» поэминчи тĕп герой шăпах çавăн пек хĕр. Нарспи - чăваш хĕрĕн чăн-чăн идеалĕ. Унра - хĕрĕн мĕнпур ырă енĕсем сăнланнă. Акă мĕнле сăнлать автор ăна:

Икĕ хуçĕ хуп-хура
Икĕ хура шăрçа пек.

Сăн-пичĕпе çеç мар, кăмăлĕпе те ырă Нарспи. Унăн ăшă кăмăлне, чун çепĕçлĕхне автор питех те лайăх кăтартса панă. Ĕçре мĕнле маттур тата Нарспи:

Ирех тăрать, тумланать,
Нарспи ĕçе тытăнать.
Е пир тĕртме ларать те...

Çавăн пекех А.Артемьевăн Салампине те чăваш хĕрĕн идеалĕ теме пулать. Вăл пире хăйĕн илемĕпе, сăпайлăхĕпе тата ĕçченлĕхĕпе тыткăна илет.

Çапла, чăваш хĕрĕ яланах хăйĕн илемĕпе, сăпайлăхĕпе тата ĕçченлĕхĕпе палăрса тăнă. Ман шутпа, шăпах çакăн пек хĕрсем пирĕншĕн идеал пулса тăраççĕ. Эпĕ чăваш хĕрĕ, манăн та Нарспипе Салампи пек пулас, тăван халăхăн чысне упрас килет.

Паллах, чăваш хĕрĕсем пурте ман пек шутламаççĕ, хăшĕ-пĕрисем хăйсене сăпайлă тытма пĕлмеççĕ. Тепĕр чух хула урамĕнче çакăн пек ӳкерчĕк курма пулать: икĕ хĕрупраç пыраççĕ:

пĕри ӳсĕр, тепри çăварне пирус чикнĕ. Çитменнине тата усал сăмахсемпе перкелешеççĕ. Паллах, вĕсем çук пурнăçран мар, пур пурнăçран иртĕхеççĕ. Пĕлместĕп, мĕнле каччă вĕсене качча илсе чуша курĕ? Ачи-пăчин «анне» тесе мĕнле чĕнмелле вĕсене? Чăваш хĕрĕсем хушшинче çакăн пеккисем пулнишĕн ман пит хĕрелет. Шел пулин те эпĕ вĕсене нимĕнпе те пулăшаймăп.

Чăваш хĕрĕн сăнĕ-пуçĕ, пĕвĕ-кĕлетки, утти, тыткаларăшĕ мĕнле пулмалли фольклор тексчĕсенче питĕ лайăх курăнать:

Пирĕн ялăн хĕрĕсем
Ялан шăлан чечек пек,
Йĕркипе ларнă чĕкеç пек,
Çуса çакнă нухрат пек,
Йĕп кусĕнчи пурçăн пек,
Кача пӳрни çĕрри пек.

Ĕçлемесĕр каçăрăлса çӳрекен тăсланкă хĕрсене юратман чăваш. Калаçма пĕлмен пуклак чĕлхеллĕ хĕрсем те чăвашăн кăмăлне килмен. Ахальтен мар сăмахлăхра ырă хĕрсен чĕлхи те чĕкеç чĕлхи. Сасси кайăк сасси евĕрлĕ. Утти е пăрчканăн, е акăшăн. Пĕвĕ Атăл хăви пек.

Пирĕн ялсенче, хуласенче ун пек хĕрсем сахал мар. Юрланине, ташланине пăхса вĕсене юратса пăрахма пулать. Ĕçченлĕхне кура кăмăлаççĕ, хисеплеççĕ вĕсене.

Пирĕн ялта пĕр учительница пур. Çамрăкскер. Виçĕ çул каялла университет пĕтернĕ, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Питĕ çепĕçскер хăй. Юрра та, ташша та ăста. Культура çуртĕнче драма кружокне ертсе пырать. Ял çыннисем çапла калаççĕ ун çинчен: «Куçĕ пы-ы-сăк, çӳçĕ вă-ă-рăм, кăмăлĕ ла-а-йăх, кам ăна качча илсе савăнĕ-ши?»

Районти учительсен конкурсĕнче пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ вăл. Республикăри хаçатсенче унăн сăввисемпе калавĕсем пичетленсех тăраççĕ.

Пур енчен пăхсан та вăл - идеал. Манăн та ун пек пулас килет.

## СĂПАЙЛĂХ ЭТЕМЕ ИЛЕМ КӲРЕТ

Эпĕ шутланă тăрăх, сăпайлăх вăл - çын хăйне халăх хушшинче тытма пĕлни, вăтанма пĕлни, çынсемпе яланах ырă

кăмăллă пулни. Кашни çыннăн сăпайлă пулмалла, вара ăна пурте юратĕç, хисеплĕç.

Тĕнче ырă çынсемсĕр мар. Пурах çав чунĕпе илемлĕ, сăпайлă çынсем. Пысăк ушкăнра пĕр-икĕ çын та пулин тупăнатех. Тĕттĕм пӳлĕмри хĕвел шевли пекех вĕсем. Вĕсем пурне те ăнланма, пулăшма тăрăшаççĕ.

Çут çанталăк çынна илемлĕ тунă. Илемлĕх вара сăн-сăпатра кăна пулмалла мар. «Хитре пуличчен телейлĕ пул»,- тенĕ ваттисем. Илемлĕх чунра пултăр. Сăпайлă та вашават çынсем паянхи обществăн илемлĕ «чечекĕсем». Анчах вĕсем питĕ сахал. Тен, çавăнпа та вĕсем хитре.

Сăпайлăх этеме илем кӳрет тенине ваттисенчен час-часах илтме пулать. Анчах мĕне пĕлтерет-ши çак сăмах? Мĕн-ши вăл сăпайлăх? Пур-ши вăл кашни çынра? Паллах, ку ыйтусем çине хурав пама çăмăлах мар. Ман шутпа, çын сăн-питпе кăна мар, ĕçпе те сăпайлă пулмалла. Тен, çавăнпа та сăпайлăх этеме илем кӳрет тенĕ.

Хăшĕ-пĕрисем сăпайлăха сăн-питре тата илемлĕ тумланнинче кураççĕ. Çакăнта çеç-ши сăпайлăх? Çук паллах. Енчен те этем сăн-питпе илемлĕ, хитре тумланать, анчах ĕçе юратмасть, çынсемпе сиввĕн калаçать пулсан ăна сăпайлă теме пулать-ши? Çак ырă та илемлĕ ята илтес тесен, ман шутпа, ĕçе юратса ĕçлемелле, ыттисен хуйхине ăнланса пулăшма хатĕр пулмалла. Вара çĕр çинче татах та илемлĕрех, савăнăçлăрах пулĕччĕ.Сăпайлăх тенине эпир пурăнан пурнăçра çеç мар, тĕрлĕ калавсемпе повеçсенче те, сăвăсемпе романсенче те тĕл пулатпăр. Илер-ха, тĕслĕхрен, А.Артемьевăн “Салампи” романне. Автор хăйĕн хайлавĕнче кама сăпайлăрах сăнласа парать-ха? Паллах, тĕп сăнара - Салампие. Чăнах та, çак илемлĕ те ĕçчен хĕре сăпайлă теме пулать. Вăл нихăçан та пуçне усмасть, малашлăхшăн тăрăшать. Пуçне каçăртмасть, вĕçкĕнленмест. Музăна вара сăпайлă теме пулать-ши? Ман шутпа, вăл сăнĕпе кăна илемлĕ, чунĕпе вара чухăн. Пĕлместĕп, тен, хăшĕ-пĕриншĕн Муза та сăпайлă.

Муза пек çынсене чăн пурнăçра та тĕл пулма пулать, анчах Саламписем вара сахал. Ку, паллах, пурне те пăшăрхантарать. Мĕн тăвăн, кашнин хăйĕн пурнăçĕ. Хăшĕсем вăрласа пуйса каяççĕ те

сăпайлăх мĕнне те манса каяççĕ, теприсем чухăн пурăнаççĕ пулсан та сăпайлăх çинчен манмаççĕ.

Маншăн чи сăпайлă çын вăл - тăван анне. Тен, эсир мухтанать тесе шутлама пултаратăр. Анчах та ман анне çак ята чăннипех те тивĕçлĕ. Ăна ялта пурте хисеплеççĕ ырă кăмăлĕшĕн, ĕçченлĕхĕшĕн. Ачасем те ăна шкулта анне тесех чĕнеççĕ, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн вĕренекенĕсене кирек хăçан та ăнланать, яланах ырă сăмахĕпе пулăшма тăрăшать.

Мĕн пĕчĕкренех эпĕ аннене сăнатăп, вăл мĕн тери сăпайлă вĕрентекен пулнине асăрхатăп. Эпĕ те ун пек пуласшăн. Пĕлместĕп, пурнăçланĕ-ши ман çак пысăк ĕмĕт?

Аттепе анне пĕчĕклех пире сăпайлă, ĕçчен пулма вĕрентрĕç. Вĕсем пире шанаççĕ. Халĕ, çитĕнсе çитсессĕн, юратнă аттепе аннен ырă ятне ярас марччĕ, вĕсен шанчăкне тӳрре кăларасчĕ, ĕмĕтне пурнăçласчĕ, çĕр-шыва юрăхлă çын пуласчĕ.

Туссем! Сăпайлăх этеме илем кӳрет тенине ан манăр! Хăвăрăн ырă та сăпайлă аçу-аннӳсем пек, Салампипе Алмазов пек пулма тăрăшăр. Вара йывăр самантра та çăмăлрах пулĕ.

Мана ялан пĕр шухăш канăç памасть. Хăнăхнă тăрăх, чăваш йăваш, сăпайлă çын теççĕ. Анчах нумай чухне, ман шутпа, пирĕн çынсем сăпайлă пулас тесе мĕскĕнленсе çӳреççĕ.

Сăпайлă çын, ман шутпа, ырă кăмăллă, çынна инкекре пулăшакан, хĕрхенме пĕлекен пулмалла.

Ачасене сăпайлă пулма пысăклансан мар, сăпкара выртнă чухнех вĕрентмелле. Вĕсен сăпайлăхĕ шкула çӳреме пуçласан лайăх палăрать: пĕрисем аслисене сывлăх сунаççĕ, ваттисене пулăшаççĕ, тусĕсемпе хирĕçмеççĕ, теприсем вара вĕрентекенсене те сывлăх сунмаççĕ, ваттисене йĕкĕлтеççĕ, хисеплемеççĕ. Çынсене те икĕ ушкăна пайлама пулать: пĕрисем сăпайлă, теприсем сăпайсăр. Сăпайлисем яланах ырă кăмăллă, вĕсем патне çынсем те туртăнаççĕ, вĕсемпе канашлаççĕ, туслашаççĕ. Теприсем ытти çынсем çине сиввĕн, мăнкăмăллăн пăхаççĕ, хаяртарах курăнаççĕ.

Чун-чĕре ăшшине çухатса пыраççĕ вĕт халĕ çынсем. Ĕлĕкрен пыракан чăваш йăлине - çынна хĕрхенессине, йывăр вăхăтра çынна пулăшассине - манăçа хăвараççĕ. Ырă кăмăл, намăс-симĕсе пĕлесси, çынна хисеплесси, юратса пурăнасси манăçа тухать. Ĕлĕкрех пĕр-пĕр киревсĕр ĕç тусан е айăпа кĕрсен: "Мĕнле намăс

мар сана",- тесе асăрхаттарнă. Халĕ вара темĕнле киревсĕр ĕç тусан та хăшĕ-пĕрин пичĕ хĕрелмест. Ун пеккисен питне кĕççе çĕленĕн туйăнать вара.

Пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем мĕн ĕлĕкрен ырă кăмăллă та сăпайлă пулнă, хăйсене мăнна хуман. Тĕслĕх илмелле пирĕн вĕсенчен.

Акă шкул пĕтерсе хулана вĕренме килнĕ ял çамрăкĕсем вырăсла калаçма, хăйсене питĕ ирĕклĕ тыткалама пуçлаççĕ. Вĕсем Библире çырнă йĕркесене манаççĕ. "Турă панă, атте-анне пилленĕ чĕлхене ан ман",- тенĕ унта.

...Сăпайлăх ĕлĕкренпех этеме илем кӳрсе тăнă. Çак илем сын сăнĕнче те, чунĕнче те палăрса тăрать. Сăпайлă çыннăн сăнĕ те ырă кăмăллă, хăйне май ачашлăх тапса тăрать унра. Паллах, кашни çын хăйне май ăнланать сăпайлăха. Çыннăн сăпайлăхĕ ытти çынсемпе калаçнă чухне кăна палăрмалла мар. Сăпайлăх чĕререн тухмалла.

"Хальхи çамрăксем тӳрккес, никама та хисеплемеççĕ."-тенине час-часах илтме пулать. Мĕнрен килет-ши çакă? Паллах, пурнăç пĕр вырăнта тапăртатса тăмасть ĕнтĕ, малаллах шăвать, улшăнать. Çавна май çынсем те улшăнаççĕ. Халĕ çыннăн пурнăçĕнче укçа-тенкĕ, мул пухасси мала тухма пуçларĕ, кăмăл-туйăм сăпайлăхĕ, ыркăмăллăх çинчен сахалрах та сахалрах калаçаççĕ.

Ман шутпа, сăпайлă çын ашшĕ-амăшне, ватăсене хисеплет, тус-юлташĕсене йывăрлăхра пулăшма тăрăшать. Укçа-тенкĕпе пулмасан та ăшă сăмахпа пулăшать вăл. Ахальтен мар ĕнтĕ: "Ăшă сăмах этемрен те лайăхрах",-теççĕ.

Сăпайлăх - çыннăн чи кирлĕ енĕсенчен пĕри. Енчен те çын сăпайлăхне çухатать пулсан, вăл хăйĕн ăшри, чун-чĕрери илемне çухатать. Çакă вăл çыннăн чунĕ пушанса, чухăнланса юлнипе пĕр танах.

## III
## ВИЛĔМРЕН ТЕ ВĂЙЛĂРАХ

(Л.Агаковăн вăрçă вăхăтĕнчи хайлавĕсем тăрăх).

Вăрçă терчĕ килнĕçем

Халăх пулчĕ çĕнекен,
Паттăр хамăрах, атьсем,
Юмахри пекех иккен.

Вăрçă... Мĕн тери тискеррĕн те хăрушă илтĕнет çак сăмах!

Фашистсем пирĕн аслă Тăван çĕршыв çине ултавлăн, сĕмсĕррĕн, вăрă-хурахла тапăнса кĕни совет çыннисене калама çук тарăхтарса янă. Тăнăç ĕçпе пурăннă çынсем тăшман эшкерĕсене хирĕç çĕкленнĕ, аякри тылри халăх фронта туртăннă. Салтак çулĕ çитмен яш-кĕрĕм çар комиссариачĕсене пырса тулнă. Хĕр-упраç та фронта туртăннă. Тăванĕсем хаяр çапăçура пуçне хуни çинчен пĕлсен ваттисем те чăтса тăрайман, фронта кайнă.

Тăван çĕр-шыв ирĕкĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă хаяр вăрçă тăватă çул кĕрленĕ. Тĕнче историйĕшĕн тăватă çул пĕчĕк самант кăна. Этемлĕх историйĕшĕн вара çав çул нихçан та асран тухми вăхăт, вăрăм-вăрăм çул çинче аякран курăнса ларакан чикĕ юпи пекех. Вăл юпа çине хальхи ăрусем кăна мар, малашнехи çынсем те чарăна-чарăна тăрса пăхĕç, унта мĕн çырнине тимлесе вулама тăрăшĕç. Анчахта 1941-1945 çулсенче асар-писер çаврăннă вăрçă историне тĕрĕссĕн çырса пĕтереймен-ха. Унăн халиччен паллă пулман страницисем çулсеренех тупăнаççĕ, фашизм тискерлĕхне хирĕç паттăррăн çапăçнă çынсен ячĕсем тĕрĕс-тĕкеллĕн таврăнаççĕ.

Тăватă çул историшĕн çав тери кĕске вăхăт шутланать. Анчах çав çулсем Совет çĕр-шывĕн кун-çулĕнче, унăн литературинче, аталанăвĕнче питĕ паллă тапхăр - паттăрлăхпа çĕнтерӳ тапхăрĕ - пулса юлнă.

Ытти халăхсемпе пĕрле чăваш халăхĕ те вăрçăра паттăррăн çапăçнă, тылра ырми-канми ĕçленĕ. Чăваш çĕр-шывĕнче нумайăшĕ Совет Союзĕн Геройĕ ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Çав шутра писательсем те. Вĕсем те кĕрешĕве хастаррăн хутшăннă. Нумăйăшĕ алла хĕç-пăшал тытса, Тăван çĕр-шывшăн çапăçма фронта тухса кайнă. Çав шутра Л.Агаков та. Вăл икĕ вăрçăра çапăçнă. Çав хушăрах вăрçă çинчен нумай произведенисем çырнă. Агаков кĕнекийĕсенче тăван халăха юратакан, хӳтĕлекен, нимĕнле йывăрлăхсенчен те хăраман геройсем. Унăн нумай произведенийĕсенче шкул программине кĕртнĕ. "Пĕрре, çуркунне",

"Салтак ачисем", "Ылтăн вăчăра", "Яланах салтак". Тӳрременех калама пулать, Агаков хăйĕн произведенийĕсене пурне те пурнăçран илсе, пурнăçра пулнă фактсемпе усă курса çырнă. Çавăн пекех Л.Агаков вăрçă çинчен нумай произведенисем çырнă. Вĕсен шутне "Ылтăн вăчăра", "Салтак ачисем", "Партизан Мурат" кĕреççĕ. Вăрçă хăрушлăхне, тăшмансен ирсĕрлĕхне питĕ витĕмлĕ çырса кăтартнă. Акă унăн "Ылтăн вăчăра" повеçне илер-ха. Унта фашистсен карателĕ Генрих Шварцăн тискер ĕçĕсене уççăмăнах куратпăр. Вăл Ванюш ашшĕн ылтăн вăчăрине илет, амăшĕн аллинчи çĕррине тухманнине кура пӳрнине касса илет. Çавăн пекех пĕтĕм ял халăхне персе вĕлернĕ чух вунпилĕк çулхи Ванюш пĕчченех тарса юлать. Вăл виçĕ çĕртен аманнă пулсан та парăнмасть, тăрса утма тăрăшать. Произведени вĕçĕнче çакна куратпăр: Ванюш Генрих Шварца пусĕпех тĕп тăвать.

Агаковăн тепĕр произведенийĕ - "Салтак ачисем". Унти ĕçсем вăрçă вăхăтĕнче тылра пулса иртеççĕ. Ку повеçре Ванюкпа Санюк паттăрлăхне куратпăр. Вĕсем партизан пулса разведкăна каяççĕ. Салтаксене мĕн вăй çитнĕ таран, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр пулăшма тăрăшаççĕ. Çавăн пек хастар çынсем кăна ирсĕр тăшмана тĕп тума пултарнă. Пирĕн тăнăç пурнçĕшăн хăйсен ĕмĕрĕсене шеллемесĕр кĕрешнĕ. Совет халăхĕ лайăх пĕлсе тăнă. Тăван çĕр-шыва, унăн ирĕкĕпе малашлăхне сыхласа хăварнă. Паттăрсен ĕçне-хĕлне нихçан та манмăпăр, ăна хамăр хастарлăхпа пуянлатса пырăпăр. Паттăрсене мухтав та чыс ĕмĕре!

## ТЕЛЕЙ ХАМĂР АЛĂРА
(А.В.Емельянов хайлавĕсем тăрăх)

Телей выртмасть çул çинче,<br>Ăна тупма пĕлмелле.<br>Ваттисен сăмахĕ

Телей... Мĕне пĕлтерет-ха телей, пур-ши вăл пирĕн пурнăçра? Тата мĕнрен килет-ха пирĕн телей?

Çак сăмаха кашни çын тĕрлĕрен ăнланать. Анчах паянхи пурнăçра нумайăшĕ пĕр пек шухăшлать: телей - укçара. Укçа вара

темĕн те тума пултарать: тĕрĕс çултан та пăрать, юратакан чĕресене те уйăрса ярать, пĕр-пĕринпе хирĕçтерет. Теприсем телее туслă çемьере курăççĕ. Çемье кашнине кирлĕ. Ахальтен каламан ĕнтĕ çемье вăл пурнăç чаракĕ тесе. Ыттисем телее юратнă ĕçĕнче тупаççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсенче пĕтĕм вăйне хураççĕ. "Ĕç çынна илем кӳрет", - теççĕ ватăсем. Хăшĕ-пĕрисем вара чăн пурнăçра телей пулма та пултараймасть теççĕ. Çакăн пек шухăшлакансемшĕн телей юмахра пĕрех, çунатлă ăнлав.

Анатолий Емельянов хайлавĕнче "телей" сăмаха мĕнле курма пулать-ха? Эпĕ çак ăнлава "Хура кăрăçра" çапла куратăп. Кашниех телей курма çуралать. Анчах кашни çыннăн шăпи расна. "Турă телей валеçнĕ чух килте пулман", - теççĕ халăхра хăйсене телейсĕр текенсем. Те килĕнче пулман повеçри Урине, те тупнă телее сухатнă. Унăн пурнăçĕ телейлĕ теме çук.

Уринен те пурнăçри чи савăнăçлă вăхăт пулнă. Эх, çамрăклăх, çамрăклăх, мĕнле хаваслă самант. Шăп та шай çак вăхăтра çуралать пĕрремĕш юрату. Юрату - чи çепĕç, чи хӳхĕм туйăм.

"Эх, юрату, юрату,
Çиçĕм пек сан хăвату.
Çиçĕм çиçет сухалать,
Юрату ĕмĕр юлать," - тесе юрлаççĕ.

Урине чĕринче те çулăмланать юрату кăварĕ. Александр Артемьев çапла çырнă:"Юрату - çулăм, уйрăлу - кăвар, пĕчĕк çулăма çил часах сӳнтерет, ялкăшса çунакан çулăма татах вăйлатать". Урине туйăмĕ вăйлă, анчах вăл хăйĕн телейне аллинчен вĕçертет. Вăл савман çынна качча тухать. Савмасăр мăшăрлансан телейлĕ çемье пуласса шанма пулать-ши? Çук, паллах. Çакна эпир Урине сăнарĕ урлă куратпăр. Крысловсем ача-пăчаллă та пулаççĕ. Телейне Урине ывăлĕсенче курать. Унăн упăшкин чун-чĕри пуяс шухăшпа тулнă. Пуяс ĕмĕт ăна чул чĕреллĕ тăвать, тĕрĕс çултан пăрать. Çакăнпа кăна лăпланмасть Крыслов, ывăлĕсене те хăй çулĕпе илсе каять. Вăл арăмне итлемест, нимĕн вырăнне те хумасть. Урине мĕн ирччен пуçласа тĕттĕм пуличчен килĕнче кăштăртатса çӳрет, кунĕпе ура çинче, аллинчен ĕç каймасть, канса илме те вăхăт çук унăн. Çакă Уринен

сывлăхне хавшатать, тăван кил ăшшине те туймасть-çке. Кил ăшши çукки ăна пушшех те пăшăрхантарать.Урине пĕтĕмпех хăй ăшĕнче тытать, хуйхи-суйхине никампа та пайламасть. Ăна тата тепĕр япала канăç памасть: унăн иккĕмĕш ывăлĕ - савнă çыннинчен. Вăл ялан пĕрремĕш юратăвне аса илтерет. Пĕрремĕш юрату ялан асăмра юлать теççĕ-çке. Савнă çынни колхоз председателĕнче ĕçленĕ май ăна кунсерен курма тивет. Вăл куç умĕнче чух Уринене питĕ йывăр. Кĕçĕн ывăлĕн чăн-чăн ашшĕ кам пулнине халлĕхе никам та туймасть. Çакă Уринене лăпланма пулăшать.

Уринен аслă ывăлĕ çемье те çавăрнă, халĕ Çĕнĕ Шупашкарта пурăнать. Пурте пур темелле унăн, анчах вăл та ашшĕ пекех çăмăл пурнăç шыраса вăрă ĕçĕпе çыхланнă.

Урине кĕçĕн ывăлне шанать. Анчах вăл та ашшĕнчен юласшăн мар. Пур пĕрех ăна колхоз председателĕ çак ĕçе пăрахăçлаттарать. Крысловсен кĕçĕнни хăй те туять: çак çул телейлĕ пурнăç патне илсе çитермест. Паллах, ку пуйма пулăшать. Анчах телей-ши çакă? Пĕтĕмпех ăнланать Урине ывăлĕ. Çăлăнăç шыраса вăл пиччĕшĕ патне тухса каять. Урине пиччĕшĕ ун пирки çапла калать: "Вăл пирĕн пек пулмĕ, таса çын пулĕ, хăйĕн телейне тупать вара".

Крысловсен кĕçĕнни çамрăк хĕрпе паллашать. Муза - илемлĕ те таса хĕр. Урине телейлĕ пулаймарĕ, тен, ун тĕпренчĕкĕ çак хĕрпе телей тупать.

Телее пĕрре алăран вĕçертсен, тепре килет-ши вăл? Урине çамрăк вăхăт иртнĕ чух телей кураймарĕ. Те шăпи çапла пулмалла пулнă, те ун чух вăл пысăк йăнăш тунă. Çапла, йăнăш тунă вăл. Телейĕ юнашарах утнă-çке, анчах ăна сыхласа хăвараймарĕ. Çавна пула Уринен пурнăçĕ те ăнăçлă пулаймарĕ.

Куратпăр ĕнтĕ, телей хамăртан килет. Пĕтĕмĕшле мĕнле ăнланатăп-ха эпĕ çакна?

Мĕн-ши вăл телей?  
Çутă сывлăмлă ир.  
Сарă тулăллă уй-хир,  
Пурнăç панă анне,  
Ырă чунлă атте,

Ытарми ачасем -
Хӗвел пек пепкесем.

Чӑнах та телей хамӑр алӑра. Вӑл кашни ҫыннӑн пур, анчах ӑна тупма пӗлмелле. Пирӗн чун-чӗрере йывӑр пулсан эпир хамӑра телейсӗр тетпӗр, кӑмӑл лайӑх чух - телейлӗ. Ҫавӑнпа та пурнӑҫра хамӑр валли вырӑн тупма пирӗн кӗрешмелле. Ӗмӗтленнисем пурнӑҫа кӗрсе пырсан эпир чӑннипех те телейлӗ. Телейлӗ пуласси пирӗнтен хамӑртан килет, ӑна ҫӗнсе илмелле.

## РЕВОЛЮЦИЧЧЕНХИ ЧӐВАШ ПИСАТЕЛӖСЕН ПРОИЗВЕДЕНИЙӖСЕНЧЕ САНЛАННӐ ЯЛ ПУРНӐҪӖ

Революцичченхи чӑваш писателӗсем хӑйсен произведенийӗсенче ытларах ял пурнӑҫне сӑнланӑ. Вӗсем произведенийӗсенче ял пурнӑҫне питӗ анлӑн, тӗрӗс кӑтартса панӑ. Вӗсен произведенийӗсенче эпир хресчен кил-йышӗн хурлӑхлӑ шӑпине куратпӑр.

Сӑмахран, Михаил Федоровӑн "Арҫури" поэмине илер. Унта ял халӑхӗн йывӑр пурнӑҫне сӑнланӑ. Михаил Федоровӑн "Арҫури" поэми - чӑваш ҫырулӑхӗн чаплӑ палӑкӗ. Вӑл халӑх хушшинче хӑвӑрт сарӑлнӑ. Ӑна хутла пӗлекенсем ҫырса илнӗ, пӗрре-иккӗ илтнисем сыпӑкӑн-сыпӑкӑн астуса юлнӑ. "Арҫури" поэмӑн никӗсӗнче чухӑн халӑх выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнни, ӑна чир-чӗр, тӗшмӗш хупласа тӑни, тӗрлӗ хырҫӑ-марҫӑ, тӳре-шара, ял куштанӗсемпе пуянӗсем хӑратса тинкине кӑларни выртать.

Поэмӑра чухӑн хресчен шӑпи куҫ умне тухса тӑрать. Хӗветӗр - поэмӑри тӗп сӑнар. Вӑл питӗ чухӑн пурӑнать. Унашкал чухӑнсем чӑваш ялӗсенче пиншерӗн пулнӑ. Хӗветӗрӗн кил-ҫуртне ӑшӑтма вутти ҫук, лаши ырхан, вылькӑх-чӗрлӗхне усрама ыраш улӑмӗсӗр пуҫне ним те ҫук. Арӑмӗ те сывӑ мар, хӗлӗн-ҫӑвӗн хӗн курать. Ачисем вӗтӗ, аллисем ӗҫ патне пырайман-ха, ҫиме ҫӑкӑрӗ те ҫитсе пыраймасть.

Хӗветӗр каҫа хирӗҫ пӗччен вӑрмана вутӑ патне тухса каять. Унпа пӗрле никам та пыраймасть. Карчӑк Микули те инкекрен хӑтӑлса юлас шутпа Ишек чиркӗвне кӗлтума каять. Лавраҫ пиччен

те ҫав вăхăтра салтак ăсатмалла килсе тухнă. Ҫапла вара поэмăра тепĕр герой тухса тăрать - пурнăҫ чăнлăхĕ. Хĕветĕр вăрманта халăх халапĕнчи ырă-усала курса пĕтет. Пĕрре вăл ăна ватă ҫын пек шур сухаллăн, качака пек мăйракаллăн е вилнĕ карчăк, е таркăн салтак, е ҫурхи сурăх, е анчăк пек курăнма пуҫлать. Арҫури сăнарне питĕ шÿтлĕ те кулăшла сăнланă.

Поэмăра арҫури сăнарĕ ҫеҫ халап - юмахри, ытти вара - йăлтах чăн-чăн пурнăҫран илнĕ япаласемпе пулăмсем. Арҫурие курнипе асапланни иртсе кайсанах Хĕветĕр тавралăха хресчен куҫĕпе сăнама тытăнать. Ҫутҫанталăк илемĕпе киленсе пынă майăн вăл лăпкă шухăша путать: ун куҫĕ умне чухăн хресченĕн йывăр пурнăҫĕ тухса тăрать. Ял халăхĕн терчĕ мĕнрен тухни уйрăмах пăшăрхантарать ăна. Хĕветĕр пурнăҫ тĕрĕсмарлăхĕсене лайăх курать, пĕлет: камшăн ҫăтмах, камшăн тамăк пулнине вăл тахҫанах ăнланнă.

"Ҫитмен пурнăҫ пирки-ҫке ҫын куҫĕнчен пăхатпăр". Ҫак сăмахсене Хĕветĕр хăйĕн пекех чухăн хресчен Энтри сарăмсăр вилни ҫинчен шутласа калать. Ку сăмахсем Хĕветĕр чунĕпе мĕскĕн маррине, вăл ăстăнĕпе те, кăмăлĕпе те хастар ҫын пулнине кăтартаҫҫĕ. Чăваш хресченĕсем кăмăлĕпе ырă, ĕҫчен те вашават. Вĕсем пур япалана та ĕҫпе ҫыхăнтараҫҫĕ. Илемлĕх туйăмĕ те ĕҫренех тухса тăрать вĕсен.

Тăлăх турат пуличчен хăрăк турат пулас тет Хĕветĕр аптранипе. Хĕветĕр - пурнăҫ ҫынни. Вăл хăй ҫинчен ҫеҫ мар, ыттисем пирки те шухăшлать. Унăн чунĕнче оптимизмла туртăм пур.Хĕветĕр калаҫăвĕнче те - хресчен тĕнчи, чухăн хресченĕн шухăш-туйăмĕ. Чĕлхи те сăнарлă унăн.

Федоровăн "Арҫури" поэми чăваш хресченĕн ĕҫченлĕхне, аптраманлăхне, хастарлăхне мухтать.

Тата Константин Васильевич Ивановăн "Нарспи" поэмине илер. Кунта та ял пурнăҫне сăнланă. Чухăнсене хĕсĕрлеҫҫĕ. Сетнер чухăн, амăшĕпе вăл улăмпа витнĕ пĕр пĕчĕк пÿртре пурăнать. Акă Тăхтамана илер. Вăл ҫĕрме пуян. Кермен пек ҫурчĕ, хуралтисем чăх-чĕп вĕҫсе каҫмалла мар. Выльăх-чĕрлĕхĕ нумай, шутласа кăларма ҫук. Тăхтаманăн пурте пур, пурте ҫителĕклĕ.

Произведени геройĕсем пĕрисем пуян, теприсем вара - чухăн. Мĕншĕн-ха ҫавăн пек саккун пулнă? Чухăнсем пуянсен умĕнче

чĕтресе кăна тăнă. Ял куштанĕсемпе пуянĕсем вĕсене тарçа тытнă, хирĕç тăрсан хĕненĕ, асаплантарса вĕлернĕ. Самани питĕ йывăр пулнă. Хресченĕн налук тӳлемелле пулн. Укçи çук пулсан, юлашки выльăх-чĕрлĕхне илсе тухса кайнă. Хĕрарăмсене çĕр те валеçсе паман.

Çапах та чухăн хресчен тӳснĕ, кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ, çĕрне лашапа сухаланă, тырă акнă, çулнă.

## ЭТЕМ ЭТЕМ ПУЛНИШĔН ВĂЙЛĂ

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен.
К.В.Иванов.

"Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан - ташлатăр, култăр..."

Çакăн пек йĕркесем кĕртсе хăварать Çеçпĕл Мишши хăйĕн "Тинĕсе" сăввине. Вăл çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ çинчен ахаль кăна çырса хăвармасть. Ăна шанса, вăл малашне тата та хастартарах пулать, тĕнчене кисретмелли, тĕлĕнтермелли сăвăсемпе халăха савăнтарĕ пуль тесе çырать.

Хальхи вăхăтра чăваш çĕр-шывĕнче Çеçпĕл Мишши пек, "хыт утăмлă" пулма вĕрентекен поэтсем сахал пуль тесе шутлатăп. Вăхăт майĕпен шунăçемĕн вĕсем татах та татах сахалланса пыраççĕ пек туйăнать.

Кашни çынах, ман шутпа, хăйĕн ĕмĕрĕнче пĕр е темиçе сăвă çыратех. Пĕрисем хăйсене тĕрĕслесе пăхасшăн пуль. Пулать-и вĕсенчен искусство çынни? Теприсем хăйсен шухăшĕсене хут çине сăвăласа хăварасшăн пуль тетĕп. Мĕнле асамлă вăй çак ĕçе тума хистет? Тен, чăваш чунлă пулнипе? Тен, юрату? Ман шутпа, юрату. Çак асамлă вăй тем тума та пултарать, темле йывăр ĕçе те тума хистет.

Нумай çамрăк юрату çинчен çырать. Тен, вĕсен вăхăчĕ çавнашкалтарах? Акă, "Ытлари" ятлă альманаха илер. Унта çамрăк студентсем хайланă калавсемпе сăвăсене кĕртнĕ. Ытларах вĕсем юрату, чĕре суранĕ çинчен. "Эп сана юратрăм, вăл мана пăрахрĕ, унсăрăн пурнăç çук",-тесе çыраççĕ. Владимир Смолин сăвви те çакна çирĕплетет:

Пĕрремĕш юрату - ыйхăсăр каçсем.
Пĕрремĕш юрату - йывăр сурансем
Сансăр йывăр мана, ĕнен, ăнлан,
Пĕлĕт тĕксĕм паян - шупка тĕслĕ.

Кашни çыннăнах чĕрере ырă кăмăллăх, сăпайлăх туйăмĕсем пулмалла. "Эп кам?" - тесе кăкăр çапса çӳремелле мар. Этем этем пулнишĕн кăна вăйлă. Çын çынпа тараваt тата лайăх калаçсассăн ăна пурте хисеплеççĕ, юратаççĕ.

Хальхи вăхăтра çыракан поэтсене 20-мĕш - 30-мĕш çулсенчи поэтсемпе танлаштарсан пысăк уйрăмлăхсене асăрхама пулать. Ун чухне мĕн çырмаллине "çӳлтен" каласа тăнă, вулама юраман сăвăсене вуласан тавранайман, халĕ вара - пачах урăхла. Паянхи поэтсем вара мĕн çырас килнине веçех çырма пултараççĕ. Паллах, халĕ вăхăчĕ те урăхларах. Çапах та вĕсем малтанхи пултаруллă поэтсене (Çеçпĕл Мишшине, Митта Ваçлейне) сума суманни тарăхтарать. Акă Çеçпĕл Мишши 96 çул тултарнă ятпа ирттернĕ митинга питĕ сахал çын пухăннă.

Ман шутпа, кашни поэт - гуманист. Кама та пулсан юратса, ăна халалласа поэт ытарайми хитре, тарăн шухăшлă сăвăсем çырать. Тĕслĕхрен, Çеçпĕл Мишши те юратнă. Нусьăна мĕн чухлĕ сăвă халалласа хăварнă.

Хальхи вăхăтра чăвашсене хăйсен сăввисемпе килентерекен сăвăçсем шутĕнче Валерий Туркай, Раиса Сарпи, Любовь Мартьянова, Петĕр Эйзин, Марина Карягина, Анатолий Смолин тата ыттисем те. Паллах, вĕсем çамрăк-ха, анчах та вĕсен сăввисене халăх хапăл тусах йышăнать. Вĕсем çинчен паллă çынсем ырăпа асăннă самантсем нумай. Акă, вырăссен паллă сăвăçи, куçаруçи Татьяна Кузелова Раиса Сарпи çинчен калани: "Раиса Сарпи сăввисенче çамрăк ăру пирки хытă шухăшлани, Чăваш çĕрĕн пĕчĕк кĕтесне чун-чĕререн юратни курăнса тăрать". Раиса Сарпи çинчен кăна мар, çавăн пекех Петĕр Çăлкуç, Василий Кервен сăвăçсене те хисеплесе каланă сăмахсем нумай. Çак поэтсем те

Çеçпĕл Мишши пек тĕнчене кисретмелли сăвăсем çыраса эпир чун-чĕререн шанатпăр.

Этем халиччен сухаламасăр выртнă çĕрсене сухалать, çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтессисенче фабрикăсемпе заводсем тăвать, чăтлăх вăрмансенче çĕнĕ хуласем çĕклет. “Человек разумнее всех живых существ”,- тесе калаççĕ вырăссем. Çапла, этемрен ăслăраххи тата вăйлăраххи çук. Вăл пур ĕç те тума пултарать.

## ЭП ТУСЛĂ, АСЛĂ ЧĂВАШ ЕН ÇЫННИ

Кашни çыннăн хăй пурăнакан юратнă кĕтесĕ пур. Вăл уншăн яланах илемлĕ, илĕртÿллĕ, ырă, хăватлă ен. Мĕншĕн тесен вăл - Тăван çĕр-шыв, мĕн пĕчĕкрен выляса-кулса, савăнса-хурланса ÿснĕ тăван тавралăх. Унăн кашни кĕтесĕ пирĕншĕн çывăх, хăй патне туртакан асамлă вăйпа хăватлă.

Йăмраллă ял, уй-хир, вăрман
Каяс çук нихăçан асăмран.
Пурте çывăх, пурте тăван,
Илĕртÿллĕ, илемлĕ, пуян.

Çакăн пек сăмахсем аса килеççĕ тăван тавралăх çинчен сăмахланă май. Эпĕ пурăнакан кĕтес вăл - Чăваш çĕр-шывĕ, туслă та аслă Чăваш ен, савăк та илемлĕ, пуян тĕнче! Чăнах та, хăйне май уйрăм тĕнче вăл. Çĕр чăмăрĕ çинче пĕр пĕчĕк пăнчă пек кăна пулин те чăвашăн сасси çав тери асамлă та хăватлă! Çакă уйрăмах юлашки çулсенче аванах палăрма пуçларĕ. Пирĕн, чăвашсен, çав тери нумай паллă çынсем пурри те çакна палăртса хăварать. Чи малтанах эпир хамăр халăха çутта кăларакан И.Я.Яковлев ятне асăнма пултаратпăр. Унăн сăмахĕсем те асрах: “Чăваш халăхĕн çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ, çĕр пин сăмах”. Ку сăмахсенче эпир Чăваш енĕн илемлĕхĕпе пуянлăхĕ мĕн авалтанпах палăрса тăнине куратпăр.

Нумайăшĕ пĕлеççĕ ĕнтĕ, чăваш халăхĕ ура çине тăриччен нумай хĕн-хурпа, тертпе куçа-куçăн тĕл пулса хăй чысĕшĕн, тивĕçĕшĕн, телейĕшĕн, пĕр сăмахпа каласан, ырă пурнăçшăн кĕрешнĕ, пĕтĕм тĕнчене савакан ылтăн хĕвел чăваш халăхĕшĕн те ылтăн пултăр тесе, каçхи сĕмĕн тĕттĕмлĕхне сирекен кĕмĕл уйăх çути чăваш çыннишĕн те кĕмĕл пултăр тесе, пур халăхшăн та

амаланса чĕрĕлĕх парнелекен хура çĕр чăваш халăхне те чĕрĕлĕх парнелетĕр тесе пур йывăрлăха та çĕнтерме, нумай çул хушши тăсăлнă хĕсмете ĕнсе çинчен çĕклесе ывăтма пултарнă. Çавăн пекех пурте пĕлме кирлĕ, чăваш ачи-пăчисен пуласлăхĕшĕн вăйпа çеç мар, чун-чĕрепе кĕрешнĕ, анчах та вĕсен хушшинчех сутăнса е ĕлĕкхи саманара укçапа вăрçă хирне кайманнисем те тĕл пулаççĕ. Çакăн пек çынсем мирлĕ пурнăçра та хăйсене лайăх енчен кăтартаймаççĕ, вĕсен тискерлĕхĕ те, теприсене кӳрекен сиенлĕхĕ те хăвăртах курăнать. Çавсемех ĕнтĕ пирĕн пурнăçа малалла кайма чарма пултараççĕ. Халĕ те, пурнăçĕ "йывăрланнă" май чăвашсем хушшинче нумай ĕмĕр каялла пурăннă асаттесен хăвачĕ сӳнесрен сыхлакансем сахалланаççĕ. Çапах та вĕсен хушшинчех çав хăвата ӳстерес тĕллевлĕ çынсем те пур-ха. Çавăнпа та эпир халлĕхе çыран хĕрне çитсе тăман-ха.

Пире мĕн пĕчĕкренех тăван тавралăха, çуралса ӳснĕ ене юратма, ăна хӳтĕлеме, ун сывлăшĕпе сывлама тивĕçлĕ пулма атта-анне те, шкулти вĕрентекенсем те, ватлăх çулне çитнĕ çынсем те час-часах асилтереççĕ, вĕрентеççĕ. Çак вĕрентӳ пуриншĕн те усăллă пуласса эпир те лайăхах чухлатпăр. Çавăнпа та вĕсен сăмахне тĕпе хурса хамăрăн пурнăçри тĕллеве тĕрĕс палăртас, ăна пурнăçлас тесе шутлатпăр. Шкулта вĕреннĕ май пурнăçа юратма вĕрентекен учительсем пире нумай пулăшаççĕ. Уйрăмах чĕлхепе литература урокĕнче эпир тăван енĕн пахалăхне курма, ăна тивĕçлĕ хакпа хаклама тăрăшатпăр. Çавна валли çыравçăсен анлă шухăшлă хайлавĕсем час-часах пулăшаççĕ. Çавăн пек произведенисенчен пĕрне асăнса хăварма пулать. Акă, тĕслĕхрен, А.Артемьев çырнă "Салампире" тĕрлĕ характерлă, расна пурнăç тĕллевлĕ сăнарсене куратпăр, вĕсем кашниех пурнăç çине тĕрлĕрен пăхаççĕ. Çак произведенири пĕр эпизодĕнче Ласкинпа Чушков чăваш халăхне, поэзине тиркесе калаçса ларни пур. Автор çак сăнарсемпе чăвашсем хушшинче тĕл пулакан сивлек çынсене кăтартать. Çавнашкал тата ытти çыравçăсем те çыраççĕ. Çакă пире пурнăç çине, тăван ен çине урăхла пăхма вĕрентет.

Пирĕн, çамрăк ăрăвăн, чăваш халăхĕн аваллăхĕпе çулне-йĕрне ăвланса чăваш ятне татах та çӳллĕрех çĕре çĕклеме тăрăшмалла. Хамăра чăннипех та аслă Чăваш енĕн çынни тесе шутлама тивĕçлĕ пуласчĕ.

# ЛИТЕРАТУРА

## Усă курни

*ХЛЕБНИКОВ Г.Я.* X класра вĕренмелли «Чăваш литературин» кĕнеке тăрăх ĕçлемелли материал (умсăмах, ыйтусемпе ĕçсем, литература списокĕ) // Шкул реформи тапхăрĕнче чăваш чĕлхипе литературин вĕрентесси. - Шупашкар, 1988. - С.63.

*ФЕДОРОВ Г.И.* Юрий Скворцовăн илемлĕ тĕнчи. (хăш- пĕр ыйтусем)// Юрий Скворцов. - Шупашкар, 1992. - С.4-7.

*АБРАМОВ В.А., ПЕЧНИКОВ О.И.* Сочинени мĕнле çырмалла. - Шупашкар, 1998. - С.7.

*ДЕГТЯРЕВ Г.А.* Чăваш хаçачĕн чĕлхи // Тăван чĕлхе икчĕлхелĕх тапхăрĕнче. - Шупашкар, 1991. - С.77.

*ГОРШКОВ А.Е.* Тавтологи, е пĕр ăнлавах усăсăр икĕ хут палăртни // Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. 1 кĕнеке: Хаçат-журнал чĕлхи. - Шупашкар, 1971. - С.109.

## Усă курма сĕнни

*АНДРЕЕВ В.В., АНДРЕЕВА Е.А.* Чăваш чĕлхипе литератури, сăмахлăхĕ, культурипе историйĕ: Тестсем, кăсăк ĕçсемпе ыйтусем. - Шупашкар, 1997. - 142 с.

*АРХИПОВ П.А., ВАХРАМЕЕВА З.Ф.* Сочинени çырма вĕрентесси. - Шупашкар, 1983. - 126 с.

*ГОРШКОВ А.Е.* Мĕнле каласан тĕрĕс? Словарь- справочник. - Шупашкар, 1979. - 199 с.

*ГОРШКОВ А.Е.* Чăваш чĕлхи: Лексика, фразеологи, пуплев культури. - Шупашкар, 1997. - 159 с.

*ГОРШКОВ А.Е.* Сăмах пултăр усăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ. - Шупашкар, 1981. - 127 с.

*КАНЮКОВА А.С.* Чăвашла тĕрĕс калаçар. - Шупашкар, 1994. - 148 с.

Чăвашла-вырăсла словарь. М.И.Скворцов редакциленĕ. - Мускав, 1982. - 712 с.

*ЧЕРНОВ М.Ф.* Чăвашла-вырăсла фразеологи словарĕ. Глаголпа ят сăмах фразеологизмĕсем. - Шупашкар, 1982. - 175 с.

# ТУПМАЛЛИ

АВТОРСЕНЧЕН .......... 3

ЛАЙĂХ ХАЙЛАВ ÇЫРАС ТЕСЕН МĔН ПĔЛМЕЛЛЕ .......... 4

ХАЙЛАВ ТЫТĂМĔ ÇИНЧЕН .......... 9

ПУПЛЕВ ЙĂНĂШĔСЕМПЕ КĂЛТĂКĔСЕМ .......... 12

КАШНИ ЙĔРКИ - КУЛĂШ ТĔРКИ .......... 25

*ШКУЛ АЧИСЕН ХАЙЛАВĔСЕНЧЕН* .......... 25

*АБИТУРИЕНТСЕМ ÇЫРАÇÇĔ* .......... 49

*ВЫРĂНТИ РАДИОСЕМПЕ ХАÇАТСЕНЧЕН* .......... 56

*ТĔРЛĔ ПĔЛТЕРŸСЕНЧЕН* .......... 57

*ÇЫРУСЕНЧЕН, ĂНЛАНТАРНИСЕНЧЕН, КАЛАÇУРАН* .......... 59

АБИТУРИЕНТСЕН ХАЙЛАВĔСЕМ .......... 62

ЛИТЕРАТУРА .......... 127

Учебное издание

Валерий Васильевич Андреев
Евдокия Александровна Андреева
В поисках нужного слова: Учебное пособие
Второе исправленное издание

В.В. Андреев
Е.А. Андреева

Çыр та - пĕлсе çыр: Вĕренту́ пособийĕ.
2-мĕш ту́рлентнĕ кăларăм. - Шупашкар. 1999. - 127 с.

Подписано в печать 6.06.99. Формат 60х84/16. Бумага газетная. Печать офсетная. Усл. п.л. 7,8. У.-изд. Л. 8,0.
Тираж 1000 экз.

Чувашский государственный университет
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

Отдел оперативной полиграфии ЧРУС